
СУНТАЛ
10 çул
ЧАССР
6

# ШУРНАЛТА ПУРРИ.


Стр.

1) Ђăваш Автономи 10 çул тултарђĕ (умстатйа) . . . . 1
2) **Хусанкай:** „Автономисен маршĕ“ (сăвă) . . . . . . . 3
3) Ђăвашсен Патшалăх хорĕ (ўкерђĕксем . . . . . . . 4
4) * * * Пайанхи поемă (литтературă ăмăртуне килнĕ) 5
5) **Уйăп Мишши**—Авто-кикант (ођђĕрк) . . . . . . . . 9
6) **Ç. Шăпђăк**—„Фосфорит“ (малалли) . . . . . . . . . 13
7) **Илле Иванĕ**—„Строиттĕлсене“ (сăвă) . . . . . . . . 18
8) **М. Çпиритонăв**—„Ђăваш хутошăстви 10 ç. хушшинђе“ 19
9) **Ç. Лашман**—„Ахăрсамана“ (комети иккĕмĕш пайĕ) . . 21
10) **Патман**—„Ђăваш литтераттури 10 çул хушшинђе“ . . 24
11) **Йуркки Иванĕ**—„Ђăваш тĕрри“ (статйа) . . . . . . . 27
12) **Хумма Çеменĕ:** Шупуççынни „Йеркĕн“ (криттĕк) . . 28
13) **Кик**—Хутар „Хура тар“-ĕ . . . . . . . . . . . . 29
14) **М. Çеменăв**—„Колхос çулĕпе“ пйессă нађар . . . . 30
15) **Лукка Ерхипĕ**—„Ретактăр алли хĕрлĕ кăранташ тытса курман“ . . . . . . . . . . . . . . 31
16) Писсаттĕлсемпе вулакансен çырăвĕсем . . . . . . 32
17) Консултатси пўровĕнђен
18) Литкрушоксенђен


## Ђăваш Автономлă Сотс. Совет респуплĕкĕ X çул тултарнă кун

### Ђăваш Тĕпĕçтăвком çеççийĕ ђаплă ларăвĕнђе йышăннă

# ПОСТАНОВЛЕНИ

Ђăвашсен автономи пуçланнăранпа вунă çул тулнине паллă туса Ђăвашсен Автономлă Сотсиалисăмпа Совет Респуплĕк Тĕп Ĕçтăвакан Комиттет çапла йышăнат:

1. Ђăваш Респуплĕкĕнђи йалхуçалăх инçтиттуђĕ уçма питрех кирлине асăрхаса, Халăх кăмиссарĕсен канашне çав инçтиттута уçас ĕçе 1931-мĕш çулта кĕркуннерен кайа хăвармасăр татăклă пĕтерсе хума хушас.

2. 1930—31-мĕш çулхи çуркунне кăтартуллă тĕслĕхе машшинлă-лашаллă пĕр станкси уçма кирлине асăрхаса, çав ĕç вађђи 1930—31- мĕш çулхи пўтшет тăрăх укçа уйăрса хурас.

3. Çĕрпўри Китростантсине 1930—31-мĕш çулта туса пĕтермеллине асăрхаса правиттĕлствăн татăклăн ĕçе пĕтермелле.

4. Çĕр йĕркеленĕшĕн укçа тўлесрен пур патраксен, ђухăнсен, вăйсăртаррх вăтам хресђенсен хуçăлăхĕсене тс хăтарса çак шута пўтшетрен сапламалла.

5. Колхоссенђе култтурăллă пурнăç майĕсене лайăхлатмашкăн 1930-31- мĕш çулхи пўтшет тăрăх 100 пин тенкĕ укçа уйăрса хурас.

6. Колхоссене йĕркелемелли ĕçсем вађђи 1930—31-мĕш çулта 400 пин тенкĕллĕ уйрăм фонтă тăвас.

7. Уйрăм патраксемпе ђухăнсен тата вăйсăртарах вăтамсен хуçалăхсене пулăшмашкăн 1930-13-мĕш çулта уйрăм фонтă вађђи 100 пин тенкĕ укçа хатĕрлес.

8. Пĕтĕм Сойусри хут тресĕ лапоратторипе савăтсенђе сăнаса пăхнă тăрăх „Тупиттĕл“ савăтра йулакан йуман йулашкисенђен хут тума май килнине паллă туса, РФССР Халăх кăмиссарĕсен канашĕнђен çакăн çинђен ыйтас: 1930-31-мĕш çулхи асăрхамалли ђыхвăрсенĕ йышăннă ђухне уйрăм укçа уйăрса хурас, Çĕмĕрлери тир-сăран емелсен савăтĕнђе йулакан йуман йăвăç йулашкинђен хут тумалли хапрăк лартма хатĕрленес ĕçсене сăнаса туса хумашкăн кирлĕ таран тăкаклăх пулăшу ыйтас.

9. Ђăваш респуплĕк правиттĕлствине 1930-31мĕш çулта Шупашкар хулинђк кимсем тумалли савăт-верфь туса пĕтерме хушас; çавна тумаллăх укçана пĕр кассине 1930-31-мĕш çулхи пўтшетрен уйăрса памалла:

10. Ђăваш респуплĕк правиттĕлствине çак çулсенђех хими кăмпинађĕ (тĕрлĕ имçам савăђĕ) тумалли плансем, шутсем хатĕрлесе хума хушас.

11. Ђăваш респуплĕк правиттĕлствине Çĕмĕрле кăмпинатне 1930—31-мĕш çулта туса пĕтерме, тата Куславккари çурт-йĕр хатĕрсем тăвакан савăта 1929—30-мĕш çултах туса пĕтерме хушас.

12. РФССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх кăмиссарĕсен канашĕн 1930 ç. ийунĕн 10-мĕшĕнђи постановлени тăрăх, ђăвашсенђен уђителсем хатĕрлес ĕçе вăйлатмашкăн, 1930—31 мĕш çулта Шупашкр хулинђе петакокĕк инçтиттуђĕ уçмалла.

13. Тĕп халăх хушшинђн технĕксем, сывлăх йусас ĕçе пĕлекен çынсем (катăр) вăйлăрах хатĕрлемешкĕн, 1930—31-мĕш çулта стройиттĕлствăпа метитсинă техникумĕсем уçмалла.

14. Ђухăнсеннипе колхоçнĕксен шкулта вĕренекен ађипăђине пулăшу памашкăн 2930—31-мĕш çулхи пўтшет тăрăх 200 пин тенкĕ укçа уйăрса памалла.

15. „Ђăваш респуплĕкĕ 10 çул тултарнă“ йађĕпе 1930—31-мĕш çултан пуçласа аслă шкулсене, технĕккăмсенђе вĕренекенсем валли 30 çтиппенти уйăрса памалла тăвас.

16. Ђухăн, вăтам хресђенсене пурăнмаллăх укçа памашкăн 1930—31- мĕш çулти пўтшет тăрăх 30 пин тенкĕ укçа уйăрса хурас.

17. Ђăваш халăхĕ хушшинђе саралнă ђирсемпе (траххомпа, ђахуткăпа, тата ытисемпе те) вăйлăрах кĕрешмешкĕн 1830—31-мĕш пўтшетрен 300 пин тенкĕрен кайах мар укçа уйăрса памалла.

18. РФССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх комисарĕсен канашĕн 10-мĕшĕнђи постановлени тăрăх колхоссене, тата ђухăнсемпе вăтамсене çакăн пек çăмăллăхсем памалла:

а) 1929 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнђе пухăнса тăнă тўлесе татайман ĕлĕкхи çулсенђи йалхуçалăх налокĕсен нетоимккисене, тата çав налок пирки 1930 çулхи ийунĕн 25-мĕшĕнђен хунă тĕрлĕ штравсемпе пени парăмсене каçарас.

у) Йышăннă нормăсенђен иртмесĕр 1929—30-мĕш çулта Ђăваш репуплĕкĕнђи хĕрлĕ парттисансен, Хĕрлĕ çара ирĕклĕ кайнă ретовойсемпе кăмантирсен, тата вĕсен çемйисен хресђен хуçалăхсене, вĕсен йурăхсăра тухнă çуртйĕрĕсемпе хуралђăсене йусаса йĕркелеме, çав хуçалăхсем халђен вăл тĕлĕшне вăрман илмен пулсан, ним тўлевсĕрех касман йăвăç парас.

ы) Пурте тўлемелли оклатлă страховккă тăрăх 1929 çулхи октапĕрĕн 1-мĕшĕнђен пухăннă парăмсене, тата вăл тĕлĕшпе 1930 çулхи ийунĕн 25-мĕшĕнђен хунă штравсене тўлесрен уйрăм хресђен хуçалăхсене хăтарас.

ă) Вăрман ĕçĕпе айăпа кĕнĕ пирки 1930-мĕш çулхи ийунĕн 25-мĕшĕнђен тунă штравсене тўлесрен уйрăм хресђен хусалăхсене хăтарас.

е) 1924, 1925, 1926, 1927 тата 1928-мĕш çулсенђе йалхуçалăх тĕлĕшпе кивçен илсе вăхăтра татайманнисене каçарас.

ў) 1929-мĕш çулхи октапĕрĕн 1-мĕшĕнђен çĕрйĕркелў тĕлĕшпе пухăнса пынă парăмсене каçарас.

Ђăваш респуплĕк Тепеçтăвком претçетаттĕлĕ **А. НИКИТТĔН.**

Çекреттарĕшĕн **А. ХАРИТТОНĂВ.**

*Çиђĕмĕш çул тухат̆.*

**Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!**

ХАКĔ: 3 уйăха—60 пус,
6 уйăха—1 тенкĕ те 20 пус,
1 çула — 2 тенкĕ те 40 пус.
Ретакси атрĕсĕ: г. Чебоксары,
Канашская, 15, телеф. № 47.

# СУНТАЛ

ИЙУН № 6 (72) 1930.

Ђăваш пролеттари
писсаттĕлĕсен „КАНАШ“
сойусĕн литтературă,
криттĕк, политтĕк, искусствă,
тата наукка шурналĕ.

# ЂĂВАШ АВТОНОМИ 10 çул ТУЛТАРЂĔ

Комуниссен парттипе унăн аслă çулпуçĕ ЛЕНИН йертсе пынипе 1917-мĕш çулта Раççейри ĕçлекенсемпе хресђенсем мул хуçисен влаçне сирпĕтсе тĕнђери ђи пирвайхи сотсиалисăмлă револђутси йалавне çĕклерĕç. пуршуйсен аллинђен мĕн пур ирĕке туртса илсе пролеттари тиктаттури туса хуђĕç.

Окт̆апĕр револђутси улпутсенђен çĕрсене, пуршуйсенђен хапрăк-саватсене туртса илсе, вĕсене рапођђисемпе хресђенсен аллине паđĕ.

Комуниссен партти йертсе пынипе темиçе мĕлйунлă ĕçлекенсемпе хресђенсем халиђђен тĕнђере пулман сотсиалисăмла респуплĕк тума тытăнђĕç.

Ĕмĕртеп пусмăрта тарăхса пурăннă ĕçхĕрарăмĕ арçынпа пĕр тан тивĕçлĕх илсе пур ĕçе те тума хутшăнђĕ.

Патша вăхăтĕнђе пусмăрта пурăннă темĕн ђухлĕ вак халăхсем сотсиалисăм тăвас ĕçе пурнăçа кĕртме май илђĕçĕ.

Окт̆апĕр револђутси йалавĕ—пĕтĕм тĕнђери пусмăрта хĕнхур курса курса пурнакан халăхсемшĕн пусмăра хирĕç тăмалли йалав пулса тăђĕ.

Пĕтĕм тĕнђери пусмăрлакансем, хăйсен йулашки кун-çулсем çитнине курса, советсен ђи малтанхи çамрăк респуплĕкне пăвса ўкерме тăђĕç.

Ĕçлекенсемпе хресђенсем револђутси хавалĕпе хăйсене хĕрхенмесĕр паттăрăн кĕрешсе, темĕн пек йăвăр йапăхлăха, сивве, выçлăха ђăтса, окт̆апĕрте туртса илнĕ ирĕклĕхе аларан вĕçертмерĕç. Совет респуплĕкĕнђи ĕçлекенсемпе хресђенсене револђутсиллĕ вăйхалне, ирĕкне, паттăр хĕрлĕ çар умĕнђе кив тĕнђен вăйĕсем тўсеймерĕçĕ.

Ĕçлекенсемпе хресђенсем хĕçпăшалпа тăрса ирĕке алла илсе, пĕтĕм кив тĕнђепе вилес пек çапăçса çĕнтерме анђах мар,—вĕсем патшлăха тытса тăма, хуçалăхпа кулђттур ĕçне сотсиалисăм йĕркипе тума хастарлăхпа пултаруллăх нумайăшне те кăтартрĕçĕ.

Рапођђи класпа комуниссен партти тĕрĕс политтĕк тытса пынипе, аслă çулпуçĕ ЛЕНИН каласа хăварнисене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынипе Совет Сойусĕнђе пит пысăк çитĕнўсем пулђĕç. Сотсиалисăмлă интустри калама çук хăвăрт çирĕпленсе халăх хуçалăхĕнђе тĕп вырăн йышăнса тăрат̆, унăн халăх хуçалăхне сотсиалисăм çулĕпе йертсе пырасси ўснĕçем ўссе пырат̆.

**«Епĕр интустриалисатси çулĕпе мĕн пур вăйхалпа хастарăн ĕмĕр кайа йулса пынине пăрахса сотсиалисăм патнелле пыратпăр. Епĕр тимĕр-хурçă, автомопил, трактăр тăвакан çĕршыв пулса пыратпăр»**

**(СТАЛИН).**

Рапођђи класпа ђухăнсен вăтам хресђенсемпе çыхăнса тăрасси происвотствăллă формăсем урлă тĕрекленет, вăл çыхăнура рапођђи класăн йертсе пырасси вăйлăланат̆. Çак майпа колхос йухăмĕ сарăлнăçем сарăлса пырат̆, ђухăнсем хыççăн вăтам хресђенсем те массипе колхоса кайрĕç. Çакă ĕнтĕ **«хамăр çĕршывра сотсиалисăм тăвас тĕлĕшпе историн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине»,** капиталисăмран сотсиалисăма куçас тĕлĕшпе çĕнĕ çул çине тухнине кăтартат̆.

Çак çитĕнўсем пирки епĕр кулакăн шултра происвотстви вырăнне колхоссен шултра происвотстви туса хума, тата çĕрĕсене сотсиалисăмла ĕçлессине вăйлăн малалла йама (планпа шутласа хунинђен ытлашшипех ўссе пыракан совхоссене шута илмесĕрех) тĕп никĕс хыврăмăр.

Çак пысăк çитĕнў пĕтĕм Совет Сойусĕн халăх хуçалăхĕшĕн те калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрат̆; вăл—комуниссен парттипе Совет влаçне, кулаксен експлоататси тăвассипе хĕссе ђакарса пырас политтĕке пăрахса, кулаксене класĕпех пĕтерес политтĕк çине куçма май паđĕ.

Вăрçă пирки йапăхса çитнĕ хуçалăх çав тери хăвăрт ўссе тĕрекленсе пыма пĕтĕм влаçа çĕнтерўллĕ пролеттариат хăй аллине илнĕрен анђах пулма пултарат̆. Хуçалăх çапла ăнăçлă хăпарса пырасси—ЛЕНИН вĕрентнĕ çулпа пыракан комуниссен партти çул кăтартса пынипе, ĕçлекенсемпе хресђенсем çирĕп пĕрлешсе пынипе, пĕтĕм ĕçхалăхĕн хастарлăхĕ ўснипе анђах пулса пырат̆.

Рапођђи класăн, ĕçхресђенĕн хастарлăхĕ ўснĕçем ўссе пырат̆. Сотсиалисăмлă ăмăрту сарса йарса, утарпăй майсемпе ĕçлессине ўстерсе, самокриттĕкка вăйлăлатса, таттисĕр ĕç ернине куçса рапођђи клас сотсиалисăм тăвассине хăй хастарлăхне вăйлăран вăйлă хăпартса сарса пырат̆. Рапођђи класăн, пĕтĕм ĕçхалăхĕн хастарлăхĕ ўссе пынипе 5 çуллăх плана 4 çулта пурнăçа кĕртме май пур. Епĕр кĕске срукрах техниккăпа екконоmemberкĕ тĕлĕшĕнђен малта пыракан капиталисла патшалăхсене хăваласа çитсе иртме пултаратпăр.

Çак ђаплă ĕçсене ĕлĕк кайа тăрса йулнă вак халăхсем те çулран çул нумайран нумай хутшăнса ĕçлесе пыраççĕ, вĕсем пурнăçĕнђе те, хуçалăхĕнђе те пысăк çитĕнўсем пур.

**Окт̆апĕр револђутси тивлеђĕпе ирĕке тухнă ђăваш ĕçхалăхĕ те сотсиалисăм тăвас ĕçе вирлĕн хутшăнса ĕçлет, хăйĕн автономи 10 çул тултарнă çĕре хуçалăхпа кулђттур ĕçĕнђе пысăк çитĕнўсем турĕ.**

Ђăваш ĕçхалăхĕ нумай ĕмĕртеппе вырăс патшисен ђуралăхĕнђе киревсĕр мăшкăл курса пурăннă. Лайăхрах çĕрсене ђăвашсенђен туртса илнĕ, вĕсем пурăнакан вырăнсенђе промышлĕннăç сарман, кулђттур ĕçне хупласа пырса ђăваш ĕçхалăхне тĕттĕмре тытнă. Темиçе çĕр çул хушши ђăваш ĕçхресђенне ним вырăнне хумасăр, унтан кулса, мăшкăласа пурăннă, темиçе çĕр çул ун çурăмĕсем тăрăх патша тарçисен саламаđĕсем çўренĕ.

Ђăваш ĕçхалăхĕн ĕмĕрхи ђуралăх сăнђăрне окт̆апĕр револђутси анђах татса пăрахрĕ. Окт̆апĕр рево-

ҫутси хыҫҫӑн ҫӑваш ӗҫхалӑх историнҫе ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланса кайрӗ: ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ пролеттариатла, тата ытти ӗҫхалӑхсемпе алла-аллӑн ҫирӗп тытӑнса сотсиалисӑм ӗҫне тума хастарлӑн тытӑнҫӗ.

Патшалӑх ӗҫне тума, йалхуҫалӑхпа промышлӗнӑҫа хӑпартма, куҫттур ӗҫне вайлӑлатма Совет влаҫӗ ҫӑваш ӗҫхалӑхне малтан автономлӑ облӑҫ тума пулӑшрӗ. Халӑх политтӗк йенӗпе пайтах малалла кайсан, ҫӑваш хушшинҫен ӗҫлеме пултаракан ҫынсем нумайланса— облӑҫрен респуплӗк пулса тӑҫӗ.

Ҫамрӑк автономин малтанхи ҫулсем пит йӑвӑр пулҫӗҫӗ. Патша йӗркинҫе ахаҫ те наҫарланса пыракан ҫӑваш хуҫалӑхӗ вӑрҫӑпа йапӑхрӗ, нихҫан курман выҫлӑхпа калама ҫук пӗтсе йулҫӗ.

Ҫавӑн пек пысӑк йӑвӑрлӑхсем пулҫӗҫӗ пулсан та, хӑй 10 ҫул тултарнӑ ҫӗре пирӗн ҫамрӑк респуплӗкре пур тӗлӗшрен те паллӑ ҫитӗнӳсем курӑнса тӑраҫҫӗ.

Ҫӑваш респуплӗкӗн хуҫалӑхӗ ҫултан ҫула ӳссе, унӑн сотсиалисӑмлӑ пайӗ сарӑлса тӗреклӗнсе пыраҭ. Хуҫалӑхпа куҫттур ӗҫне укҫа хывасси те кашни ҫулах ӳсет. Ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ хӑйӗн хуҫалӑхпа куҫттур ӗҫне малалла йама тунӑ 5 ҫуллӑх план вӑхӑтҫенех пурнӑҫа кӗрсе пыраҭ.

Йалхуҫалӑхӗ хӑйӗн сотсиалисӑмлӑ пайӗпе тата хресҫенсем тӗп масси шуҫӗпе ӳссе пыраҭ. Ҫӑваш респуплӗкӗнҫе те, пӗтӗм Советсен сойусӗпе пӗрлех, совхоссем, ушкӑнлӑ хуҫалӑхсем сарӑлса пыраҫҫӗ. Ҫухӑнсемпе вӑтамсем хӑйсен автономин 10 ҫул тултарнӑ уйавне 12,6 проҫ. таран колхоссене пӗрлешсе кӗтсе илеҫҫӗ.

Йалхуҫалӑхӗнҫе происвотствӑллӑ копператси, контрактатси сарӑлса ҫухӑнсемпе вӑтамсен хуҫалӑхӗсене малалла кайма пулӑшаҫҫӗ.

Ҫӗре лайӑхрах майсемпе ӗҫлесси, нумай пусӑллӑ хирсем тӑвасси, машшинсемпе ӗҫлесси, суртлӑ вӑрлӑх, тырпулла тасатса акасси т. ыт. ӳссе сарӑлса пыраҫҫӗ. Ҫӑваш ӗҫхресҫенӗ револҫутсиҫҫен нихҫан курман машшинсем—трактӑрсем ҫӑваш ҫӗршывне килсе пусрӗҫӗ. Йалхуҫалӑх туса кӑларакан таварсене ӗҫлеме тӗрлӗ претприйаттисем (крахмал, ҫу савӑҫӗсем, ҫӑх-ҫӗп усрамаллисем т. ыт. те) сарӑлнӑҫем сарӑлаҫҫӗ.

Ҫӑваш респуплӗкӗнҫе ҫӗрпе усӑ курас тӗлӗшрен пӑтранса пынисем нумай пулнӑ. Автономи 10 ҫул тултарнӑ ҫӗре пӗтӗмӗшпе илсен ҫӗрйӗркелес ӗҫ пӗтсе пыраҭ.

Ҫухӑнсене пулӑшас, вӑтамсене ҫӑмӑллӑхсем парас ӗҫ те ҫултан ҫула ӳссе пыраҭ. Патша ҫухнехи хресҫенсене пӑвса тӑнӑ куланайсене (налуксене) ҫӑмӑллатнӑ. Ҫултан ҫулах пӗтӗм ҫухӑнсен хуҫалӑхсене налукран пӗтӗмпех хӑтарса налук йӑвӑрлӑхӗсене кулаксем ҫине куҫарса вӑтамсене ҫӑмӑллӑхсем парса пыраҫҫӗ. Ҫухӑнсене ытти тӗлӗшрен пулӑшасси те ӳссе пыраҭ: ҫӗр йӗркелӳ тӳлевӗнҫен, страхховойран хӑтарни, вӗсен аҫисене шкулсенҫе вӗренме пулӑшни т. ыт. те.

Промышлӗннӑҫ револҫутсиҫҫенхи виҫене ҫитсе иртсе кайнӑ. Кив хапрӑк-савӑтсем сарӑлаҫҫӗ, ҫӗнӗ хапрӑк-савӑтсем шӑтса тухса ӗҫе кӗрсе пыраҫҫӗ. Автономин 10 ҫул уйавне «Тупиттӗл», Вӑрӑмйарти скипитар, Вӑрнарти фосфорит, Йенӗшпуҫри кирпӗҫ савӑҫӗсем ӗҫе тытӑннӑ. Ҫӗмӗрлери Кӑмпинат, Куславккакри ҫуртйӗрсен хатӗрӗсен, Иванӑвӑрипе Шупашкарти кирпӗҫ савӑҫӗсем т. ыт. те тӑвӑнаҫҫӗ. Ҫӑваш ҫӗршывӗнҫе хапрӑк-савӑтсем ӳссе пынӑ май ҫӑвашран тухнӑ рапоҫҫисен йышӗ хутшӑнса пыраҭ.

Куҫттур ӗҫӗ те вайлӑ сарӑлса пыраҭ. Хут пӗлменлӗхпе кӗрешсе хут пӗлменнисен йышне ҫакарса пыратпӑр, автономин 11 ҫулне хут пӗлменлӗхе пӗтерме май пур. Шкула ҫӳреме ҫул ҫитнӗ аҫасене 80 проҫ. йахӑн шкула ҫӳрететпӗр, кӑҫал кӗркуннерен вӗсене аҫа йулмиҫҫен шкулсенҫе вӗрентме тытӑнатпӑр. Йалсенҫи шкулсенҫе тӑван ҫӑваш ҫӗлхи ҫирӗп вырӑн йышӑнҫӗ.

Пысӑкрах вӗренмелли шкулсен йышне ӳстерсе вӗсенҫе ҫӑваш ӗҫхалӑх аҫисене йышлӑран йышлӑ вӗрентетпӗр. Ҫамрӑк колхоҫнӗксен шкулӗсем, тӗрлӗ ӑсталӑха вӗрентекен шкулсем, технӗкумсем йышлансах пыраҫҫӗ.

Аслӑ шкулсенҫе вӗренекенсен шуҫӗ ӳссе пыраҭ. Унпа пӗрле ҫӑвашсенҫен тухнӑ ӑстаҫӑсем те йышлӑланаҫҫӗ. Автономи 10 ҫул тултарнӑ ҫӗре хамӑр ҫӑваш ҫӗршывӗнҫе аслӑ шкул—петакокӗккӑ инҫтитуҫӗ уҫрӑмӑр.

Ҫӑваш ҫӗлхипе кӗнеке-хаҫат ҫапса кӑларас ӗҫ хӑвӑрт ӳссе пыраҭ. Револҫутси пулиҫҫенхи тӑн-пуҫа сӗрӗмлекен кӗнекесем вырӑнне йалсем тӑрӑх вуншар пинӗн сотсиалисӑмшӑн кӗрешме, пурнӑҫа ҫӗнӗлле тума вӗрентекен кӗнекесем, хаҫатсем, шурналсем сарӑлаҫҫӗ.

Ҫӑваш искусстви те (кино, театтӑр, йурӑ-кӗвӗсем), илемлӗ литтераттури сарӑлса пыраҭ.

Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫ те аванланса пыраҭ. Ҫӗнӗрен ҫӗнӗ пуҫнитсасем уҫӑлса ҫуллен нумайрах ӗҫлесе тӑракан пулаҫҫӗ.

Ҫӑваш хуҫалӑхне куҫттур ӗҫӗнҫи ҫитӗнӳсем ӗҫхалӑхӗн хастарлӑхӗ ӳссе пынӑ май пулнӑ. Пӗтӗм Совет Сойусӗнҫи рапоҫҫи класпа пӗрле ҫӑваш рапоҫҫисем, патраксем, ҫухӑнсемпе вӑтамсем политтӗклӗ хастарлӑхӗ ӳссе парттипе Совет влаҫӗ тавра таҫӑрах пӗрлешсе кӑпиталисӑмлӑ елементсемпе кӗрешсе пынӑ. Ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ йышлӑран йышлӑ советсем ӗҫне, копператси ӗҫне хутшӑнса пыраҭ. Рапоҫҫисем, ӗҫхресҫенсем хӑйсен хастарлӑхне сотсиалисӑмлӑ ӑмӑрту, тишкӗрӳ сарса ӗҫри ҫитменлӗхсене сирсе пур ӗҫре те ҫитӗнӳсем туса пыраҫҫӗ.

Ҫӑваш хуҫалӑхпе куҫттурӗнҫи ҫитӗнӳсем комуниссен парттипе Совет влаҫӗн кӑтартӑвӗсене, комуниссен парттипе Совет влаҫӗн натси политтӗкне тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пынипе, вӑл ҫулран сулӑнакансемпе кӗрешсе вӗсене ҫӗнтерсе пынипе пулма пултарнӑ.

Автономи 10 ҫул уйавне хамӑр ҫитӗнӳсене хавассӑн палӑртса, ӗҫри хӗнлӗхсене те шута илсех тӑмалла.

Пирӗн умра ӗҫсем нумай, пысӑк сатаҫсем тӑраҫҫӗ. Тӗнҫен ултӑ пайӗнҫен пӗринҫе истори кӗске срукӗнҫех сотсиалисӑм тӑвас ӗҫ ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ ҫине те пысӑк ӗҫсем хураҭ. пирӗн умра йӑвӑрлӑхсем те пысӑк. Сотсиалисӑм тӑвасси сарӑлса пынӑ май клас кӗрешӗвӗ ҫивӗҫленсе пыраҭ. Клас тӑшманӗсем, йут патшалӑхрисем те, хамӑр ҫӗршыврисем те пирӗн ӗҫе ҫӗмӗрессшӗн, сотсиалисӑм ҫӗршывне салатасшӑн, рапоҫҫисемпе ӗҫхресҫенсене ӗлӗкхи нушана ҫавӑрасшӑн.

Пирӗн хуҫалӑх ӳссе пыраҭ пулсан та, йалхуҫалӑхӗн ӳсӗмӗ йулса пыраҭ, ӗҫхалӑхӗ хушшинҫи куҫттурлӑх кайра тӑраҭ, тӗрлӗ ҫир-ҫӗрсем ӗҫхалӑхӗн сывлӑхне шӗветсе тӑраҫҫӗ. Пирӗн ӳссе пыракан хуҫалӑхпа куҫттур ӗҫӗнҫе лайӑх вӗреннӗ ҫынсем ҫителӗклӗ мар. Патшалӑх аппараҫӗ ӗҫӗнҫе те хӑшпӗр вӑхӑтра ӗҫхалӑхӗнҫен таталса пӳрократла ӗҫлени т. ыт. ҫитменлӗхсем те тӗл пулаҫҫӗ.

Ҫӑваш автономи 10 ҫул тултарнӑ ҫух пирӗн иртнӗ ӗҫсене, халҫхи вӑхӑтра йепле ӗҫленине пӑхса тухса малалла пӗтӗм Совет сойусӗнҫи рапоҫҫи класпа, ҫулхула крайпе пӗрле малалла утмалли ҫулсене сӑнаса хумалла.

Пирӗн хуҫалӑхпа куљттур ӗҫӗсен хӑвӑртлӑхне тата вӑйлӑлатса, йалхуҫалӑхӗ кайа йулнине пӗтермелле.

Йалхуҫалӑхне малалла йарас ӗҫе, ђухӑнсене ђӑнђӑнах пулӑшассине ђухӑнсемпе вӑтамсемшӗн лайӑх пурӑнӑҫ тӑвассине колхоссем урлӑ анђах тума пулӗ. Ленин «вак хуҫалӑхпа нушалӑхран тухас ҫук» тет. Йала коллективисатси ҫулӗпе йарсан анђах хуҫалӑхпа куљттур йенђен кайра тӑнине пӗтерме, йалхуҫалӑхӗнђе ӗҫ тухӑҫлӑхне ӱстерме ӗҫхалӑх пурнӑҫне лайӑхлатма, ҫӗршыври капиталисӑмлӑ елементсене тӗпӗ йӗрӗпех ҫӗмӗрме пулаҭ.

Ђӑваш автономи пысӑк уйавӗ вӑхӑтӗнђе йалхуҫалӑхне ушкӑнлатса хӑпартма, патраксене, ђухӑнсемпе вӑтамсене ҫитменлӗхрен кӑларас ҫул ҫинђе тата пысӑк ҫитӗнӱсем тума пирӗн комуниссен парттипе Совет влаҫӗ тавра тата тађӑрах пӗрлешмелле.

Пирӗн промышлӗннӑҫа тата хӑвӑрт утӑмпа малалла йамалла. Промышлӗннӑҫа сарма тунӑ плансене ытлашшипех пурнӑҫа кӗртсе пымалла. Ђӑваш автономи уйавӗ пирӗн ӗҫ тухӑҫлӑхне, ӗҫ тистсиплинине хӑпартма, хапрӑк-савӑтсенђе йурӑхсӑр ӗҫлессине пӗтерме пулӑшмалла. Ҫамрӑк респуплӗкӗн ҫамрӑк промышлӗннӑҫӗ тата хӑвӑрт малалла утмалла.

Патша вӑхӑтӗнђенех йулнӑ куљттур ӗҫӗнђи киревсӗрлӗхсене: хут пӗлменнине, шкул ӗҫӗ ҫителӗклӗ сарӑлманнине, ђир-ђӗрсем сарӑлнине пӗтӗмпех пӗтермелле. Сотсиалисӑмлӑ ҫӗршывра хут пӗлменлӗх, ђирђӗрсем пулмалла мар.

Пирӗн пур ӗҫе те йертсе пырассине лайӑхлатмалла, пирӗн хуҫалӑх, куљттур ӗҫне лайӑх тума пӗлекен вӗреннӗ ҫынсем хатӗрлемелле, пирӗн ђӑваш ӗҫҫыннисене, ӗҫхӗрарӑмсене тата йышлӑрах патшалӑха тытса тӑрас, хуҫалӑхпа куљттур ӗҫне йертсе пырас ҫӗре хутшӑнтармалла.

Умра тӑракан калама ҫук пысӑк сатађсене пурнӑҫа кӗртмешкӗн мӗн пур вӑй хӑвата, мӗн пур хастарлӑха пухса ӗҫлемелле, сотсиалисӑмлӑ ӗҫ формисем сарса йамалла, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӱстермелле. Сотсиалисӑмлӑ ӑмӑрту, утарнӑй ӗҫ йӗркисем пур ӗҫре те сарӑлса пымалла. Сотсиалисӑм ӗҫне кансӗрлекенсене сирме, ӗҫри ҫитменлӗхсене вӑхӑтра палӑртма, клас ҫулйӗрне ҫирӗп тытса пыма ӗҫхалӑхӗн револђутсиллӗ тишкерӱ ӗҫне талкӑшпех сарса йамалла.

Пирӗн ҫитӗнӱсем комуниссен партти тӗрӗс ҫулпа йертсе пынӑран, ӗҫхалӑхӗ пӗтӗм вӑй-халне, хастарлӑхне пӑхса ӗҫленӗрен, Совет сойусӗн рапођђи класӗ пулӑшса пынӑран пулнӑ.

Ђӑваш автономи 10 ҫул тултарнӑ майпа РФССР Тӗпӗҫтӑвкомӗ епӗр ӗҫлесе пынӑ ҫула пӑхса тухса, пире тата пулӑшмалли ҫулсем сӑнаса хуђӗ. Ҫапла, рапођђи класс малашне тетата вӑйлӑ пулӑшса пырасси куҫ умӗнђех. Вӑл пулӑшупа усӑ курса хамӑр вӑйа курса ӗҫе тата вӑйлатмалла.

Ђӑваш респуплӗкӗ 10 ҫуллӑх йупилейӗ парттин ђӑваш орканисатсипе Ђулхула крайӗн орканисатси конферентсисем хыҫҫӑн пулаҭ. Йупилейсем вӑхӑтӗнђе 16-мӗш сйесӗ уҫӑлаҭ. Иртсе кайнӑ конферентсисем пирӗн ума пысӑк сатађсем кӑларса тӑратрӗҫӗ. Парттин 16-мӗш сйесӗ малалла утмалли тӗп ҫулсене кӑтартса хӑвараҭ.

Пӗтӗм ӗҫхалӑхӗн партти тавра тађӑ пӗрлешсе ун кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пымалла, партти ҫулйӗрне пӑсписемпе кӗрешмелле.

Партти кӑтартнӑ тӑрӑх хастарлӑ ӗҫлесе пырсан Совет сойусӗнђи рапођђи клас пулӑшнине хамӑр кайа йулнине пӗтерсе маларах пыракан халӑхсене хӑваласа ҫитӗпӗр. Партти ҫулйӗрне тӗрӗс тытса пыни Совет сойусӗнђе сотсиалисӑм тӑвас ӗҫе пурнӑҫа кӗртме параҭ, тӗнђери револђутси куне ҫывхартаҭ.

**Хӗсӗкре, нушара пурӑнакан ӗҫхалӑхне, вак халӑхсене ирӗк панӑ Октапӗр сывӑ пултӑр!**

**Пӗтӗм ӗҫхалӑхне ҫитӗнӱсем патне йертсе пыракан ПСК(п)П сывӑ пултӑр!**

**Пӗтӗм тӗнђери хӗсӗкре пурӑнакансен тӑван ҫӗршывӗ, тӗнђери револђутсин вуђахӗ—Совет сойусӗ сывӑ пултӑр!**

**Ђӑваш респуплӗк 10 ҫулӗ сывӑ пултӑр!**

---

# Автономисен маршӗ

Ђӑваш-и  
Вырӑс-и,  
Тутар-и —  
Мӗнпурӗ пӗр ҫӑлтӑр айне!  
Пӗтӗм Сойусӑмӑр  
Утарнӗк,  
Утаҭ ҫӗнтерӱсем патне.

Пӗрре.  
Иккӗ.  
Виҫҫӗ.  
Тӑваттӑ...  
Марш,  
Прикатӑ хыҫҫӑн  
Прикатӑ!

Аҭа, респуплӗкӗм,  
Йара пар;  
Хуҫи те ху,  
Хӑни те ху.  
Ану ҫинђе кӗҫентӗр трактӑр,  
Тӗп пултӑр выҫӑ виҫ пуссу.

Вӑрӑм курӑк  
Патӑр улӑх,  
Тырӑ-пулӑ  
Пултӑр тулӑх.

Ӱсех, ман ирӗклӗ ҫӗршывӑм,  
Тӗреклӗ пул ес йаланах.  
Ӗҫле,  
Тӑрӑш,  
Кӗреш,  
Ан ывӑн,  
Ан ус йун витнӗ йалавна.

Пулђӗ тӑвӑллӑ Октапӗр.  
Пулӗ,  
Тӑвӑпӑр тата пӗр.

Пӗтӗм ђӑмӑр ҫӗре  
Пӗр харӑс  
Ӗҫлекенсен прикатине!  
Унђђен—  
Хӑйуллӑн тытса кар ес  
Тепрӗр вунҫуллӑх карттине.

Аҭӑр пурте  
Алла-аллӑн.  
Шухӑш ҫирӗп,  
Емӗт паллӑ.

Ђӑваш-и,  
Вырӑс-и,  
Тутар-и—  
Мӗнпурӗ пӗр ҫӑлтӑр айне!  
Пӗтӗм Сойусӑмӑр  
Утарнӗк,  
Утаҭ Сотсиалисӑм патне.

Пӗрре,  
Иккӗ,  
Виҫҫӗ,  
Тӑваттӑ...  
Марш,  
Прикатӑ хыҫҫӑн  
Прикатӑ!

ХУСАНКАИ.

# ЂӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ХОРӖ.





Ђӑвашсен патшалӑх хорӗ статионра вӑйӑ кӗввисем калаҫ.

# ПАЙАНХИ ПОЕМĂ.

*Литтераттурăăмăр-туне килнĕ происве-тени.*

## ЂĂВАШ АВТОНОМИЙĔН 10 ÇУЛ ХУШШИНЂИ ӲСĔМĔСЕМПЕ ТӲСĔМĔСЕНЕ ПĔТĔÇТЕРСЕ ÇЫРНĂ КĔСКЕ РЕÇУМЕ.

### УМСĂМАХ

Праçник те мар,
Уйав та мар—
Çăва тĕпне шăпђăк йе росă!—
Çук,
Урăх сасă йăп та йап:
Çĕр:пывăмри çĕнĕ тымар,
Куллен кунхи тĕреклĕ просă
Туртаĭ ман ђунăма пайан.

Ак епĕр—
Ђикĕсĕр-виçесĕр
Тăманпала тусан айне
Пулса выртан патшалăхра—
Ак епĕр халђ йепле виçетпĕр
Тĕнђенĕн улттăмĕш пайне,
Йепле виçетпĕр хамăра!

Ĕнер
Çак ђăпђăмăр çĕре
Пĕтĕм Йеврол мăшкăлĕшĕн
Китсем çине лартакансем—
Пĕртен пĕр ушкăн тĕнђере
Хăй ирĕклĕ ĕçне
Мĕншĕн
Ĕçленине пĕлен етем.

Калаĭђĕр:
Поеçи хунарĕ
Сӳнсе мăшкăлланђĕ,—
Тетђĕр;
Пуçлантăр „аха“ та „епней“.
Куратри—
Çĕршыв пролеттари,
Перасăр,
Вĕçкĕн рифмăсемсĕр,
Тăваĭ ĕмĕрлĕх еппоппей.

Калаĭђĕр:
Ђеђеклĕ çараншăн
Пенçин килĕшӳсĕр,—
Тетђĕр;
Хуплаĭђĕр сăмси шăтăкне.
Çапах
Çĕнтерӳлĕ ыраншăн
Пайан епĕр
Ним хĕрхенмесĕр
Таптатпăр çаран ђеђекне.

*

Турккестан çеçенхирĕн кăлканĕ
Тӳнсе йулђĕ шпалсем айне,
Çĕпĕр йăвăçĕ—
Пулђĕ шпал.
Кăркăса вăрман пурлăхĕ анĕ,
Ђалтун çийĕ кăркăс какайне.
Çакнашкал ун пайти,
Çакнашкал.

Ак ђасах
Хăйăрлă хирсенђе
Йешеркке хуласем ӳссе ларĕç,
Ӳссе ларĕç ђеђек пахђисем;
Хай пенçин шăрши пулĕ инçе.
Унта,
Ђыс хăни çеç пулса мар ес,
—Кирпĕçне те кĕрсе çĕклесем!

1.

Вăтам Сойус картти çинђе
Пĕр пысăкрах пуçпӳрнепе
Пуссассăн ман респуплĕке—
Респуплĕкĕм пытанĕђђĕ.

Пытанĕђђĕ респуплĕкĕм,
Ђикки те курăнмĕ ђăвашăн.
Çапах
Ман пайанхи кĕввĕм
Тăван ĕçхалăхшăн йантрасшăн.

Сăвăç та,
Йурăçă та мар,—
Кĕслем-сăрнайăм хыçа йулђĕ.
Çук,
Урăх йатшăн тăрăшар:
Сотсиалисăм пăртуккулçĕ.

— Автономи?
Ђăнахи?
Ну-у?!
Анђах—
Мĕне вăл ђăваша?
Историйĕ ђаранна ун,
Вăл халђ вĕт
Пиђеври лаша.

Хăçан пиђев лаши тĕпе
Йурттарни пур хăй çулĕпе?

Паллах—
Пĕђĕк ађа вăййи,
Ак вылĕç-вылĕç те
Лăпланĕç...
Раççей!
Миçе патша вăйĕ!
Ес шӳт тетни, Ваççили Ванăђ?

— Ăм... та...
Вопђе, ђăвашсене
Шансах пĕтерейместĕп епĕ.
Селиванпа Йехрем çине
Тĕренђĕ пурăнăç хисепĕ.

— Конешнă,
Мул та ырă тон,
Çине-пуçна кăшт тирпейле.
Вара
Йеврол тăрăх—
Партон—
Кустар йеврей ђĕрипеле!..

— Вопђе,
Ку револђутсирен
Ђăваш кураймĕ пархатар.
Çитменнине—
Çак çук çĕртен
Атминистратси тăрантар...—

. . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . .

Çапла сăмахлама пултарнă
Пĕрикĕ руссоман ессер.
Çапах та
Оплăç ђăмăртаннă,
Вăл кирлĕ пулнă.
Çитнĕ çĕр.

2.

Фетератси тавра—
Плокката;
Шалта—
Выçлăх,
Пыйтă,
Ђир...
Анђах нихăш фронтран та,
Нихçан та
Çĕнтермесĕр тухман епир.

Фетератси тавра йун кӳленнĕ;
Шалта—
„Йут ăрусен“ çыннисем
Çăлăнăç йалавне çĕкленĕ:
— Танлăх!
— Ирĕклĕх!—
Тенĕ вĕсем.

Пур хĕнхурлă,
Пур пусмăрлă халăх—
Хăй асапĕсене ылханса—
Пĕр çăлтăр айĕнђе,
Пĕр кăварлă,
Пĕр çын пек
Панă çак саса.

*

Çамрăк Оплăç.
Нумай йĕре-кулă.
Халиђђен влаç тытман алура.
Автономи хыпарĕ
Хир урлă,
Йал-йал урлă
Вĕçет çĕршывра.

— Ђăвашсен патша пур, темеççи?
— Пур, тет; пур, тет.
— Ăçташи?—
Пĕлесђĕ...
— Ђăвашах пулĕ те,
Темле çын?
— Тимухха ерххерей текелеççĕ...

. . . . . . . . . . . . . .

Хӗсӗк куҫлӑ ҫейе стариксем
Ҫӗлӗме пак та пак тутараҫҫӗ;
Хыпар хыҫҫӑн хыпар тирсе
Халлапсем,
Йумахсем йуптараҫҫӗ.

Анҫах—
Ним ерххерейсӗр,
Патшасӑр
Ӗмӗрне асра ҫук „Ҫӑваш Влаҫӗ“
Йалсене сисӗнсен—
Вӑтанмасӑр
Сенӗксем,
Тӑпаҫсем йӑтаҫҫӗ.

Ҫӗрӗ йулнӑ патша йыттисем,
Ессерсен йевҫисем
Йӗкӗлтеҫҫӗ:
— Ҫӑваш халӑхӗн ҫук сийсем,
Пӗтӗмпех хура хӑлӑх вӑл...—
Теҫҫӗ.

—... Ҫӑваш халӑхӗн
Ҫук пролеттари,
Вӑл хуҫа пулаймасӗ хӑй ҫӗрне.
Автономи ӑна мӗн парӗ?..—
Хӗтӗртеҫҫӗ Ҫаппан вӑрҫине.
. . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . .

Ҫамрӑк Оплӑҫ.
Нумай йӗре-кулӑ.
Влаҫ тытма вӗренмен алура.
Анҫах клас шӑнӑрӗ
Ҫирӗп, хулӑн,—
Ӳсет Оплӑҫ хӑйне кура.

3.

Сотсиалисӑмлӑ
Совет
Респуплӗкӗсен
Мӑн Сойусӗ.—
Тӗрекленет ҫӗршыв,
Ӳсет;
Татах та тӗрекленӗ,
Ӳсӗ.

Оплӑҫӑм—
Респуплӗк,
Аслӑ Ҫӑвашлӑх
(Тупаҫ сӑмахне те мур!).
— Ҫӗмпӗр йе Улатӑр?
— Улатӑр, тавлашмӑп,
Унта тапак хапрӑкӗ пур...—

Пуҫланҫӗ вара
Тӗрлӗ мыскара:
— Ҫи ҫи кӑсӑйа,
Ӑҫта кайан кӑсӑйа?..
Йе ҫаппу хуҫӑлсан?
— Улатӑра кайап,
Сыптарап саман...

Анҫах лере
Сар сухаллӑ мӑкшӑ
Хайӗннех перет:
— Ак, мӑшкӑл, мӑшкӑл!

— Тӗттӗм ҫуттӗнҫе,
Суртӑр, суртӑр ман пите.
Ҫӑваш куҫӗнҫен
Пӑхса пурӑнӑпи?—
тет.

Пӗлмерӗҫ пулас мӑкшӑсем,
Ӑнланмарӗҫ ак ҫакна:
Хӑй ҫура пулса курнӑ етем
Нихӑҫан ҫура тумӗ ҫынна.

*

Ҫикке саран ҫӑваш ҫынни
Патшалӑхри патшалӑх мар,
Вӑл—
Аслӑ штатсенҫи пӗр штат.
Улатӑр хулинҫе акни
(Мӗскер ҫак унщӑн пӑшӑхма?)
Шупашкартах аван шӑтаҫ.

Респуплӗк,
Оплӑҫ,
Кӗпӗрне—
Йатраим халӑх курӑнҫӗ?
Ҫук,
Епӗр урӑхпа хастар—
Епир калатпӑр пӗрпӗрне:
Сотсиалисӑм хорӗнҫе
Пӑрахӑҫ сасӑ пулас мар!

4.

Пуҫланаҫ пултаруллӑх
Ӗмӗр-ӗмӗр пулмана.
Уйхир,
Йешӗл улӑх
Хурҫӑ-тимӗр тумлаваҫ.

Ним те мар—
Трактӑра
„Трахтир“ тени.
Хӑнӑхӑпӑрха ара,
Хӑнӑхмӑпӑр тетни?!

Намӑс мар—
Кулхуса
„Куихвус“ тесен.
— Вҫотки Йевропа хуса
Иртсе кайӑпӑрха тен...

— Ӗҫхӗл нумай,
Вӗренме те вӑхӑг ҫук.
Ҫапах, кукамай,
Вӗрентемха пушӑ ҫух:

Ак ку,
Ҫурла пекки
**С**
Пулаҫ, ан ман.
Шушкӑ пек ҫавраки
**О**
Пулаҫ, ӑнлан.

Йӗкӗр увкӑ пӗр патак
**В**
Пулаҫ, кукамай.
Ак ку виҫ йупли тата
**Е**
Пулаҫ капла май.

Кӗрепле пекки ак ку
**Т**
Пулаҫ, ан ман асту!

— Вуласа вӑтартха, тет.
Кукамай вулаҫ:
С-о...—...в-е-т.

*

Шӑранаҫ пултаруллӑх,
Сӑрхӑнаҫ тар-шур.
Шупашкар—
Тӑмлӑ-пурлӑ,
Хӗпхӗрлӗ,
Шапшур.

Хӑпараҫҫӗ ҫул ҫуртсем
Виҫтӑватӑ хут та.
Ӳс, респуплӗкӗм,
Ӳссем,
Ес ӳссен еп тутӑ.

Ҫӑмӑртанҫӗ кӑмпинат—
Пролеттари ӳсӗ,
Ҫукунҫулӗ хыванаҫ—
Тавар хакӗ ӳкӗ.

— Ӑйӑр ҫуна!—
Тет ват карҫӑкки.
Лампи ҫунаҫ,
Илйиҫ лампӑҫки.

Пӑрки пӑранаҫ
Тӑрӑ шыв парасшӑн.
Хытӑрах пӑр ӑна,
Ан пӑтрат ӑсассӑн!

5.

„Историсӗр“ халӑх
Истори тӑваҫ,
Хайӗн кунҫулне тирпейлет.
Пытанҫӑк аваллӑх,
Тӗтреллӗ малаллӑх—
Тухаҫ,
Хӑпараҫ ҫийеле.

Апаш тӑприсем
Сирӗлсе ҫӗкленеҫҫӗ.
Ӗнер
Хура пӳрт тӗтӗмне ҫӑтакан
Пайан—
Ҫивҫӗ куҫлӑ,
Тӑнлӑ кӗнекеҫӗ;
Ҫыруҫӑ;
Ҫӗлхеҫӗ;
Сӑнавҫӑ...—
такам.

Ашмарӗнӗ,
Смолӗнӗ,
Марӗ
Туртӑпаҫҫӗ респуплӗкӗме.
— Йахват, тет пӗри,
— Пӑлхари.
— Шумер,—
Тет тепри темме.

Тавлашмăпăр,
Тен—ҫăвашах тăр,
Апла та епир наҫар мар.
Йалан киввине ан пуҫ‹апăр:
Ҫĕннине пултаратăр ҫарма.

Ҫĕнни—
Пайанхи,
Лăш курмасăр,
Ҫывăрмасăр ĕҫлен ĕҫҫынни.
Тинехпи,
Йе ытти—
Хăҭ томсем урлă каҫăр—
Анҫах
Пултăр истори ҫĕннин!

6.

Иртнĕ кунăн ҫаршавĕ
Уҫăлса хупăнҫĕ:
Ĕмĕртен ĕмĕрхи хура ҫĕр хурҫĕ
Пур етемлĕх,
Тĕнҫе умĕнҫе
Хăй сăнне хĕрелмесĕр курҫĕ.

Екран ҫинҫе
Сарпике утаҭ.
Пĕвĕ ҫинҫе,
Ҫӳпҫӳхе тута.

Таҫта,
Ҫикĕ урлă йут патшалăхра
Епĕр пурĕ хаљ шав сисĕнет.
Пире,
Епĕр тăкнă тара-шура,
Пире—
Каскăн Атăл пăлхавҫисене—
Шурă пир ҫинҫе курса,
Акăлҫапĕ,
Французĕ,
Нимĕҫĕ
Кĕрешӳ кунĕнҫе асилĕҫĕ
Патриот кăмăлне ҫакарса.

*

„Шупашкар туйи—
Шурă туйа..."
Итле те «Аппайккă» кур.
Ӳсет ман ҫĕршывăм,
Пуйаҭ—
Йурри те,
Карттинĕ те пур.

Ҫапҫамрăк хĕрсем—
Арттис та йурăҫă.
Выљаҫҫĕ хĕрсе,
Йурлаҫҫĕ...—
Турăҫăм!—

„Кай, кай Ивана,
Ма каймастăн Ивана?
Унтан лайăх каҫҫă урăх
Есĕ тупаймастăн..."

Ҫыр, ҫыр, Ваҫанкка,
Ма ҫырмастăн сăввăна?
Кив кĕвĕрен ҫĕнĕ йурă
Ҫапах тăвайман тăн.

Аҭа,
Пуҫлар!—
«Айтар»
«Кушар».

Мăнтарăн «Траххом йурри» —
Тухтăр Оҫҫĕппăв йĕрри.

*

Кулатăп кăна,
Йатлаҫмăп.
Ҫапах:
„Хĕрĕме калатăп,—
Кинĕм, итле!"
Искусствă ҫинҫен
Пĕрре мар калаҫнă—
Ним пытармасăр,
Пат тӳрĕ,
Пољшевикле.

Пурте ҫылăхлă епĕр,
Пурте,
Анҫах кам ӳкĕнсе
Ҫăн-ҫăнах
Хăйне парттин хура ĕҫне кӳртĕ—
Ҫавна манмĕ,
Каҫарĕ самана.

7.

Ҫĕршывăмăн поеҫи пур—
Ҫĕрри те,
Хут ҫинҫи те.
Пурне те хускатаймăпăр,
Пире пĕри те ҫитĕ.

Ăслă ҫынсен каларĕшпе,
Ҫĕмпĕр иккен ун амăш.
Ҫанталăк пулнă, тет, йĕпе;
Хаљ уйартса,
Паллах уш.

Ӳсет респупкĕлĕм куллен,
Поеҫи те ӳсет
Ҫĕр пурнăҫ йухăмне хуллен
Хут хӳмепе хӳсе.

„Ҫиллапĕк",
„Тонĕк"
Теттĕмĕр
(Хӳппи вĕт ухмаха).
Тавлашрăмăр,
Ҫĕнтертĕмĕр,
Хаљ иккĕш те паха.

Нарспийĕ йе,
Сетнерĕ те—
Пит ҫывăх тантăшсем.
Хуппийĕ сисĕнмерĕ те
Тулли ҫăмăр тĕшсен,

Ҫапăх та—
Аслă ҫилтăвăл
Ҫиллапĕкпе килмен.
Ҫампа ĕнтĕ ҫырлахрĕ вăл,
Ӳсеймĕ ӳлĕмрен.

Томсем ҫуралайман таха,
Хунаҭ мур кĕнеке.
Ăнлантăр та
Ан антăхăр:
Малашлĕх—
Тонĕке!

8.

Ҫанталăк—
Ҫун хăрамалла;
Кĕрхи пĕр нӳрлĕ, салху каҫ.
Пĕлĕт пеҫҫимислах тĕксĕм.

Кун пек ҫухне
Урамалла
Вăрăсем ҫеҫ сĕнксе тухаҫ,
Тата—
Хваттирсĕр поетсем.

Утатăп Атăл хĕррипе.
Курман та—
Мана хирĕҫех
Пĕр вăрăмскер,
Типери пек,
Анаҭ хăйаккăн вирхĕнсе.

Пăлтăртатаҭ арки-ҫанни...
Палларăм.
Тĕлĕнтĕм.
Ҫĕнеп:
Авани, Шупуҫҫынни?
Раххат йаш тонĕкҫĕсене!..
Шупуҫҫынни хĕрхӳн кулаҭ:
— Миххал Петровĕҫ ырламасҭ...
Ку —
Вырăс куљттурне пула,
Ҫăвашăн
Ҫиҫĕ сыпăк маҫ.
Ан курăнĕ хăшĕ ҫăнни...

Йĕрĕннĕн пĕрĕнет тута.

. . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . .

Йĕри-тавра
Шупуҫҫыннин
Пылак итиллийĕ путаҭ.

Хула ҫинҫен вĕри ҫĕлен
Иртмерĕ ҫашкăрса ҫав каҫ.
Електăр куҫĕсемпелен
Ҫуртсем йăлтăртатса лараҫ.

Сивщу ҫынни йапшар Урха
Анмарĕ Атăл хĕррине,
Тыттараймарĕ сар курка
Хăйĕн ҫепҫен такмак ҫине

Ҫипер Пике,
Хитре Ҫĕкеҫ
Тĕшмĕшленмеҫҫĕ йалсенҫе.
Вĕсем траххом ҫирне хĕртеҫ,
Вĕсем рапфак сакки ҫинҫе.

Тухатмăшсем,
Сĕтлĕ кӳлсем
Хăтараймарĕҫ ҫăваша. —
Фортсон лашисене кӳлсе
Ҫанталăкпа вăл тавлашаҭ.

9

Саланаҫ ҫӗрӗк йала:
Трактӑр кассипе пӗрле
Ҫӗнӗ сӑн кӗрет йала,
Ҫӗнӗ вӑйӑ кӗр кӗрлет.

Ҫиркӳ мар,
Хаҫ клуп.
Кӗлтума
Ҫук пуп.

Хӗрлӗ мӑйлӑ пионер —
Мӗнпур аҫана пример.

Ҫӑмӑл утлӑҫарӗ
Комсомолӗс мари?

Пӳрократ,
Хӑйамат —
Ҫас кӑтарт,
Саламат!
Сов йе комухмахсене
Ҫасрах тӑрӑ шыв ҫине!

„Апла тусан та йураҫ,
Капла тусан та йураҫ..."
Ҫакӑн пек „ӑслӑ" йурра
Ҫитлӗхлесен те йураҫ.

Иртерехха,
Иртерех—
Кӑмака ҫине ухса,
Кӑвапа ҫине пӑхса
Савӑнса ларма пире.

Ӗҫсем нумай,
Прикатӑ хыҫҫӑн прикатӑ,
Вӑл май,
Ку май,
Анҫах —
Пӗр шӑнӑр хаҫ ӑҫта та.

*

Нумай ан йупилейлӗр!
Ан мухтӑр хӑвӑра.—
«Хӗрлӗ Ҫӑваш» проппеллӗрӗ
Кӗрлетӗр хытӑрах.

Виҫеллӗ кӑшкӑрар,
Тӗллевлӗрех сӑмах.—
Канаш—Шупашкара
Хывасҫӗ хӑвӑртрах.

Сайралтӑр ҫирккуҫар,
Ҫӳхелҫҫӗр отҫотсем!—
Ҫав аслӑ пӗр шкула
Уҫасҫӗ хал ҫитсен.

*

Ман ҫӗршывӑн ӳсӗмӗ —
Пур патшалӑх ӳсӗмӗ,
Пур патшалӑх тӳсӗмӗ —
Ман ҫӗршывӑн тӳсӗмӗ:
Мускавра мӗн акӑнӗ—
Шупашкарта ӳсӗнӗ.

Уйрӑлми йӗкӗреш пек
Пурӑнатпӑр епӗр.
Пӗрлешсе кӗрешнӗ,
Пӗрлешсе ӗҫлетпӗр.

Пурте пӗр аҫан епӗр,
Пурте пӗр аман.
Тӑвӑллӑ Октапӗр
Пурне те тӑван.

Пурсӑмӑр та меллӗн
Тытрӑмӑр пӗр ӗҫ.
Пуҫӑмӑрта—
Ленӗн,
Ҫӗрере—
Илйиҫ.

Пурте пӗр етем пек
Епӗр тупа тунӑ:
Йурттӑр пурнӑҫ темпӗ!
Ҫарӑну—
**Комунӑ.**

## ЙУЛАШКИ СӐМАХ

критткӗмсене

Пӗлетӗп:
Кӗҫтет тӗр аллӑр,
Ҫапла ӗнтӗ вӑл кун пек ҫух.
„Кенйаҫнӑ"
Тесех ан калӑр,
„Пыраҫ"
Тенӗшӗн —
Ӳпкев ҫук.

„Йӑнӑш"
Йе „тӗрӗс" сӑмах
Килӗшӳсӗр поеҫире.
Мӗн таран поетне
Тахҫанах
Кӑтартсаттӑм еп хам сире.

Иртнине витеймӗн
Хӗрлӗ ҫиттипе—
Похемӑ та,
Хупах та—
Пурте пулҫӗ.
Анҫах пайан,
Мӗн халӑм ҫитнипе,
Еп сотсиалисӑм пӑртуккулҫӗ.



*Клиҫҫӗрсен ҪАССР уйавӗ тӗлне уҫӑлнӑ Шупашкарти стантсийӗ.*




Кам пĕлмест? Пайан Ђулхуларан инçе мар, Монастырккăра, кăнтăрла иртсен 1 сехетре, Автокикант никĕсне хураççĕ. Хаçатсем тахçанах ун çинђен çырса пĕлтернĕ, ђĕнӳ пилеђĕсем те салатнă. Ђĕнӳ (хăна) пилеђĕсем пулсан пăрахутсем те Монастырккăна çитеђђен ахалех илсе кайаççĕ. Ђаплă историллĕ кун... Историллĕ ĕç. Каймасăр йулмалла мар... Анђах пирĕн... пилет таврашĕсем çук. Мĕн тăвас? Çапах кайасах пулат̆ вĕтха...

— Тавай, çапах кайатпăр. Пире ахаљ те йурат̆. Тытсан та... нимĕнех те тăвас çук, «ђăваш», тесен йарĕç...—тетпĕр хамăр. Ахаљтен мар ђăваша Ђулхулара пит хисеплеççĕ. Тĕлĕнмелле йапала: пĕр касхине пирĕн ађасем столовăйне кĕнĕ те столовăй хупăннă пулнă. Анђах ађасем: «епĕр, ђăвашсем, инçетрен килнĕ», тесессĕнех ађасене апат çитерсе кăларса йанă. Тата çитменнине укçасăр! Ытти çĕрте те ун пек йапаласем ђас-ђасах тĕл пулма пулат̆. Елĕкхи пек «Ваççил Иванђ» тесе мăшкăласа уларан такăнтармаççĕ иртсе пынă ђухне. Йе кирек-ăçта тăван ђĕлхепе калаçса тăнă ђух иртен-çӳрен «хăш халăх есĕр?» тесе ыйтсан тăван халăх йатне калама вăтанса пуçа усса тăмастăн, «епĕ ђăваш», тесе çавăрса хуратăн. Ђăваш пулсан, ђăвашах пулас пулат̆ ăна. (Ђăваш йатне ытаракансем те пур хушăран).

Çапла, «ђăваш» çине шанса 11 сехетре Монастырккăна кайакан Ока пăрахуђĕ çине мулкаçла йăпшăнса кĕрсе лартăмăр.

...Пĕр сарлака, кĕске лапшака прахут йерипен Ока шывĕ тăрăх антăранă нăрă пек тăвалла ђакаланат̆. Такама çӳреме тунă хайне. Прахут çинђе халăх нумай. Ђулхула хапрăк савăђĕсен «телекатсийĕсем, хĕрлĕ салтаксем, пионерсем, пирĕн пек «ђĕнменнисем»... прахут туллийĕх шавласа çĕмĕрĕлсе пыраççĕ. Пионерсем вăйă пуçласа йанă, çынсем хушшине ђупса мăйсенђи хĕрлĕ хăмађĕсене вĕлт вĕлт, вĕлтĕртеттереççĕ.

Ăшă май кунĕ. Тӳпе тăрă, кăвак. Хĕвелĕ çурхи сарлака Ока çине ӳксе пурçăн укасем пек йăлтăртатат̆. Шыв çийĕ уçă та анлă. Такам йурийĕх ђӳкенме хушнăлла ђăпăлтатса ђухенсе тăрат̆. Çилĕ... Çилĕ çемçе кушак çурилле йăпшăнса килсе питсене, мăйсене сĕртĕнсе хыçаланса, ађашланса çӳрет. Тăп-тăрă, уçă сывлăшра çурхи ађаш ăшша вĕлкĕштерет. Парахут мађтийĕ çинђен виç кĕтеслĕ ђăсăк хĕрлĕ йалава хăйĕн курăнми аллисемпе вĕçĕнђен тытса курăнми куçĕсемпе вăрахăн çавăркаласа пăхат̆...

Авă, пĕр йенђе Канавинă, тепĕр йенђе Ђулхула, иккĕшĕ икĕ çыран тăршшипе ђăсăлса курăнми пулса йулђĕç. Пĕр савăт труписем çеç пĕлĕт хĕррипђен хăйсен тĕтĕмпе хуралнă пуçĕсене кăларса нумайђђен куçрап пытанмасăр тăнă хыççăн, такам курăнми мăлатукпа шалђана çĕр ăшне çапса кӳртнĕ пек йерипен куçран çухалђĕç. Авă, сылтăм йенђе шывăн çӳлĕ çыранĕ хĕррипе анаталла пуйăс ђупса анса карĕ. Урапасем хурçăпа хурçă çапăннă пирки васкавлăн шаккаса куснине итлесе, хупхура пăравус трупинђен шапшурă пăс пăлкаса тухса шур сахăр пек сывлăшра ирĕлсе кайнисене çеç пăхса савăнса пыратпăр епĕр...

Пăрахут малалла шăват̆. Пăрахут çинђи халăх кĕтет. Хăвăртрах Монастырккăна çитессе кĕтет. Ăна кашнă çын питĕнђенех курма пулат̆. Пурте пайанхи кун историре паллă ĕç пулассине пĕлсе, ăна кĕтсе тарăн шухăша кайса уçă тавраналла, кăвак та çутă инçете куçĕсене тĕлленĕ. Ăçта çитмеççĕ-ши вĕсен шухăшсем? Мĕнле ĕмĕтсем çавăрăнмаççĕ—ши пуçĕсенђе?..

...Шур акăш пек ђайккасем пуç тăррипђе йавкаланаççĕ. Хăв шыв çинђе пынине, Монастырккăна çывхарса Ока тăрăх тăвалла шунине тепĕр хут аса илетĕп... Ђас ак, çитетпĕр.,, ђун хĕпĕртет,,,

Сулахай йенђе, вĕтлĕх вăрман ăшĕнђе катаранах шуралса ларан ђирĕк тăрри çынсен пуçĕсене хăй патнелле йăхăра пуçларĕ. Прахут çинђи çынсем йăшаланма тытăнђĕç. Çитетпĕр пулмалла...

...Пĕђĕк шурă пристăнђ патне çитсе йунашса лартпăр. Пристăнђ айăккине: «Нижегородский автозавод» тесе çырнă. Кунта, иккен, вăл йапала! Пристăнђ патĕнђе çыранра хĕрлĕ йалавсемпе халăх пире кĕтсе тăрат̆. Пăрахут çинђен вĕçĕмсĕр халăх тухат̆. Епĕр те тухатпăр.

Шыв хĕррипђе. Шыв хĕррипе шурă хăйăрлă çыран тăрăх ђукун çулĕ хурса кайнă. Унтан автосавăталла тепĕр çул... Епĕр пăрахут çинђен тухсан пĕр çĕре пуханса тăтăмăр. Пĕри, кунта ĕçлекенсенђен пулас, вакун çине хăпарса тăрса епĕр кунта мĕн тума килнине, мĕн-мĕн курмаллине каларĕ. Ей, ăна епĕр ахалех пĕлетпĕр! Ан та кала! Епĕр автокикант никĕсне хунине курма килнĕ! Епĕр Ђулхула, Ђĕршински, Сормăвă, Канавинă, Палахна ĕççыннисен праçнĕкне, Пĕтĕм Ђулхула крайĕнђи ĕççыннисен уйавне... çук, Пĕтĕм Совет Сойусĕнђи ĕçхалăх праçнĕкне, ђаплă çĕнтерӳ кунне уйавлама килнĕ. Вăт мĕн тума килнĕ епĕр... Кунта кашнийĕх пĕлет пайан. Манпа йунашар утса пыракан ђĕлĕме хыттăн çыртса лартнă вăта

# ШУПАШКАРТИ ПРЕТПРИЙАТТИСЕМ.



*Шупашкарти тĕп ерех савăтђĕ (кил хушши).*

патмар çын. Вăл, ђышкисене ђăмăртаса, вирлĕн, хыттăн, Ђулхула Крайĕнђи полђшевиксен çарĕ пĕр çын пулса пиĕрн ума тухса тăрса вуншар пин хурçă пролетарин вăйлă сассипе хыттăн кăшкăрса каланă пек, пурне те ђĕрене витермелле калат̆.

— Епĕр пайан ĕçлекенсен класĕн ирĕкне, Совет правиттĕлствин çивĕђ приккасĕ тăрăх, Комуниссен парттийĕ хушнă тăрăх çулталăкне 140.000 машшин кăларакан автомопил савăђĕ никĕсне хуратпăр.

— Çак пысăк автомопил савăтне лартса епĕр хамăр патшалăха технĕккă йенђен малти патшалăхсен йышне хутшăнтаратпăр. Автосавăта тупи ĕçлекенсемпе хресђенсен çыхăнăвне татах çирĕплетни, йалпа хулана пĕр-пĕрин патне çывхартат̆...

—Ĕçлекен-çесоннĕксем савăт тăвасси йăвăр, анђах ђаплă ĕçе тума сирĕн алла шанса панă. Сирĕн çак ĕçре капитталисла патшалăхсемпе ăмăртса ĕçлеме ексамĕн тытмалла. Савăта тупă çĕрте кашнă утăма тишкĕрсе тĕрĕслени, криттĕклени кирлĕ. Пирĕн, епĕр капитталисла патшалăхсене хуса çитсе иртсе кайма пултарнине кăтартас пулат̆. Епĕр ăна кăтартатпăр та.

Хĕрӳллене хăпарса çитнĕ халăх кăмăлĕ Интернатсионал йуррипе хутăш пиншерĕн «урра!» кăшкăрнă сасăпа çурăлса таврари уçланкăна «йан! йан!» йанратса илет.

Трипунă çинђе Коминтерн претставиттĕлĕ Ферти й-ш. Вăл Комуниссен Интернатсионалĕн Еçтăвккомĕ йађĕпе халăха саламлат̆. Тем калат̆ вăл. Темле ђĕлхепе калат̆, пĕлмелле мар. Анђах, çав вăхăтрах Ферти йулташ мĕн çинђен калаҫнине, мĕн каланине пурте ăнланаççĕ. Ăнланманни никам та пулас çук. Вăл: «капитталис», «експлоаттатси», «револђутси» «коминтерн» сăмахĕсене асăнни катаранах вăл мĕн çинђен каланине пĕлтерет, ăнлантарат̆.

Йут патшалăхри пролеттарисен претставиттĕлĕ: «Сирĕн 5 çуллăх план пролеттариат тăшманĕсем каланă пек путалăхран тупнă йапала мар, шухăшласа кăларнă йапала мар, вăл — ђăнлăх. 5 çуллăх план ђăн-ђăнах пурнăçа кĕрсе пынине пайанхи кун есĕр çакăнта автокикант никĕсне хуни кăтартат̆...» тет.

Тата нумай каларĕ Ферти. Ферти мар, Коминтерн каларĕ кăна. Кăна тĕнђери Револђутси Штапĕ калат̆. Вăл, çакăнта пайан пухăннă ĕçхалăхне хамăр хуçалăха интустриленĕ çĕрте тата хытăрах вăйа хурса ĕçлеме ђĕнет. Пирĕн кĕрешӳ çине пăхса капиталисла патшалăхсенђи мĕлйуншар ĕççынни хăй çĕршывĕнђи пусмăрлăхпа, хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешме вĕренни çинђен аса илтерет. Капитталисла патшалăхсенђи револђутсиллĕ кĕрешӳ куллен-кун вăйланса пыни çинђен калат̆...

...Ăна итлеме шăпланнă тавралăха йанăратса иквиç оркестрпа выђани тĕнђе ĕççынниĕн револђутсиллĕ кимнĕ Интернатсионал каллех вăйлăн кĕрлесе кайат̆. Ун кĕвви уçă та йанăравлă. Вăл кашнин ђĕрине çапăçу хастарлăхĕпе тустарса çĕклентерет...

Пĕлетпĕр епĕр, пурне те пĕлетпĕр! Çĕршыва хурçăланă ђух ĕçре çунна вăхăтрах тĕнђере мĕн пулса пынине те лайăх астуса пыратпăр. Совет сойусĕнђи ĕççынни пурне те лайăх астуса пырат̆. Вăл тĕнђипех прĕкшĕн йун тăкакан тăванĕсене те манмаст̆... Кирлĕ çĕрте йалапах пулăшу парса тăрат̆, йалапах пулăшма хатĕр...

Трипунă çинђе Профинтерн претставиттĕлĕ Корпĕр й-ш. Вăл та пире ăнланмалла мар акăлђан ђĕлхипе вирлĕн, аллисемпе таçталла кăтартса, ђышкисене ђăмăртаса тытса тем кăшкăрат̆. Тем калат̆...

Каллех вăл каланине пурте ăнланаççĕ... Вăл, пайан çакăнта автокикант никĕсне хуни тĕнђери пролеттаришĕн питĕ пысăк ĕç иккенне калат̆...

Каллех Интернатсионал...

Нумай ораттăрсем тухса каларĕç. Миттĕнка пухăннă ĕçхалăхне Крайĕçтăвкомран Колованăв й-ш, Крайпрофсоветран Сашшипайĕв, Строиттĕлсен Тĕп Комитетĕнђен Тсихон тухса саламларĕç. Вĕсем пурте ĕçлекен-строиттĕлсене, метталиссене ушкăнпе мĕн пур вăйа хурса ĕçлеме, савăта каланă вăхăтра туса пĕтерме ђĕнеççĕ...

Татах та нумайăн каларĕç. Кашнийех вĕсем сахал та тĕплĕ савăлласа хураççĕ. Кашнийех пирĕн сотсиалисăмлă интустри ӳснине, ĕççыннипе автомопил çине лартма, хресђенсене трактăр çине лартма вăхăт çитнине калаççĕ.

Акă, умра Канавинри ĕçлекен Çтепанăв. Çĕлĕкне хывса, халăх умне тухса тăђĕ. Муталаннă çӳçĕсене çил вĕçтерет. Вăл тата кĕскен:

— Епĕр автосавăт тăватпăр. Окка урлă кĕпер хыватпăр. Тата та нумай пысăк хапрăк-савăтсем тăватпăр. 5 çуллăх плана 4 çултах туса пĕтерме сăмах паратпăр!..тесе пĕтерђĕ хăй сăмахне.

Ун хыççăн Сормăвă ĕçлекенĕ Волонин, Тçершинскран Кођђанăв тухрĕç. Ђăн йулашкинђен Канавĕнран ђул ĕçлекенĕ тухрĕ. Умĕнђе ун ĕçре вараланса пĕтнĕ шурă саппанĕ вĕçет.

— Колхоссене, совхоссене вăхăтра автомопил парас тесен, пирĕн автосавăт пайан тума пуçласа ăна 15 уйăхра туса пĕтерес пулат̆. Епĕр ăна вăхăтра туса пĕтеретпĕр, тесе шанатпăр!..

Ку каланă хыççăн йулашки хут тата вăйлăраххăн Интернатсионал йанăраса карĕ. Вĕсен аллисем тăваççĕçке ку савăта... Çавăнпа та вĕсен сăмаххисем те кунта пухăннă ĕççыннисемшĕн питĕ хаклă сăмахсем...

Трипунă çинђе каллех Çиминă й-ш. Вăл савăт никĕсне хуни çинђен çырнă акта вуласа парат̆.

Миттĕнк пĕтет. Пурте никĕс ваљђи ђавса хунă вырăна куçаççĕ. Никĕс валли ђавса хунă ансăр çĕр хушшине малтан Çиминă, Штанăв анаççĕ. Вĕсем тăхлап паккет ăшне савăт никĕсне хунă пирки çырнă акта ђиксе питĕреççĕ. Унтан ăна ђи тĕпне, ђи малтанхи ђул айне хурса тсемĕнтпа витсе тултарса лартаççĕ. Çапла çак савăт никĕсĕн малтанхи ђулĕ çав акта ĕмĕр-ĕмĕрлĕх пусса выртса айала пулђĕ. Вăл ăна пулас çынсем валли усрат̆... Тен, тепĕр 1000 çултан çак вырăнта, хаљхинђен йăлт урăх, ирĕклĕ телейлĕ çынсем çав акта тупса вуласа пăхĕç те пайанхи кун çакăнта çапла ђаплă уйав туса малтанхи револютсиллĕ патшалăхра — Совет Сойусĕнђе пĕрремĕш автомопил савăђĕн никĕсне хуни çинђен пĕлĕç...

«Аслă пролеттари револютсийĕн 13-мĕш çулĕнђе, пин те тăхăр çĕр вăтăрĕмĕш çул, майăн иккĕмĕшĕнђе, савăтри ĕçлекен строиттĕлсем, Канавинă, Сормăвă, Мускав, Тçершинск, Палахна, Ђулхула т. ыт. районсенђи ĕçлекенсен телекатсийĕсем, Партти, Профсойуссен тата Ђулхула крайĕнђи тĕрлĕрен ытти орканисатсисен претставиттĕлсем умĕнђе пулас автокикантăн пĕрремĕш ђулне çакăнта хунă, çавăн çинђен çак акта çырнă»...

Татах ђулсем хурса татах тсемĕнт йарса хытараççĕ. Çĕнĕ автокикант никĕсленет. Катара кивĕ йăвăç тункатисене сирпĕтсе снаретсем сике-сике кайаççĕ... Тымар татăккисем, çĕр-тăпра тĕпренђĕкĕсем çӳлелле вăркăнса ывтăнаççĕ, каллех хыттăн çĕре анса ӳкеççĕ..

Кивĕ тункатасем сирпĕнеççĕ. Кивĕ тункатасене сирпĕтес пулат̆. Вĕсем автокикант тума, ăна хăвăрт, вăхăтра туса пĕтерме ђăрмантараççĕ... Вăхăђĕ нумай мар вĕт, 15 уйăх!..

Митĕнк пĕтет. Таврапалла халăх саланат̆. Умлă хыçлă автомопилсем халăха тийесе авкаланђăк çулсем тăрăх вĕçтереççĕ... Моттотсиклетсем... Велоççипетсем... Халăх пуйăс çине сырăнат̆. Пирĕн телейе пайан пуйăс çинђе те укçасăрах çӳретеççĕ. Йулашки хут автокикант вырăнне, унăн çара уçлапкине пăхса йулатпăр... Ку вырăна ун пек тумпала урăх нихăçан та, нихçан та курас çук. Ку вырăнта урăх, хурçăпа тсемĕнт тĕнђи ӳссе çитĕннĕ...

Автокикант...15 уйăх... Кунта пайан праçнĕк пулђĕ пулсан, ыран иртенех хĕрӳллĕ ĕç пуçланат̆... Ыран иртенех пиншер çын, мĕн пур вăйа хурса ђакалана пуçлаççĕ... 1931-мĕш çулхи авкустăн 1-ђен туса пĕтермелле... 15 уйăх... Калама çеç пит çăмăлçке ăна. Çулталăкне 140.000 машшин кăларакан киканта çав кĕске вăхăтрах туса лартма ытлах çăмăлах та марçке вăл... Кам курнă пуљ çавăн пек хăвăрт пулакан ытла та пысăк ĕçе? Кам туса курнă пуљ ун пек пысăк савăта 15 уйăхра?

Ун пек йапалана истори курман. Етемлĕх те пĕлмест. Çавăн пек пысăк савăтсене çав тери пĕђĕк вăхăтра туса пĕтерсе ĕçе тăратма пĕртен пĕр ĕççыннийĕ çеç, кĕрешӳре пĕрлешсе, ђăмăртанса пиçнĕ ĕççынĕ, сотсиалисăм çулĕ çине тухнă ĕçхалăхĕ çеç тума пултарат̆. Пĕр вăл çеç. Ĕççыннийĕнђе анђах мĕн пур шанђăк, хăват...

Савăтне тума Амерĕк иншенерĕсем килнĕ. Вĕсемех савăт проекђĕсене те туса хатĕрленĕ. Амерĕкле тĕплĕх, çыпăçуллăх, револютсилле хăвăртлăх—акă мĕн тăват̆ автокиканта!..

Алăра автостроиттĕлстврăри ĕçлекенсен «Автогигант» йатлă хаçађĕ. Унта ĕçлекенсен хушшинђи култтурă ĕçĕ, утарнăй прикатăсен ĕçĕ, ăмăрту пур те пур. Литтераттурă странитси те... Унти ĕçлекенсем хушшинђе хăйсен сăвăçисем те пур иккен...

Ку хаçат та автокикант тунă çĕрте пĕђĕк вырăнах йышăнса тăмĕ. Ун умĕнђе тăракан ĕçсем пысăк та, йăвăр... Анђах йăвăрлăхсем вĕсем пирĕншĕн, хăйсене çĕнтермешкĕн çеç пулаççĕ...

...Пуйăс хыттăн малалла ђупат̆... Епĕр вакун кантăкĕсенђен пуçсене кăларса таврари кайалла шуса йулан çĕршыва пăхса савăнса пыратпăр. Çӳлтен хĕвелĕ татах ăшшăнтарах кулат̆... Шухăшсем таçта вĕçеççĕ... Асра: 15 уйăх... Вара килес çулхи авкустăн 1-шĕ... Пĕр çавсене çеç хыттăн астуса йулнă епĕ...

Ђулхула Петинçтитут
майăн 3-мĕшĕ.

**УЙĂП МИШШИ.**




*Пуçламăшĕ иртнĕ №-рте.* *Литтературă ăмăртуне килнĕ.*

Никам та асăнмасть Йăрар травашне. Камăн анасем пур—кайса курать унталла. Ана çук—кайса та çÿремест. Çитменнине тата çĕрĕ те пахах мар. Тăмлă, ђуллă, хăйăрлă.

— Акапуç тимĕрри лайăх çуталать çав. Хăйăрпа çĕтĕ ђул шăлса кăна пыраççĕ тимĕре.

—Пĕр çурпилĕк сухаласан тепĕр хут туптамалла пулать, çавăнпа тата...

Çакăн пек халапсем кăна илтĕнеççĕ Йăрар тăвĕ çинђен пĕрпĕрин хушшинђе.

— Пĕр çулне тăм катăкĕсене пухса çÿрерĕ пĕрскер, хăш çул пулђĕха вăл?

— Хăш çул... Епĕ ранĕн пулса килнĕ çул пулас пулать теха вăл. 1919-мĕш çулта пулђ...

— Е-е... Ђăнах çав çулçке вăл. Çак кĕсре ула тыхана туна çулне теха вăл. Çавăнтан астăватăп: питĕ йуратађђĕ вăл вырăс ула тыхана. Е-е, шăпах улга çул пулас ĕнтĕ вăл..

— Çапла çав, улттă. Пирĕн Хĕветĕр те пилĕк çулта таха халђ. Вăл епĕ тавăрăнсассăн çулталăкран çуралнă та. Çаплах çав... Шăпах улттă çав..,

— Çавăн ђухне ара вăрттăн килсе пуçтаратпăр çак тăм катăкĕсене. Никама систерместпĕр. Е-е-е, вĕтĕннĕсем. Вăрттăн пуйатпăр пулать ĕнтĕ. Ĕçлесе çитсе пыманнине—йантăпа пурăнасшăн тата...

— Ман халђ те выртаççĕха пĕр тăват-пилĕк катăк кĕлет алăк тăрринђе.

— Епĕ тасатрăм çавăн ђухнех...

Çĕртме пĕрле тăваканçем аса илсе пуплеççĕ иртнĕ çулхисем çинђен. Пысăкрах ђул катăкĕсене тапа-тапа сирсе хăвараççĕ умĕнђен. Вĕтĕреххисем çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Сухалаççĕ.

— Вăрçă тухнă çулне çакăн пек йĕпе тăрсађђĕ çанталăк. Вырнă тырăпул çĕрсе кайрĕ ун ђухне те. Нурăса кайса килиђђен ывăнађђĕç лашасем.

— Кĕркурисене Йепреçе леçрĕмĕр те епĕр. Виçĕ кунта аран кайса килтĕмĕр. Шепекеђе çитсен ывăнђĕç лашасем. Туртса кăлараймаççĕ урапана. Калама çук пылђăк.

— Тырри лайăх пулнăђђĕ çав вăл çулне.

— Тырри кăçал та аптрамаллах мартаха вăл... Вырма срукне памаçке çанталăкĕ.

Кунĕн-çĕрĕн çăвать ăш çумăр. Тухма-кĕме çук пылђăк. Хĕвелĕ хĕртет, пĕçертет. Çăмăрĕ те çавăнтах пĕрĕхет.

— Панинђен тарма çук. Анђах... алла пулсан пырăђђĕ. Каплах пулсан, алла илеймĕпĕр. Уйах та хăвармалла пулĕ,—пуплеççĕ çăмăр вĕçĕмсĕр çунишĕн. Кулђђанаççĕ тырăсем уйах йуласран.

— Пĕлтĕр ку вăхăтра ыраш пĕтернĕђђĕ. Кăçал çурла та кĕмен. Кайа йултăмăр. Çиме пĕтнисене канçĕртерех. Çиме çитекенсемшĕн хăть аплах мар. Выçă пĕр кун пурăнасси те, ађам...

«Йăрар травашĕнђи тăмсене пуçтаракан вырăссем килнĕ, тет. Çав, пĕр çулне килсе кайнă вырăсси хăй тăванĕсене пуçтарса килнĕ, тет те, халђ пилĕкĕн тет, ађам. Пурăнмаллах килнĕ, тет. Ылтăн пурах вăл тăм ăшĕнђе. Ахалђтен аппаланса çÿрети çын. Вĕсем пĕлеççĕ пулĕçке... Пилĕкĕш те маттур тет. Хăрамастпăр халђ, тесе мухтанаççĕ, тет хăйсем» пуплеççĕ йал çинђе.

Ку сăмахсене илтнĕ хыççăн ђылайĕшĕ урам тăрăх çÿреме тухрĕç. Курасшăн çĕнĕрен килнĕ çынсене.

Икĕ касăм килсе çурĕ çăмăр пайан та. Урам хушши пылђăк та, шыв. Пĕђĕкçеççĕ çырма пуçĕнђе пăкăртатать çăмăр шывĕ. Урапа йĕррисемпе васкаса ђупать вăл унталла. Васка-васка çÿлтенех сикет шырлана. Пĕртте хăрамасть суранланасран. Ара, шăмăсăр йапала вĕт. Ванас çук. Ура-ал мăкăлтанас çук. Ерне, ђылайђђен кăпăк кăларса выртать те айалта. Унтан мăкăртатать хăй халлĕн. Каллех ђупать малалла. Васкать.

— Пилĕкĕн мар, тăваттăн анђах та... Тăваттăш те питĕ матурскерсем вара. Пирĕн ана пуçĕнђен шăрăйлан туса кайнă та, çавăнта çÿреççĕ. Шăйăрланран вĕтĕ ђулсене пухаççĕ кăсем те. Мана ђĕнсе илђĕç те: «пирĕнпеле ĕçлеме çÿреместни?» тесе ыйтрĕç. «Çÿресси, çÿремелле те, тырсем пиçсе çитнĕ вĕт. Тырă вырма кайас пулать. Ак ку та ман Вырас пулать. Анђах çанталăк кăна кансĕрлет», терĕм. «Сан ана-и ку», тесе тĕлĕнђĕ пĕри. «Ман»—терĕм. «Телейлĕ ана», терĕ те, ман куç умĕнђех пĕр ђулне илсе ђикрĕ сумккине,—халап çаптарать Мĕкĕте кÿршĕ çыннипе тырă вырнă çĕрте.

— Епĕр куракан ђул мар пулђ çав вăл. Ăраснарах ђул пулђ.—Ыйтса тĕпђет кÿршĕ çынни.

— Çук, ара хам ана çинђех пуçтараççĕ вĕт. Хамăр куракан ђулах. Пĕрик катăк епĕ те илсе таврăнтăмха. Тен...

— Илтереççи вара хăйсен куç умĕнђех.

— Хăть лавĕпе тийе. Анђах, вăтантарать çав вĕсен куç умĕнђех. Çавăнпа илмелле мар.

Вĕтĕ ђулсемпе кăвак тăм катăкĕсем çинђен каллех саралђĕ тĕрлĕрен йумах. Тĕрлĕрен пуплеççĕ вĕсен пуйанлăхĕ çинђен. Пĕр сăмах çумне виççĕ хушаççĕ; виççĕ çумне—тăххăр, тăхăр çумне...

— Пĕр катăк тăм çинђе çĕр тенкĕлĕх тупнă, тет, ађам, ылтăн...

— Вăл мĕн ђул... Пĕр мăйăр пек ђул ăшĕнђех виçĕ çĕр тенкĕлĕх тупнă, тет. Пирĕн хамăрăн курнă ĕçленине...—тыр вырмаран каçхине апат тума тавăрăнакан хĕрарăмсем пуплеççĕ пĕрпĕрне ăмăртса.

— Шутсăр пуйаççĕ пуђ ку вырăссем...

Йăрар тăвайккисене сăнакан вырăссем килнĕ хыççăн хăш-пĕр çемйере аслатисем те авăтма пуçларĕç вăраххăн. Хир кушакĕсем ирте ирте кайаççĕ арпа арăм хушшинђен.

— Çынсем арăмсем пур—хайсем пуçтарса çӳрерĕç ун ђухне. Сан пур—пуçтарса килнине те кăлара-кăлара тăкнă. Ăçтан пурăнăç тăван ун пек арăмпа?—хăтăрат упăшки арăмне пĕр çулнехи тăм катăкĕсемшĕн.



Фосфорит савăтне ђукунçул кĕрет.

— Ху малтан кăларса тăкнă, епĕ саппанпа пухса килнĕ ђулсене. Сурăх пӳтекки кĕтӳрен йулнă тесе сынсене суйса пустарса çӳрерĕм. Ахалех харама кайрĕ. Вăл... пурăнма пĕлмен арçынпа!..—Парăнмаст упăшкинђен арăмĕ.

Çĕнĕрен килнĕ вырăссем хĕрсех тытăнђĕç ĕçлеме. Кунĕн-çĕрĕн ђаваланаççĕ Йăрар тăвĕнђе. Çитменнине тата хăйсемех те, йалсенђен сынсем илсе тухса тара тытса та ĕçлеттереççĕ. Шăтăксем ђавтараççĕ, тăмсем, ђулсем кăлараççĕ. Кашни тĕслĕ тăмĕсене хут çине ӳкерсе çирса пыраççĕ.

Шăтăксем ђавакансем патне хăшĕпĕрисем тырă вырма пăрахсах курма пыра-пыра тăраççĕ. Вĕсем мĕнле ĕçленине сăнаççĕ.

— Мĕншĕн апла шухăшлатăн?—ђăвашлах ыйтрĕ вырăссенђен пĕри тĕлĕнсе.

—Ара...есĕ ђăвашим?—пĕр харăс сăмах хушрĕç курма пынă çынсенђен пĕриккĕн-виççĕн.

— Ђăваш епĕ. Мускаври Университетра вĕренетĕп. Халђ епĕ стутент. Килте тырă вырса епĕ кăçал та.

— Суйатăн пуђ?—ђăтаймарĕ итлесе тăракансенђен пĕри.

— Ара... мĕн суймалли пур. Ђăвашăн тырă вырмасан мĕн тата...

— Мĕн йатлă ес, ывăлăм?—куçĕсене йĕпе кĕпе çаннипе шăлса ыйтрĕ кăтра пуç Хĕлип.

— Илларионов, теççĕ мана.—татса каларĕ стутент.

— Ыттисем камсем тата? Санăн пиђусем мар пуђ?

— Çук. Пиђђесем мар. Пĕри, ак ку—Корнăй иншенер Сопалĕв; вăн шĕлепкепе тăраканĕ—Хусанти Университетри профессăр Ђертынтсĕв; ак ку, хам çумри—Хусанти стутент Суур.

— Мĕнле, мĕнле, мĕнле: Сурăм?—хăлхине хăрах йенелле туса ыйтрĕ тепĕр хут клуххуй Унтри.

— Суур.

— Аха, Сур. Ђăваш хушаматлă тата...

— Пирĕн йала куçармалла теççĕ, ђăнахахши?—ђăтаймасăр ыйтрĕ кăтра пуç Хĕлип.

— Çук. Епĕр шыракан йапаласем айалта вĕт. Епĕр çĕр ђаваласа айала кĕретпĕр вĕт. Йал пире нимĕн те кансĕрлемест. Çывăхра йал пурри пирĕншĕн темĕн ђухлĕ те лайăх. Акă, кăçал мар, килес çул кунта вăйлă ĕç пуçланат. Кунта питĕ те нумай тупăнат фосфорит. Рапођђисем питĕ нумай кирлĕ пулаççĕ. Рапођђисем валли пурăнмалли çуртсем сасартăк тăвайас çук. Сирĕн йал çывăхраххи калама çук ырă пулат рапођђисемшĕн.

— Рапођђисемшĕн ырă пулат теха вăл. Рапођђисем пирĕншĕн—те ырă пулĕç вăт?..

— Рапођђисем камсем пулаççĕ тата... Рапођђи вăл—есех вĕт. Санăн арăму та, хĕрӳ та, ывăлу та, кинӳ те, ху та рапођђи. Мĕн хăрамалли пур рапођђисенђен...

Ку сăмахсем вирлĕн перĕнђĕç курма пынă çынсене. Тахçантанпа ăшра темĕн тĕрлĕ шухăш авкаланса çӳрени нимĕн йулмиђђен сăрханђĕ çак самантра.

— Итлеха, Хĕлип Ваççилђĕ, рапођђи пулатпăр вĕт. Ара пире темĕн каласа хăратса пурăнаççĕ йал Йаккăвĕсем. Итле вара вĕсен йумахне... Такки пăтратаç вĕт пĕтĕм халăха. Мĕн ђухлĕ тĕрлĕрен хыпар кăлармарĕç пуђ ку ĕç çинђен. Ара... тахçанах килсе ыйтмаллађђĕç. Хваттерĕсене кайма вăтанатпăр. Кунта килме хăратпăр. Мĕн хăрамалли пур ара. Сывă пулăр!—Илларионов стутента тавтуса саланђĕç кашни харпăрхăй анисем çине курма пынисем.

— Вырăссисем мĕн тĕслĕ тăмĕсене хăйсене илнисене асăрхарăни?—кĕтсе ыйтрĕ арăмĕ кăтрапуç Хĕлипрен. Ађисем те вырма ђарăнђĕç.



Фосфорит тăприне армана йарас умĕн типĕтеççĕ

— Ухмах. Ылтăн шырамаççĕ вĕт вĕсем. Темĕскерле фосфорит ђулĕ шыратпăр, тет. Вăл пире нимĕн тума та кирлĕ мар.

— Тата ма ђаваласах шыраса çӳреççĕ?

— Ара, тупасшăн ђаваласçĕ. Кайран хапрăк пулат вара кунта. Пире те илетпĕр тет ĕçлеме. Пĕри ђăвашах. Ђăвашла ăнлантарђĕ. Питĕ лайăх калаçат. Тĕппипе ăнлантарђĕ. Ахалех темĕн те пĕр туртса кăлараççĕ Йал Йаккăвĕсем.

— Апла еппин?..
— Ҫапла ҫав...
Фосфорит шăтăкĕсене ђаваласа ҫӳренĕ уй—вырман тырă уйĕ. Ҫавăнпа та фосфорит шăтăкĕсене вырнă анасем ҫинђе кăна ђаваласа ҫӳреҫҫĕ «вырăссем». Питĕ те кăмăллă ҫынсем. Ҫитменнине тата хисеплеҫҫĕ ђăвашсене. Вĕсен тыррисене таптаса тăпра купаласа ҫĕмĕрмеҫҫĕ. Ҫакă пушшех тĕлĕнтерет йалти ҫынсене.
— Темĕн ђухлĕ паха йапаласем шыраҫҫĕ хăйсем. Ҫавах та тата тырăсене ҫĕмĕрмеҫҫĕ, хĕрхенеҫҫĕ.
— Хăйсем те тырпул акса тăваканскерсемех теҫҫĕ. Ара...пĕлмеҫҫи хресђен нуштине..
— Тепри пулсан пăхĕ санăн тырруна...
Ҫанталăк йаланах пĕлĕтлĕ, салхуллă. Хутра-ситре ҫеҫ курăнать сарă хĕвел. Парăнтараймасть вăл та тађка пĕлĕте. Тађка, хура пĕлĕт ăмăртать хĕвелпе. Вăраххăн та патмаррăн хупăрлать ун сăнне. Насоспах пĕрĕхет шывпала ҫĕр ҫине. Тӳрем ҫĕр те ҫутăхать шывпала. Лупашкасем туллийех унпала. Пусма ҫук ниăҫта тип вырăн. Ларса канма ҫук вырăн: пылђăк, йĕпе.
Купалǝнă кĕлтесем симĕсленђĕҫ. Сип-симĕс лараҫҫĕ ҫĕмелсем. Уйри тырăсем тĕссĕрленђĕҫ. Хупхура курăнаҫҫĕ хăмăлсем.
— Манăн виҫĕ ҫĕмел пĕтрĕ ҫăмăрпа.
— Манăн та шăтнă пулмалла. Кайса курман.
— Шăйăрлатни ҫурпилĕк ҫинђен икĕ ҫĕмел йухтарнă манăнне ĕнерхи ҫăмăр.
— Ĕнер фосфорит ђакалакансем патне аран ҫитсе тăтăм. Хам пĕр ҫĕтĕк сăхманпа кăна. Вилес пулать унта ҫитеймен пулсан. Ђатăр айне тăратрĕҫ ҫав вăйлă ҫăмăр ҫунă вăхăтра.
— Шыв тулђĕ пуљ вĕсен шăтăкне.
— Урлах карларĕ. Йатлаҫаҫҫĕ Михалккисем. Урăх ђавмастпăр, теҫҫĕ. Вилес пулать ку ĕҫпе, теҫҫĕ.
Йалтах йăлăхтарђĕ вĕҫĕмсĕр ҫăмăр. Савăнмасть те кех унпа никам та. Анђах ђарăнмасть вăл, канмасть пĕр кун та.
Ирхине уйарах. Илемлĕ ҫанталăк. Хĕвелĕ те ухать мухтансах. Хăйĕн йапшар аллисемпе ађашлать ҫĕр питне. Кулать, йăпатать, авăнать тĕнђепе. Анђах, нумайлăха мар. Ҫухалать ҫавăнтах.
— Кашни кун мур йăттисем пек пулатпăр.
— Ĕҫлеместпĕр урăх.
— Урасем ыратакан пулђĕҫ пĕрмайах шыв ҫинђе.
Ĕҫлекенсем тухмаҫҫĕ ҫĕр ђавма. Ђăнахах ывăнђĕҫ пылђăкпа.
Йăрар тăвайкки—шывлă ҫĕр. Ҫăмăрпа пушшех йепрет шывланса. Канҫĕр. Хурлăх ĕҫлеме.
— Ай, та, рас ешшо.
— Ай, та, рас ешшо.
— Ай, та, рас...
Ђавнă шăтăкран шыва тăкаҫҫĕ витрепе. Анђах, шывĕ тулсах пырать хĕррипе.
— О, ҫилней.
— О-о, ҫилней!
Хăвăртран хăвăрт ҫапаҫҫĕ ҫӳлелле. Хăшĕсем ĕҫлеҫҫĕ ҫилленсех.
— Хăйамата укҫу-кађку.
— Кирлĕ мар.
— Айтăр кайатпăр.
Шывăн хăватне тӳсеймесĕр уттараҫҫĕ килелле. Ĕҫĕ сан пултăр хăть йепле.
— Тархасшăн ан кайăр. Укҫа хăпартатпăр. Икĕ хак паратпăр,—тархаслаҫҫĕ ĕҫлекенсене фосфорит хуҫисем.
— Хăйамата сирĕн укҫу-тенкӳ. Укҫа тесе—вилес мар. Хаљ те урасем шыҫăнса кайрĕҫ.
Ђарса ђарма ҫук. Саланђĕҫ рапођисем. Пăхса кăна тăр ĕнтĕ хаљ. Кунсем иртеҫҫĕ пĕр ахаљ.
Тăваттăн тăвата йала саланаҫҫĕ ĕҫ вăй шырама. Ҫăмăрĕ вĕҫĕмсĕр ислетет, ђарăнмасть. Хăватлă хĕвел те ăна ђараймасть. Ђарма мар, хăй те вăл парăннă ҫăмăра.
Йăрар ҫырми карлать ҫăмăр шывĕпе. Улăхĕ выртать ҫапҫутă. Симĕс курăк курăнмасть улăхра. Йапшар хĕрсен тĕкĕрĕ пек выртать ҫутăхса. Анђах, пыма хăрушă, ҫутатать ҫăтмаллах.



Фосфорит арманĕн пĕр пайĕ.

— Ĕнер ҫумарĕ. Пайан та уйар. Паромĕттăр уйар кăтартать. Пирĕн ĕҫсем ăнаҫҫĕ ĕнтĕ...—халаплаҫҫĕ пĕрпĕринпе фосфорит шыракансем.
Ҫăмăр ҫумарĕ ĕнер. Ҫумасть пайан та. Хĕвел хăй хăватне йађĕ Йăрара. Шывсем вăрахăнах тараҫҫĕ ҫырмана. Йăрар улăхĕ те улаланђĕ: кунта ҫаран, унта шыв. Выљамасть вăл текех хумханса, ҫутăхса.
Симĕс пуҫлă кĕлтесем саланђĕҫ ҫĕр ҫине. Кĕлтенĕн-кĕлтенĕн выртаҫҫĕ хушкăнса. Ула ђăла анасем ҫурмаланђĕҫ. Ҫурмаланђĕҫ уйра кĕлтесем.
Фосфорит шăтăкĕсем ҫав-ҫавах пылђăк. Каламǝ ҫук кансĕр ĕҫлеме. Насос та ҫăтаймасть вĕсен йăлмине. Витре те виҫеймест тăмлă нимĕре.
— Ĕҫлеместпĕр.
— Май килмест.
— Тырă вырма кайатпăр.
— Ҫанталăк уҫă. Кунта пăђă. Ҫăрăл йăлмапала
Саланђĕҫ ҫĕнĕрен пухнă рапођисем те. Йулмарĕ ĕҫлекен никам та.
Ирĕксĕрех пăрахмалла пулђĕ ĕҫлеме. Каймарĕҫ йалсем тăрăх текех ҫӳреме. Ҫӳресен те усси ҫук. Ҫын тупăнмасть. Тырă выраҫҫĕ.
Тĕнђе пуҫлăхĕ йăлкăшать, выљать. Йапшарăн хыпашлать ҫĕрĕн кăкăрне. Ҫĕрĕ те уҫҫăн ăна хирĕҫ сывлать. Кăкăрĕпе кармашать ун йенне.
— Хамăрăнах ĕҫлемелле. Унсăрăн май тухмĕ,—терĕ тăваттăшĕнђен пĕри.
— Ман кăкăр ыратать. Епĕ ĕҫлейес ҫук. Епĕ кунта та аран тăратăп,—аран сăмах хушрĕ, пĕтĕм ђирлесе ҫитнĕ, тепĕр йулташĕ.
— Пăрахса каймалла пулать.
— Пăрахас марђĕ.
— Пирĕн ку Йăрар тăвайккине пăрахмалла. Ку питĕ те шывлă вырăн. Тавай Ишек тăвайкине куҫăпăр. Унта кунти пекех шывлă мар. Пăралама ты-

тӑнӑпӑр. Вӑл ӗҫе хамӑр та тума пултаратпӑр, — хайӗн вирлӗ сӑмахне каларӗ отрет пуҫлӑхӗ Сопӗлӗв профессӑр. Ђӑн малтан хӑй пыђӗ пӑра ҫывӑхне. Унтан йулмарӗҫ йулташӗсем. Ӗҫ пуҫланђӗ.

Фосфорит отређӗ ҫинђен ҫӗнӗрен тӗрлӗрен йумахсем сарӑлма тытӑнђӗҫ. Кам йепле суйма пӗлет — ҫавӑн пек ӳркенмест.

— Михалккасем ђавса иншенерсемпе укҫа нумай тупнӑ, тет те... Хаԓ вӑн ӗҫлеме те пӑрахрӗҫ, — пуҫласа йађӗ Йал Йаккӑвӗ Нурӑсран тавӑрӑннӑ ђух ҫул ҫинђе кӳршӗ йал ҫыннине.

— Темле укҫа вара? — ыйтрӗ кӳршӗ йал ҫынни.



Аварнӑ фосфорит ҫӑнӑхне уҫса кӑлараť.

— Ара, ҫав, иншенерсемпе ҫӗр ђакаланӑ ҫӗрте ылтӑн купи тупнӑ, тет те... Ҫурмалла тунӑ, тет вара.

Кӳршӗ йал ҫынни—кӳршӗ йал ҫыннине... Каллех кӳршӗ йал ҫыннине... тата... Каллех.

«Тӗмпек хыҫӗнђе ылтӑн тӑпри кӑлараҫҫӗ тет. Анђах, иншенерӗсем ӗҫлеме никама та илмеҫҫӗ. Хӑйсемех ӗҫлеҫҫӗ, тет», сӑмах сарӑлђӗ таврари йалсене.

Ђӑтаймарӗ Ҫӗрпӗл Макҫӑм та, аллине туйа тытрӗ те, утрӗ Темпек йеннелле.

— Ӗне ҫухалнӑ та манӑн, сирӗн йалта йут ӗнемӗн курӑнмасťи? — ыйтрӗ Макҫӑм Тӗмпекре пӗр ҫамрӑк арӑмран.

— Мӗн тӗслӗ?

— Хура-хӑмӑр...

Арӑм ун тӗслӗ ӗне курнине каламарӗ. Макҫӑм, йавӑррӑн сывласа куԓђаннӑ пек пулђӗ те, утрӗ малалла. Ҫавӑнтах илђӗ ӗнене мухтаса.

— Ӗни лайӑхђӗ. Шалккӑ вӗт...

— Ҫапла пуԓ ара... Кирек йепле пулсан та...— арӑм та уйӑрӑлђӗ Макҫӑмран.

«Макҫӑм Тӗмпек хыҫӗнђи тӑвайккинђен ылтӑн ђӑмӑрки тупнӑ тет» пӗри те пӗри пуплеҫҫӗ Ҫӗрпел хушшинђе. Ђылайӗшӗ хатӗрленђӗҫ Тӗмпек хыҫне кайса килме. Анђах ӗҫ вӑхӑђӗ. Тырӑ вырмалла. Кӗлте кӳмелле. Ҫитменнине тата урӑх хыпар ҫӳреме пуҫларӗ йал хушшинђе: «нимӗнле ылтӑн та ҫук, кӑвак тӑм катӑкӗсем кӑна тухаҫҫӗ тет ҫӗр айӗнђен». «Халӑх темӗн те туртса кӑларӗ. Мӗн ылтӑнӗ пултӑр Йарар ҫырминђе», — терӗҫ те, каймарӗҫ хатӗрленнисем.

Хӗвел ҫине тӑрса хӗртме тытӑнђӗ. Ҫӑмӑр пӗлӗђӗсене вӑл пӗтӗмпех ум пӳлђӗ. Пӑрӑнтараймаҫҫӗ хӗвеле пӗлӗтсем. Вӑрман хыҫӑнђен ӑкӑрланса тухаҫҫӗ те — парӑнаҫҫӗ хӗвеле. Татӑкӑн-татӑкӑн саланаҫҫӗ пур ҫӗре.

Фосфорит ӗҫне никам та хутшӑнмасť. Ҫавӑнпа ӗҫӗ те малаллах кайаймасť. Ҫанталӑк йӗпе ђух кансӗрђӗ ӗҫлеме. Йӗпе, сивӗ. Пылђӑк, лапӑркка. Вӑрҫађђӗҫ ӗҫлекенсем. Хаԓ типӗ. Тавра куштӑрка. Анђах, ӗҫлекен ҫук шӑтӑкра. Пурте уй ӗҫӗнђе. Ӗҫ хӗл аллинђе.

— Ма тепре ҫӑмӑр тытӑнмасť? Ҫӑмӑр ҫунӑ пулсан луђшӑ килекен пулӗђђӗ. Каплах ӗҫлеме май килмест, — терӗ Сопӗлӗв иншенер пӑра аври ҫине ларса.

— Манӑн алӑсем йулмарӗҫ ӗнтӗ, — унӑн сӑмахӗ ҫумне хутшӑнђӗ Илларионӑв.

— Мана пурӗ пӗр. Манӑн алӑсем ыратмаҫҫӗха, вӑрттӑн-ђийеллӗн пӑхса илђӗ йулташӗсем ҫине Суур, хайӗн умӗнђе выртакан сарлака хут ҫине кӑвак кӑранташпа пӑнђӑ лартса. Хаԓ шӑтаракан шӑтӑка паллӑ турӗ ӗнтӗ вӑл план ҫине.

— Та, икӗ ерне йахӑн ӗҫлетпӗр... Штутсӑр ултӑ ҫул ӗҫленӗ ђухлӗ ӗҫлейменха епӗр. Ӗҫе вӑйлатмаллах. Нук-кӑ, Иван, ҫавӑнталла уттарарха, — хайсем ларакан вырӑнтан кӑнтӑрланалла кӑтартрӗ Ђертынтсӗв, хӑйсемпе пӗрле ӗҫлекен пӗртен пӗр рапођђийе.

— Ох, ҫав пӗлӗтсенђен вӑйлӑ ҫӑмӑр пуҫланса кайсан... Хаԓ ӗнтӗ тырӑ та вырса пӗтереҫҫӗ. Хресђенсене те кирлӗ ҫӑмӑр. Ыраш акнӑ. Ҫӑмӑрсӑр май килмест. Пире пула пушшех те ырӑ... — Хапӑс хыҫӗнђен хура, тађка пӗлӗтсем тухнине кура карӑнса, анасласа илђӗ кахаллӑн Сопӑлӗв.

— Шӑмшак питӗ те йавӑр... Ҫавасси... ҫаватех пулӗ теха,—ӳркенсе ҫирӗплетрӗ Сопӑлӗв халапне Суур.

Хапӑс хыҫӗнђен хура, тађка пӗлӗт вӑрахӑн улӑхаť Йарар йеннелле. Тӗрлӗрен илемлӗ, хӑрушлӑ курӑнаҫҫӗ пӗлӗт хӗррисем. Ҫавӑнтах пӗринђен татӑлса теприн ҫумне ҫыпӑҫаҫҫӗ. Аслати авӑтаť вӗҫӗмсӗр. Хӑрушӑн кашлани илтӗнет пӗлӗтрен.

— Вӑйлӑ ҫӑмӑр пулаť ку, — ҫӳҫенерех сӑмах хушрӗ Илларионов хайӗн йулташӗсене

— Туртасене йал йенне ҫавӑрмалла пуԓ... — пуплесе илђӗҫ харпӑрхӑй хушшинђе.

Салхуллӑ тӑраť ҫанталӑк. Кӗр сӑнӗ ҫапнӑ ӑна пӗтӗмпех.

Хӗвел сахал курӑнаť куҫ умне. Унӑн ҫутти ҫӗнеймест кӗр кунне. Кив пӳрт кантӑкӗнђен йапшар хӗр пӑхнӑ пек пӑхаť кӗрхи пӗлӗт айӗпе. Ҫавӑнтах вӑтанса пытанаť уп хыҫне. Илемлӗ пек кулаť куллине. Анђах, ҫавӑнтах пӑђӑртаť тутине.

Уй илемлӗ ҫухалђӗ, туртмасť хӑй йенне. Хӑмӑлсем кӑна лараҫҫӗ хурланса. Кӗрхи ҫиле темӗн ка-

лаççĕ пĕр сасăсăр. Лешĕ илтмест, туллат̆ сарăмсăр. ырă кăмăлпе пуплесшĕн хатĕрленнĕ хăмăлсем, ђĕтренсе кăна йулаççĕ сивĕ çил хыçĕнђен.

Çӳхе, хура пĕлĕтсем йухаççĕ пуç çинђе. Пĕринђен пĕри иртеççĕ ăмăртса. Кашнийех пĕрĕхет çĕр çине. Тупма çук вĕсен виçине. Пĕри куркапа, тепри тепри алтăрпа, виççĕмĕш витрепе...

Аш сăра ĕçнĕ пек пулђĕ ырхан çĕр. Кăкăрĕсем хăпарнă çӳлелле. Кăпăк йухтарат̆ çăварĕнђен. Тирпейрен тухнă — вырт̆ат̆ йĕп-йĕпе.

— Ĕçлекенсем кирлĕ мари сире?

— Епĕр ыран Паљукпа пырас тетпĕр?

— Хамăр йалтан виççĕн пулатпăр епĕр?

Сĕне пуçларĕç вăйхалне кӳршĕри çамрăксем. Икшерĕн-виçшерĕн тархаслаççĕ отрета.

Отрет хĕпĕртесе йышăнат̆ вĕсене.

Ĕç пуçланђĕ. Йăрар тăвайкки витĕнђĕ халăхпа. Унта та кунта çын пуххи. Вĕсен умĕнђе çĕр купи. Аркатаççĕ кăна Йăрара.

Инçерен, катаран илтĕнет ĕç йурри. Уççăн та вирлĕн çурат̆ сывлăша:

«Тавай ĕçлер,
Вĕçне вĕçлер,
Йĕрипе,
Майĕпе.

Йурă пуçлаканĕ хыççăн харăссăн йанратаççĕ.

О, о, майĕпе, Ой, та, рас.
Майĕпе, Майĕпе. Ой, та, рас ешшо,
Ой, та, рас ешшо, Ой, та, рас...

Шăтăкран сăнђăрпа хăпартаççĕ витресем. Туллийех пылђăк, тăмлă шыв. Çавăнтах курăнат̆ кăваклă, хураллă, шурă ђул. Çавăншăн ђакалаççĕ ĕнтĕ шăтăксем. Çавăншăн çурат̆ те сывлăша ĕç йурри. Çакă ĕнтĕ пулат̆ фосфорит.

* * *

— Йăрарпа Ишек тăвĕсенђе фосфорит хисепсĕр нумай. Епĕр çаварса илнĕ районтах, çултаăкне пилĕк çĕр пин пăт кăларсан та, пирĕн шутпа, вăтăр пилĕк çул ĕçлеме çитет. Кунта промышлĕннăй район пулат̆. Фосфорит савăтне лартатпăр çакăнтах. Есĕр — пулас рапођђисем, — терĕ ĕç пĕтернĕ хыççăн, рапођђисен пуххинђе, отрет пуçлăхĕ — Сопăлĕв иншенер.

— Ур-р-р-а! — кĕрлерĕ рапођи халăх.

Ик уйăх ĕçленĕ хыççăн, ĕçĕсене пĕтерђĕ отрет. Йăрар тăвайкине хăварђĕ тăлăха. Унта пĕр çын пуçĕ те курăнмаст̆. Ĕç йурри йантăрамаст̆ сывлăшра. Çăхансем кăна савăнаççĕ лупамлă пушă хирте. Тискерĕн курăнаççĕ тăпра куписем.

Отрет кайрĕ.

(*Малэлла тата пулат̆*)



Вăрнарти фосфорит авăртакан арман.

**Писаттĕлсемпе поетсем, тишкерӳçĕсем! Литтераттурă ăмăртуне ђăн-ђăн сотсиалисăмлă ăмăртулла ир ерер, сотсиалисăма ђи кĕске вăхăтра туса пĕтерме пĕтĕм вэйа хурар!**

**Вулакэнсемпе тишкерӳçĕсем! Ăмăрту майĕпе „Сунтэлра“ пиђетленсе тухнă происветенисене тĕплĕрех сӳтсе-йавса ăмăрту ĕçне вăйпăрах хушăнăр!**

# СОТСИАЛИСӐМ СТРОИТТӖЛСТВИШӖН!

Пилӗк ҫуллӑх планӑн пӗррӗмӗш ҫулӗнђе, Ђӑваш республӗкӗн ҫӗнӗрен савӑтсем тӑвас тӗлӗшпе ђылай пысӑк ӳсӗмсем пулђӗҫ. Палӑртса хунӑ сатанисене тултарма рапођђисен массине мопилисатсилесси сарӑлса пынипе Тӗпком, Крайком, тата Опком пољшевикла тӗрӗс йертсе пынипе, Ђӑваш респуплӗкӗн промышлӑннӑҫне сарса пымалли пилӗк ҫуллӑх план ытлашшипех пурнӑҫа кӗрсе пырать.

Кӑҫал строиттӗлствӑна пирӗн укҫа-тенкӗ пӗлтӗрхинђен 3 хут ытларах кайать. Пӗлтӗр строиттӗлствӑ ӗҫне 5 мӗлйун тенкӗ йанӑ пулсан, кӑҫал 17 мӗлйуна йахӑн йаратпӑр. (Ђӑваш профсоветӗн 5-мӗш пленӑм маттериалӗсенђен).



## СТРОЙИТТӖЛСЕНЕ.

*ИЛЙЕ ИВАНӖ.*

Сисетӗр, пӗлетӗр, куратӑр та есӗр:
Пайан хӑрса кайнӑ тӗнђе ишӗлет.
Аркатӑр, ҫунтарӑр, ӑна хытӑ хӗсӗр,
Аркат, стройиттӗл, аркат, ан шелле!

Есӗр, строиттӗл, есӗр, ҫӗнӗ халӑх,
Халех ишӗлтерӗр ҫав ҫӗрнӗ ҫурта;
Никам та путармӗ, есӗр вӑйлӑ халлӑ,
Ҫӗр шыв ҫине лампӑ лартар та ҫутар.

Кӗрле, ҫӗнӗ савӑт, шавла, тимӗр-хурҫӑ,
Ей, пар аллупа ес пайан, ҫӗнӗ йал;
Ҫиревӗлкӗшет ак йалав хӗрлӗ пурҫӑн.
Ҫӳлте вӗлтӗртетрӗ хӗвел йӑл та йал!

Илемсӗр ђиркӳвӗн кивелнӗ хӗресӗ;
Пайан та ыран та куллен ишӗлет.
Ишех, стройиттӗл, ишех унта есӗ.
Ан тив пайан вантӑр, ӑна ан шелле.

Ҫуртсем хаљ тӑватпӑр, ҫуртсем пулӗҫ пысӑк,
Ҫӗн савӑт, ҫӗн хапрӑк йанра та кӗрле.
Пӗрле ӗҫлесессӗн кӑна пулӗ усӑ,
Ӗҫҫынӗ, хресђенӗ, пурӑн хаљ пӗрле.

Ҫӗн савӑт тӑватпӑр, ҫӗн хапрӑк тӑватпӑр—
Ҫӗн пурнӑҫ тӑватпӑр. Ҫӗнелнӗ тӗнђе;
Вайхал сирӗн ҫирӗп, вӑй халӑмӑр паттӑр,
Хӗвел йӑлтӑртатрӗ ҫӗн пурнӑҫ ҫинђе.

Пайан урӑхланнӑ ҫавӑ ҫӗн уйхирте,
Тухса та кӗрлерӗ ак хурҫӑ машшин;
Тинех сухапуҫӗн пайан ӗмӗр иртӗ,
Ҫак хурҫӑ вӑл пулӗ йалсенӗн кашнин!

Шупашкар 10/V-30



# Ђăваш хутошĕстви вунă çул хушшинђе.

Ĕлĕк авалтанпах ђăваш халăхĕ те ытти халăхсем пекех хăй пурнăçне илемлетме йуратнă. Пуринђен ытла епĕр ăна ђăваш хĕрарăмĕсен тумтирĕнђен куратпăр, вăл тумтирсенђе питĕ илемлĕ ђаплă тĕрĕсем курăнаççĕ. анђах, ђăваш халăхĕн çак искусствăсăр пуçне урăх искусствă: карттин тăвас йĕрке, тата тĕрлĕ мелпе йапала кĕлеткисем (скуђптурă, т. ыт.) тăвасси пулайман. Çавăнпа та вĕсем хăйсен пурнăçне çак хутошĕствă ĕçĕпех палăртайман. Кĕнекесем çинђе те ђăвашсем çинђен ÿкернĕ карттинсем сахал, тата илемсĕр курăннă. Вĕреннĕ ђăваш хутошнĕкĕсем те пулман.

Реvођутси пуçланиђђен пĕр 5—6 çул малтан хутошĕствă аккатеминђен пĕр ђăваш Кокĕл йатлăскер вĕренсе тухаҭ, анђах вăл ђăвашсем хушшинђе пађах ĕçлемест, карттинсем тăвасси те ђăваш пурнăçне ÿкерессн ку таранђђен курăнмасҭ. Çав вăхăтрах аккатемине тата виçĕ ђăваш ађи Антрианăв, Çверђков, Çпиритонăв пырса кĕреççĕ. Вĕсенђен иккĕшĕ Çверђковпа Çпиритонăв халĕ ђăваш пурнăçĕнђен карттинсем çыраççĕ. Çапла вара ђăваш халăхĕ илемлĕ карттинсем çине çапăнса хăй сăнсăпатне тĕрĕс кăтарта пуçларĕ. Реvођутси пуçлансан, ђăваш оплăçĕ тусан, Çут Ĕç Пайĕ ђăваш хутошĕствине тапратса йама хутошĕствă çекси (Секция ИЗО) тăваҭ. Вăл çекси хутошĕствă ĕçне ђăваш ĕçхалăхĕ хушшинђе те, шкулта та вăйлантарма тăрăшаҭ. Респуплĕкри хутошнĕксене пĕрлештерсе тăраҭ.

1927-мĕш çулта Мускаври Ђăваш претставиттĕлстви ђăваш искуствине палăртма Мускавра Науккă аккатеминђе «Ђăваш искуствин» каçĕ туса иртерет. Çак каçра карттинсен пайĕ те пулаҭ. Паллăрах карттинсем çаксем: Вырăс хутошнĕк Поххоротскин карттинĕ «Шăпăр каланине итлени»; Косођкĕн хутошнĕкăн «Шăпăрçă», Пуђкин хутошнĕкăн «Ђăвашсем йармăрккара», Çпиритонăв М. хутошнĕкĕн 5—6 карттин.

Çак вăхăтра Шупашкарта пурăнакан хутошнĕксем пĕрлешсе реvођутсиллĕ хутошнĕксен ушкăнне—АХР-а



М. Çпиритонăв хутошнĕк.

кĕреççĕ. Хăйсен ĕçĕсене Октăпĕр Реvођутси вунă çул тултарнă çĕре палăртма пуçлаççĕ.. Мускава йалхуçалăх выставккине карттинсем йараççĕ. Паллăрах карттинсем: Пођакков хутошнĕкăн «Вуламалли çуртра»; Нефетĕв хутошнĕкăн «Авал куланай пухни», Спиритонăв хутошнĕкăн «Ђăваш шкулĕнђе», «Вуламалли çуртра», «Тара кĕрĕшсе тыр вырни», «Тăла пусни».

Çак çурах октăпĕр йупилейне асăнса, Шупашкарта ђăн пирвайхи хутошĕствă выставкки пулса иртет. Выставккăра пурĕ çĕр карттина йахăн пулнă. Выставккăна курма 3.000 çын ытла пынă.



„Жилище и быт“ шкулра вĕренекен Ленин кĕлетки тăваҭ.

Йулашки вăхăтра ђăваш хутошĕствине малалла йама тата ђăваш илемлĕхне ăслăлăх йенђен вĕренме, ђăваш правиттĕлстви Вĕренÿлĕхпе Куђттур Канашĕ çумĕнђе хутошĕствă капинеђĕ(«кăбинет ИЗО») турĕ. Унăн ĕçĕсем виçĕ пайа уйăрăлса тăраççĕ. Ђăвашăн халăх искусствине вĕренсе, ăна тĕрлĕ пурнăçа кŷртесси; халăх хушшинђе хутошĕствă ĕçне сарасси; Виççĕмĕшĕ—искусствă ĕçне тĕрĕс çулпа вĕрентесси. Ђăвашăн халăх искусствине вĕренес йĕркепе ђăваш тумтирсене илемлĕх йенђен тĕпђесе вĕренме тытăнна. Тумтирте мĕнле илемлĕ пайĕсем, тĕрĕсем, тата ытти йапаласем мĕнле курăннипе тата çурт-йĕр çинђе мĕнле илемлĕхсем, тата килти савăт-сапана ђăваш мĕнле илемлетнипе тĕрĕслеме пуçланă. Халăх хушшинђе хутошĕствă ĕçне сарас йĕркепе хутошĕствă капинеђĕ, хутошĕствă выставккисем туса иртерет. Кăçалхи выставккăна шутламасан, капинет уçăлнăранпа, виçĕ выставккă пулаҭ. Пĕри пĕлтĕр çуркунне шкулта вĕренекенсен ÿкерђĕкĕсемпе вĕрентекенсен карттинĕсене пухса выставккă тунă. Ку выставккă тăрăх шкулта хутошĕствă ĕçĕ мĕнле тăни лайăх палăрђĕ.



„Колхосра" М. Çпиритонăвăн сăрăпа ӳкернĕ карттинĕ.

тменлĕхĕсем те нумай курăнҫĕç. ИЗО капинеҫĕ çак ıстăвккăна вĕренсе, ĕçе мĕнле малалла йарасси нҫен тĕрлĕ проектсем йышăнҫĕ. Выстăвккă пĕтсен ıстăвккăри йапаласене, ӳкерҫĕксене йĕркелесе вытан вырăна куçса çӳрекен хутошĕствă выстăвкки рĕ. Вăл выстăвккă кăçал Республĕк тăрăх шкултан ула куçса çӳрерĕ. Халĕ ҫăваш автономийĕн вунă лхи йупилейне асăнса, хутошĕствă капинеҫĕ ҫылай сăк карттинсем пухса хутошĕствă выстăвкки тăĭ. Ку выстăвккă пирĕн хутошĕствă ĕçĕ вунă çул шшинҫе мĕн ҫул çитĕнӳсем пулнине палăртаĭ. Выстăвккăра ҫылай карттинсенҫен ҫăваш хуçалăхĕ ушкăнлă хуçалăхсем çинелле туртăнни курăнаĭ. Карттинсемсĕр пуçне тата выстăвккăра тĕрлĕ производствăра мĕнле племлĕхсем пурри курăнаĭ, кĕпекехаçатсем çинҫе мĕнле карттинсем пулни тата ҫăваш тĕррисем тĕрлесе йут патшалăха тавар туса йани те курăнаĭ. Çак хутошĕствă ĕçĕ, карттин çырас ĕç пирĕн питĕ çамрăк теме йураĭ. Çак йулашки çулсенҫе çех ҫăваш ĕçхалăхĕ хăй автономи туса хăйĕн кулҫтурлăхне хăпартса çак ĕçе те малалла тапратса йаҫĕ.

**М. Спиритонăв.**



„Вăйă" Сверҫков хутошнĕкĕн сăрласа тунă карттинĕ.

# „АХӐРСАМАНА“

ЛАШМАН

## 4 ПАЙЛӐ САТТИРӐЛЛӐ КОМЕТИ.

2-мӗш пайӗ.

Теккоратсн пӗрӗмӗш пайрийех.

I.

Кӗрлет, шавлат йал пухӑвӗ. Такам та пур кунта. Ларнӑ. Хӑшӗ тӑнӑ. Хӑшӗ пушар сарайӗ ҫине хӑпарса тирӗннӗ. Хӑшӗ пусма ҫинђе тӑраҫҫӗ. Пурте хӗвелҫавӑрӑнӑш кӑшлаҫҫӗ.

Тӑрлав Ваҫки, Кӑнихват Йаркейӗв, Пыркков-Пушкӗн, йалсовет пуҫлӑхӗ Лыккӑв малта, курӑнмалли ҫӗрте сӗтел хушшинђе ҫырса лараҫҫӗ.

ИҪМАССА ХВЕТӖРӖ. Иҫмасса сан калаҫмасан та йурамалла, и неђђӑхӑ пӑтратса ҫӳреме. Каланӑ сана пӗрре: ану ҫинђе санӑн ђулсем ӳсеҫҫӗ, тесе, и неуштӑ есӗ манпа тавлашашшӑн? Иҫмасса!..

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Оппшатех тӑвасшӑни ӗнтӗ есӗ мана?.. Не моошет пыт тохо... Ес, Иҫмасса, итлеха, ухмахӑн кӑмака ҫинђе аксан та пулат, темеҫҫӗн-ха? и ҫавӑнпа та ђулсем ӳсни ҫинђен калапи тӗрӗс мар, и тата калӑттӑм та...

ИҪМАССА ХВЕТӖРӖ. И ан калаҫ та ӗнтӗ иҫмасса, никкак ӗненес ҫук епӗ ҫав сирӗн ушкӑнпа пурӑнсан, лайӑхраххине и не мошет пыт тохо... Трактӑр! Мӗн вӑл трактӑр?! Курнӑ-илтнӗ ҫын пури ӑна? и не мошет пыт вӑл потхоташђи... Ҫӳретӗр хӳресӗр автан пек сиккелесе...

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Неђђӑхӑ санпа пуплеме.—Есӗ ху та хӳрс пӗҫертнӗ кушаках и неђђӗхӑ манпа тавлашма.

ИҪМАССА ХВЕТӖРӖ. Автан!

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Тӑмҫамка!

ИҪМАССА ХВЕТӖРӖ. Хӳресӗр автан!

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Есӗ ху хӳресӗр автан. Калаҫмастӑг епӗ санпа. Тоовољнӑ. Автан мар санпа кунта пуху ҫинђе лӑркама.—Шатун!

II.

ТӐРЛАВ. Ей, Йаркейӗв, кам унта пире пуху тума кансӗрлет... Вҫат вҫех поот сумленийе.

ЙАРКЕЙӖВ. Слушайу! Йест—поот сумленийе... Паранкӑ Куҫми, Иҫмасса Хветӗрӗ, иксӗр те арестовӑн! Марш мунђана...

ИҪМАССА ХВЕТӖРӖ. Не мошӗт пыт тохо... Кунта епӗр хӗлхемсӗрех ҫупатпӑр та, есӗ мунђана...

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Хаљ самӑй питерес пуҫланат те, кайатпӑри вара мунђана.—Никкак не сокласҫӑн.

ЙАРКЕЙӖВ. Итлемеҫҫӗ, йулташ Тӑрлав...

ТӐРЛАВ. Мӗнле итлемеҫҫӗ?! Халех раскулађђӗт!.. Йаркейӗв!—раскулађђӗт... Ей, ҫынсем, исполниттӗлсем! Пурте Йаркейӗв патне.—Халех имущђествине кунта!

ИҪМАССА ХВЕТӖРӖ. Апла пулсан кунта сывлама та манер ҫук. Вӑтӑр ҫул шухӑшланӑ шухӑш та сайах кайат.

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Апла пулсан, пыр шӑтӑкӗсене те питӗрсех лартмалла. Не моошет пыт тохо. Епӗр тата колхоса хирӗҫ те мар. Епӗр атӑ ертелӗ тӑвасшӑн.

ТӐРЛАВ. Хирӗҫ мар! Как хирӗҫ мар? Хирӗҫ мар пулсан, вҫеровно хирӗҫ пулатӑр. Раскулађђӗт, неђђӑхӑ унта пӑхма. Йаркейӗв!.. Илсе кай та, хӑйсене мунђана. Пурлӑхне кунта. Пилӗк минутра тунӑ пу тӑр. Ҫӗлеђђӗр унта атӑ ерттелӗнђе атӑ-пушмак.

ЙАРКЕЙӖВ. Слушайу... Ну, шакӑм марш!..

(тухса кайаҫҫӗ)

III.

СТАРИК. Ну, как еп сокласҫӗн-ха? Ниҫта та ка мастӑн, пӳрнесенех илетӗп... Ну хӑшӗ тан-ха? Ак пысӑк пӳрни темле пуклак, акку кунтан вӑрӑмрах, ш вӗр пӳрни—шӗвӗр, кађапӳрни каллех кунтан кӗскере Неуштӑ вӗсене танлаштарма май пур?! Никкак сооклаҫҫӗн.

ТӐРЛАВ. Кам унта несооклаҫҫӗн тата?

СТАРИК. Вӑт епӗ кунта пӳрнесем пирки.

ТӐРЛАВ. Пыркков-Пушкӗн! раскулађђӗт... Ҫи минуту...

СТАРИК. Вӑт пыр та калаҫ... Ахаљ каламан пу ҫав—нумай пӗл те сахалтарах калаҫ, тенине...

ПЫРККОВ-ПУШКӖН. Хайне мунђана-и?

ТӐРЛАВ. Мунђана и самӑй сиввине...

ПЫРККОВ-ПУШКӖН. Ак сана мӗн калам, стар Нумай пурӑннӑ есӗ тӗнђере, сухална ӳстернӗ п аршӑн, ҫапах тӑрри санӑн питӗрӗнсе ҫитмен-ха. А слушай-ка пӳрнесем пирки. Ђӑмӑрта-ха ман п аллуна. Ну, пу ђӑмӑрта. Ђӑмӑртарӑни? Вот ҫап Халӗ пӑх (Аллине ђӑмӑртат те хӑйне хӑй айакпӗрђи ђен ҫапат) Куртӑна?! Кӳмп! ҫеҫ турӗ. Йӑвансах к йаттӑм. А есӗ тап мар, тетӗп. Тан вӗсем пурт туљккӑ танлаштарма пӗлес пулат вӗсене. Ҫавӑн п кех хамӑр та, уйрӑмӑн илсен ним те мар, а коллект ва ҫырӑнха, никам та ҫӗнтерес ҫук. Ну хаљ ӑпла тӑна?

СТАРИК. Ӑнланмасӑр, хаљ ӑнлантӑм ӗнтӗ. С такҫанах ҫапла каласа памаллађђӗ.

ПЫРККОВ-ПУШКӖН. Ну, халӗ ата мунђана, ун тата лайӑхрах ӑнланатӑн. Ха-ха-ха!

СТАРИК. Пирвайлӑха каҫарма та йурат пулӗ ӗн

ПЫРККОВ-ПУШКӖН. Ата, ата, унта каҫарӗҫ. Н исполниттӗлсем, атӑр есӗр те виҫҫӗн-тӑваттӑн.

(Тухса кайаҫҫӗ. Хирӗҫ Йаркейӗвпа исполниттӗлс ҫӗтӗк-ҫатӑк, ђашӑк-ҫапала ҫӗклесе кӗреҫҫӗ. Унт Пыркков-Пушкӗн те кӗрет).

IV.

ЙАРКЕЙӖВ. Иҫмассапа Паранкӑна раскулађђӗт рӑмӑр. Йапалисем акӑ кунта.

ТӐРЛАВ. Йурат. Йапаласене кунталла, малалла к се пӑрахӑр. Ҫав кӑнан вӗсен пурлӑхӗсем? Пыта пуљ вӗсем. Лайӑхрах шырамаллађђӗ.

ЙАРКЕЙӖВ. Никак нет... Урӑх нимте хӑварма мӑр. Кушаккайӑк шӑтӑкӗсене те пӑхрӑмӑр. Ҫук.

ТӐРЛАВ. Ну йурат.

V.

ТӐРЛАВ. Ну, халӑхсем, вӑхӑт иртрӗ. Шухӑш маллине шухӑшласа пӗтермелле ӗнтӗ. Ну кам ко хооса кӗресшӗн... Никам та кӗресшӗн ҫук?

ХАЛАТ. (Мала тухса) Мана сӑмах парӑр-ха? Ма сӑмах парӑр-ха? Мана калама йурати?

ЂУХАН. Лишшеннӑйа калама йурамаст. Ан па ӑна сӑмах. Емӗр ӗнсене кӑшланӑ та, халӗ те тата ҫитӗ!

ХĂЛАТ. Кам, еп лишшонңăйн?! Ман аттесем, асаттесем лишшонңăй пулман та, еп пулапи? Лайăх мар, лайăх мар çапла суйма...

ТАРЛАВ. Кам унта тата сăмах калаĕçшăн? Сăмахсем калама вăхăт иртнĕ ĕнтĕ. Ес хирĕçи?

ХĂЛАТ. Каккуй таккуй хирĕç? Уншаçи турă. Епĕ икĕ аламна йышăнатăп колхоса и турăран килнĕ çăлăнăç пекех хапăлласа илетĕп ăна...

ТАРЛАВ. Вăт аслă çын! Тÿрех калас пулаť, колхооса суйламалла ăна.

ЂУХАН. Вăл усламçă, кулак. Ăна лишшит тунă...

ТАРЛАВ. Кам лишшит тунă? Ну, лишшит тунă пулсан та, çавăн пек лайăх сăмахсем калаңăшăн сасă хамах паратăп.

ХĂЛАТ. Еп соклаççĕн, соклаççĕн... Ну, тăвансем, (халăха), саванăçлă вăхăтсем çитрĕç. Пирĕн пурин те коолхоса кĕрсе сотсиалисăм тумалла. Анђах еп каласшăн... коолхос мар пирĕн тăвас...

ТАРЛАВ. Што?!

ЙАРКЕЙЕВ. Што?!

ЛЫККАВ (çинђе сасна). Што?!

ХĂЛАТ. Колхос мар пирĕн тăвас... комун тăвас пулаť, и пултăр пирĕн сотсиалисăм мар...

ТАРЛАВ, ЙАРКЕЙЕВ, ЛЫККАВ. Што?!

ХĂЛАТ. И пултăр пирĕн сотсиалисăм мар... тÿрех комунисмă...

ТАРЛАВ, ЙАРКЕЙЕВ, ЛЫККАВ. Ха-ха-ха Вăт маттур... Пултараť ку çын...

ХĂЛАТ. Ну, тăвансем, кам хирĕç? Конешнă хирĕççи тупăнас çук. И хам йенђен калатăп тата: арăмăн хушшу пурђĕ и çав хушнува комун йађĕне паратăп. Ака илĕр...

ТАРЛАВ. И комун йађĕне тав сире. Ну, кам комуна хирĕç? Хирĕççи çук? Апла пулсан, комун тунă тесе шутлатпăр.

ЂУХАН. Еп соклаççĕн мар. Çав Хăлатпа пĕрле нийепле те комуна кĕрес çук.

ТАРЛАВ. Кам унта? Йаркейĕв! вçаť пот сумлĕнийе...

ЙАРКЕЙЕВ. Арестован! Мунђана!

ЂУХАН. Анђăк çури!

ЙАРКЕЙЕВ. Айта, айта...

(Тухса кайаççĕ, хирĕç исполнителсем йапаласем çĕклесе кĕреççĕ).

ТАРЛАВ. Комун тунă пирки, йулташсем, епĕ сире халĕ салам калатăп. Салам сире, комунарсем! Ђунуйу минуту епĕ сире хатĕр пулăшма. Но, тољкă епĕ кăђт шăхăрсан коттăвă пулăр...

ПЫРККОВ-ПУШКЕН. Йалан хатĕр... Ура! Ура! Ура!

ТАРЛАВ. Саламлă сăмахсем хыççăн йалан ура! кăшкăрмалла. Ну, аťăр-ха, манпа... Ура! (х ă ш ĕ - п ĕ р и  к ă ш к ă р а ç ç ĕ). Хытăрах кăшкăрмалла. Ăçтаха çав Йаркейĕв? Вăл кăшкăраканђђĕ. Йаркейĕв!..

ЙАРКЕЙЕВ (ђ у п с а  к ĕ р с е) Йа!

ТАРЛАВ. Кăшкăрха комун йађĕне Ура! Ура!

ЙАРКЕЙЕВ. Ура! (П у р т е  к у л а ç ç ĕ).

ТАРЛАВ. Вот молотсом...

ЙАРКЕЙЕВ. Рат старатсă...

ТАРЛАВ. Апла пулсан, комун правленийĕ суйлама пуçлăпăр. Кун пирки кăнтитатсем те тен пури?..

ХĂЛАТ. Какшĕ? Такçанах шутласа хунă. Есĕ ху, Йаркейĕв, Çăрттан Çитарĕ, ну хĕрарăмран кам активис, ну Çветтуй вота шывĕ—çавна суйлас. Ну пиллĕкмĕшне хăвăр суйлăр. Епĕ хам правленийе кĕресшĕн мар.

ТАРЛАВ. Кăнтитатсем лайăх. Хам епĕ—йертсе пыраканни, Йаркейĕв—управљайушђи, Çăрттан Çитăрĕ—пролеттари, хĕрарăмĕ те—пролеттаркă... Мĕн кирлĕ тата?! Пит лайăх. Пиллĕкĕмĕшне епĕ çак йалсовет пуçлăхне Лыккăв йулташа суйлаттарасшăн...

ЛЫККАВ. Çук, çук, ан суйлăр, тархасшăн. Епĕ халĕ йалсоветђĕне те аптăравă.

ТАРЛАВ. Нињђахо. Унта пулăшăпăр.

ЛЫККАВ (а л л и н е  ç е ç  с у л а ť). Унта куç шарпарит тунăђђĕ, савĕнсе каймашки?! Аťăрха перерыв тăвар...

ТАРЛАВ. Хаљ перерыв тума йурамасť... Отменит ту куçне. Кайарах. (Л ы к к ă в  т у х с а  к а й а ť). Ну кам хирĕç ку кăнтитатсене? Хирĕççи çук. Çапла, комун правленийе суйланатпăр: епĕ, Йаркейĕв, Çăрттан Çитăрĕ, хĕрарăм Сăпани, тата Лыккăв...

ПЫРККОВ-ПУШКЕН. Ал̆ă çупăр, хăвăртрах аллă çупăр (х ă ш ĕ  п ĕ р и  а л ă  ç у п а ç ç ĕ).

ТАРЛАВ. Шавса суйланăшăн тав. Мĕнле есĕр пирĕн çинђен лайăх шутласа, сумасуса суйланă, çавăн пекех епĕр те сире ырă тăвăпăр. Халĕ «Çăпата» йурри йурлама ыйтатăп.

ПЫРККОВ-ПУШКЕН пуçласа йараť, ун хыççăн пурте Çăпата йуррине йурлаççĕ...

ТАРЛАВ... Тăвансем! ђăтаймастăп... ђунăм çĕрçирĕм пайа çĕмрĕлсе кайрĕ. Мĕнле илем, мĕнле кĕвĕ! епĕр пĕр çын пек ушкăнласа йурласа комунисăма Пĕтĕм пирĕн илемлĕх пухăнсă кунта. Мĕнле илемлĕн куçатпăр. Еп сисĕтĕп ăна, еп туйатăп. Тăвансем! Есĕр пĕлетри еп кам иккенне: йа вĕт йа, йа вышшĕ ђентра, и сам йа вышшĕ сута йа, РСФСР!!! Тăвансем... (халран кайса ÿкет, унтан тăраť те каллех сăмахлама пуçлаť)... Йа вĕт йа, йа вышшĕ ђентра... йа РÇХÇМÇ-РРР!!!

ЙАРКЕЙЕВ. Йĕрĕр, тăвансем, йĕрĕр. Таса куççулĕ вăл ђĕрене тасатаť. Тăвансем, çĕнĕ пурнăçа куçрăмăр, (й ĕ р е т). Йурлăр тепĕр хут Çăпата йуррине. (х у л л е н  ç е ç  й у р л а ç ç ĕ  ç ă п а т а  к ĕ в в и н е).

VIII.

Шăппăн çеç пырса тăраť Хăлат Тăрлав çумне. Ун хыççĕнђен Ђĕрĕ çветтуй пыраť. Пурте пăхса тăраççĕ.

ХĂЛАТ. Тăр, тăр аслă тÿрĕ. Еп сире шђеттовоот та хатĕрлерĕм. Шут йенђен халĕ хăрамалли ним те çук. Пит те аккуратнăй шђеттовот.

ТАРЛАВ. Ах, ан кансĕрле-ха. Пуç çаврăнса кайрĕ. Пар пăртак канма. Çĕр прођђăнĕпех вĕт коомуна, çĕр прођђăнĕпех! Не тарăм епĕ вышшĕ ђентра. Еп, еп Тăрлав Васки тĕнђе питне улăштаракани! Йа тиффиринтсиалнăйша интекраљнăй уровненийлĕ койе-фит-тсент! Ент!—епĕ. Вот кам епĕ.

ХĂЛАТ. Тĕрĕс, тĕрĕс. Имĕнна: ент! есĕ—А шђеттовоуђĕ кĕтет вĕт. Комунра шђетовотсăр пулмалла мар.

ТАРЛАВ. Пуç çаврăнинă сурăх пек ĕнтĕ епĕ халĕ. Ним те ăнланаймастăп. Ну, калаха, ђипертерех.

ХĂЛАТ. Шђетовоуђĕ кĕтет, тетĕп.

ТАРЛАВ. Ăçта, мĕнле шђетовот?

ХĂЛАТ. Акă Ђĕрĕ çветтуй шђетовоот пуласшăн.

ТАРЛАВ Пупи?! Кирлĕ мар, кирлĕ мар. Комунра нийепле пуп та пулмасť.

ХĂЛАТ. Çакăн?! Пуп мар вăл, пуп мар. Ăна хĕрарăмпа та танлаштарма йураť. Пупăнни унăн вăрăм çÿç те, вăрăм тумтир çеç. Йăваш пуп вăл, йăваш. Çÿçне те халех кастараť вăл. Çапла и Ђĕрĕ Çветтуй?

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Такçанах епĕ соклас. Çÿçе те кастаратăп, вăрăм тумтире те хывтаратăп. Ку çеç мар-ха, йаљейкă песпошнĕк те тăвăп-ха.

ТАРЛАВ. Ха-ха-ха! Вăт так пуп. Ку шăпах пирĕн йышши. Йаркейĕв, хађă...

ЙАРКЕЙЕВ. Акă (пысăк хађă кăларса парат).

ТАЛРАВ. Ха-ха-ха! Касатăн, халăхсем. Касас-и?

ХАЛАХ. Кас, кас! Ҫӳҫĕне пĕрле хăлхине те, сăмсине те.

ТАРЛАВ. Касатăп сипин. Во имĕ отса и сына... (касат). Ну пăхăр халĕ. Лайăх-и? (кăтартат).

ХАЛАХ. Ха-ха-ха!

ХАЛАТ. Ђĕрĕ ҫветтуй, хăлăртрах ҫаврăнкаль, хăвăртрах, савăнтăр халăх. Ха-ха-ха!

ТАРЛАВ. Ха-ха-ха! Йаркейĕв, халĕ хывса ил ђылпане те тумлантар ху пеке.

ЙАРКЕЙЕВ. Слушайу (тумлантарат, пурте ахăлтатса кулаҫҫĕ).

ТАРЛАВ. Ес, Пырккова-Пушкĕн, ҫĕнĕ шђетовота шђут илсе килсе пар.

ПЫРККОВ-ПУШКЕН. Акă хађ ҫеҫ илсе килтĕскер. Ме тыт хăвăн хатĕрне.

ТАРЛАВ. Халăхсем, йураĭи, шђетовот?

ХАЛАХ. Йурат, йурат, пит те лайăх шђетовоот. Ха-ха-ха! (кулаҫҫĕ).

IX.

ТАРЛАВ. Ну, халĕ ђаксене шыре! Турăсене ҫунтарма! Тăрса тухăр пишерĕн. Йаркейĕв!

ЙАРКЕЙЕВ. Слушайу. Становиҫ! Равнђайҫă! Коттовă...

ТАРЛАВ. Йулавут мана. Епĕ ҫар пуҫлăхĕ. Пурте ман хыҫҫăн, малалла, малалла! Ес, Йаркейĕв, хыҫалтан... Ҫмирнă! Шакăм мăрш! (пурте тухаҫҫĕ, хыҫалтисем тараҫҫĕ, Йаркейĕв иккĕшне тытат).

X.

ЙАРКЕЙЕВ. Арестовăн!

1-мĕш ХЕРАРАМ. Хурах! Вĕлереҫҫĕ! Пусаҫҫĕ!

ЙАРКЕЙЕВ. Арестовăн.

ХРЕСЂЕН. Укахви, мĕн ҫухăран, арестованнăй ђух ăна ҫухăрмаҫҫĕ, йĕркине пĕлместĕн.

ЙАРКЕЙЕВ. Рукки верх. Ҫапла, ҫапла. Есĕ Укахви, ҫапла ҫĕкле аллусене. Халĕ коолхос мар, комун ĕнтĕ. Ĕн сире. Сивĕ мунђана шакăм марш! Ăпла мар, апла мар. Кунталла. Есĕ, Укахви, сулахай аллупа мар... Тфу, шивой шуйттан, аллупа мар, урупа утма пуҫла... Ну, ҫĕнĕрен... Сивĕ мунђана марш! Останит... (вĕрентет, вĕрентсен, вĕрентсен ђукма вĕрентет). Сивĕ мунђана некоом марш! Не так, не так... Стой... Сликурий... Сивĕ мунђана шакăмпа некоом марш!

(Ђунса тухса кайаҫҫĕ).

XI.

Хăлатпа Ђĕрĕ Ҫветтуй кĕреҫҫĕ.

ХАЛАТ. Ха-ха-ха! Вĕрентрĕ вĕт, шеремет, вĕрентрĕ салтакла. Ахаҫ кылмаҫ иккен упана та ташлама вĕрентме пулат, тесе. Ха-ха-ха! Ес итле-ха, Ђĕрĕ Ҫветтуй. Есĕ итле... Епĕр шутланипђен те лайăхрах пулса пырат. Ха-ха-ха!.. Хађ ĕнтĕ епĕр сиат не сайĕм селский пеђђат, тавай пире исполкомран... Ха-ха-ха! С корпиĕм толой!

ЂЕРЕ ҪВЕТТУЙ. Сат-та-на управ-лениĕ! У мерсантсăсем.

ХАЛАТ. Такамсем килеҫҫĕ. Айта...

(Шăппăн ђунса тухаҫҫĕ)

XII.

Тин ҫеҫ ђĕркӳ йенне кайнă томонстратси хыҫҫăн хĕрарăм томонстратсиĕ ђунса иртет. Малта Ҫветтуй Вота шывĕ.

ҪВЕТТУЕ ВОТА ШЫВЕ. Хĕрарăмсем, карђăксем, турăшсене ҫунтарма тытăннă унта, ђаксене касса антараҫҫĕ. Памастнăр антихриссене турă ђиркӳне пăсма...

ХЕРАРАМСЕМ. Памастнăр, памастнăр... Вута пăрахас хăйсене. Тĕп антихриссене тытас.

ҪВЕТТУЙ ВОТА ШЫВЕ. Ђупатнăр, пикесем... (Пурте ђупса иртеҫҫĕ. Хыҫалтан карђăк)

КАРЂАК. Ҫавсĕр-ҫунатсăр, хăй тĕллĕн ҫăмахпа кукăђ авăртакан арман ҫумне пырса тăнă, тет. Хăйĕн шђăсем хăнтăла пек хĕпхĕрлĕ, тет. Шыҫмак куђĕпеле йăкăлт-йăкăлт сиккелет, тет. Ҫăкăртан та аслă, тет ҫынни. Лапра Унашасипђен тухнă, тет йăтăнса. Каҫар пирĕн ҫылăхсене Пихампар. Пĕсмĕлле, пĕсмĕлле. Иртсе кай пиртен усал есрел.

XIII.

Хут купăспа ҫĕмĕрттерсе кĕрет Ҫарттан Ҫитăрĕ.

ҪАРТТАН ҪИТАРЕ.

Пиђђе лаши кăвак лаша,
Кăвак ҫутђен ђупсан та,
Пиђђе мана йатлас ҫук...

Ей, кулђай, нашша сторона! Ҫарттан Ҫитăрĕ хăй ĕҫне тăватех... Ахађ ĕҫтермеҫҫĕ ăна Хăлатсем...

Ҫăварни ҫуни ҫут ҫуна,
Ҫутти йултăр ҫул ҫине...
Манăн пиђђен ырă йат,
Пађĕ йултăр йал ҫине...

Ей, кулђай, нашша сторона... (пăххалат пикамта ҫук).

Самăй вăхăт... (Шăрпăк кăларат те пушар сарайĕн пĕр кĕтессине вут ђĕртет. Сиксе тăрат те ђупса тухат. Ҫухалђĕ).

XIV.

Ялсовет пуҫлăхĕ Лыккăв кĕрет.

ЛЫККАВ. Куҫ шаршарит тунă. Шăп ҫиме вăхăт ҫитнĕ... Пайђушки, маттушки! (пăххалат) Хурах! Пушар сарайне вут тинĕ. Хурах! (Ђунса тухса кăшкăра-кăшкăра тарат).

*Кометин 3—4-мĕш кайăсем „Сунталăн" ҫитес №-рĕнђе пулаҫҫĕ.*

---

„Смыђкă" комети пирки сăмах хускатнă май „Сунтал" ретаксийĕ Ђăваш кометтийĕсем ҫинђен тĕплĕрех сӳтсе-явма сĕнет. Сăмахран акă ăраснах Лашманăн „Ахăрсамана" кометине крушоксенђе вуласа тухса тишкерме ђĕнетпĕр.

# Ҫăваш литтературĕ 10 ҫул хушшинҫе.

Пурнăҫри хăш пĕр фактсене илсе пăхар.

1. Револҫутсиҫҫен ҫăвашсен илемлĕ литтературă тĕлĕшпе ҫак кĕнекесем тухнă: 1) „Сказки и предания чуваш" (1908 ҫ). Кунта виҫĕ поет произведенийĕсем кĕнĕ К. В. Иванован, Шупуҫҫыннин, Фетăрăвăн. («Арҫури» пуҫламĕшĕ). 2) „Бросьте пить водку и курить табак" (1911 ҫ). Кунта Шупуҫҫыннин 7 произведени кĕнĕ. 3) Йуркка Иванĕн пĕҫĕк калавĕсем (кусен шутне те йаҫĕсене калама пултараймастпăр. Хаҫхи вăхăтра нисҫта та курăнмаҫҫĕ вĕсем). 4) Полоруссăвăн: „Предания чуваш взятии Константинополя"

Ҫакăнта кăтартнă кĕнекесем вĕсем пурте пĕҫĕк кĕнекесем, пĕтĕмĕшпе илсен вĕсен пысăкăшĕ тем 10 листаран та ытлах мар. Тĕрĕссипе каласан револҫутсиҫҫенхи пĕтĕм илемлĕ литтературăна, «Хыпар» хаҫатра ҫапăнса тухнă произведенисемпе, вырăсларан куҫарнисемпе пĕрле, пĕр кăсйене ирĕккĕнех шăнăҫтарма пулаҭ.

2. Револҫутсин малтанхи ҫулĕсенҫе тухнă кĕнекесем те йышлах мар: «Иҫук», «Пуйан Карук», «Вăхăтсăр вилĕм», «Колҫак», Лашманăн кектокрăфпа ҫапăннă «Лешхайхисем».

Кусем пурте револҫутси вăхăтĕнҫе ҫырăнса ҫав 1919—20 ҫулсенҫе ҫапăнса тухнă кĕнекесем. Листапа илсе шутласан вĕсем те нумайах мар. Тĕрĕссипе каласан кусене те, вăл вăхăтра вырăсларан ҫапăннисемпе пĕрле илсен, икĕ кăсйене аванах вырнаҫтарма пулаҭ.

3. Ҫăвашсен илемлĕ литтературă произведенисене йышлăн, массăллă пиҫетлесе кăларасси автономи илнĕ хыҫҫăн тин вăйланса кайаҭ. Кунта вăл икĕ йĕрпе пыраҭ: пĕри—Ҫăвашкис урлă, тепри—хаҫат-шурналсем урлă. Кайарахпа кунта тата тепĕр вăйлă истаттĕлствă хушăнаҭ. Ку—Мускаври Тĕпистат.

Ҫăвашкис, урлă мĕн ҫухлĕ ҫапăнса тухнисене пĕлес тесен епĕр уйрăмăн кăларнă спорнĕксен автăрĕсен йаҫĕсене анҫах асăнатпăр; Ваҫанкка (2 спорнĕк), Хусанккай, Елкер, Рсай, Шăпҫăк, Трупина Мархви, Шупуҫҫынни, Шелепи, Лашман, Етмен, Пайраш, Йевкрафăвă, Паймен, Йуман, Хумма Ҫеменĕ, Алентей, Оҫҫĕпăв, тата ыт. те. Пĕрлештерсе кăларнă спорнĕксем: «Хĕрлĕ сăнă», «Ҫĕнĕ хунавсем».

Мускавра тухнă кĕнекесен автăрĕсем: Викторов, Танилăв, Ҫеменăв, Курак, Краснов, Орйĕв, Шупуҫҫынни, Хусанккай, Таҫук, т. ыт. те.

Ҫаксем пурте орикиналлă произведенисем. Куҫарнисене те шутласан ҫак кĕнекесем ҫумне йепле пулсан та 2—3 хут ытла кĕнекесем хутшăнаҫҫĕ. Истатĕлствă ĕҫĕ ҫапла вăйланса пыни пирĕн ҫăваш литтературă айне тĕреклĕ никĕс хывса пыраҭ.

Анҫах ҫапах та хаҫхи вăхăтра ҫăваш литтературĕн ӳсĕмĕ уйрăм кĕнекесем кăларни урлă мар, вăл „Сунтал" шурнал урлă пулса пыраҭ. «Сунтал» уйăхне пĕрер тухса пыраҭ. Кашни нумĕрĕнҫе вăтамăн 4-шар листа шутласан ҫулталăкне вăл ҫăваш ĕҫхалăх хушшине сахалтан та 48 листа литтературă протукси салатса тăнине куратпăр.

«Капкăнта» ҫапăнакан материалсенҫен ҫурри ытла литтературăллă произведенисем. «Капкăн» урлă кулăшла литтературă ҫуралса, ун урлах ҫитĕнсе ҫитет. Вăтамăн шутласан «Капкăнăн» пĕр нумĕрĕнҫе литтературăллă произведенисем пĕр листаран кайа мар тухса тăраҫҫĕ, темелле. Ку калле ҫулталăкне 20—24 листа параҭ.

Кусемсĕр пуҫне тата «Канаш», «Ҫамрăк колхоҫнĕк», «Хатĕр пул» тата ытти хаҫат-шурналсем урлă литтературăллă произведенисем нумай ҫапăнса тухаҫҫĕ. Кусем те пирĕн литтературăна шут йенҫен нумайлатаҫҫĕ.

Кунтах тата шкулсем валҫи тухакан хрестоматтисене, тата Хусанта тухса тăракан «Утăм» алманаха илсен пирĕн литтературăн истаттĕлствă никĕсĕ ҫак йулашки 10 ҫул хушшинҫе питĕ те ҫирĕпленсе, аслăланса пынине куратпăр.

Револҫутсиҫҫенхи пĕтĕм литтературăна пĕр кăсйене вырнаҫтармалла, револҫутси хыҫҫăнах 2—3 ҫул хушши тухнă литтературă икĕ кăсйере шăнăҫмалла пулнă пулсан, автономи пуҫланнă хыҫҫăнхи литтературă хăй ҫинҫен пăртак хисеплĕрех калаҫма ыйтаҭ. Паллах, ҫак хисеплĕхе туйанма ăна пуринҫен ытла автономи пулăшрĕ.

Шут тĕлĕнҫен пирĕн литтературăн ӳсĕмĕсем ҫавăн пек.

Писсаттĕлсен йышне илсе пăхăпăр. Револҫутсиҫҫенхи писсаттĕлсене епĕр пĕлетпĕр, вĕсем К. Иванов, Шупуҫҫынни, Полоруссăв, М. Фетăрăв, Йуркка Иванĕ. Револҫутси хыҫҫăн кусен ҫумне Ахах, Тал-Мăрса, Ҫеҫпĕл Мишши, Ваҫанкка, Тăхти, Хумма Ҫеменĕ, Елкер т. ыт. те хутшăнаҫҫĕ. Иккĕмĕш тапхăрта писсаттĕлсен шуҫĕ ытларах пулсан та, вăл вăхăтри литтературăна, унта ĕҫлекенсен йышне илсен, массăллă литтературă теме май ҫук.

Массăллă литтературă, ҫăннипе, «Канаш» Сойусĕ тавра аталанса пыраҭ. 1924-мĕш ҫулҫҫен, «Канаш» Сойусĕ пуҫланаҫҫен, литтературă ĕҫне никам та йĕркелемен, ăна халăх хушшине сарас ĕҫе планпа илсе пыман, ĕҫхалăхне хăйне вăл ĕҫ ҫумне хутшăнтарассине те никам та туса пыман. Литтературă ĕҫĕ ăна йуратакан уйрăм ҫынсен ĕҫĕ пулнă, вулакансен масси те, йертсе пыракан пулман пирки, хăйне тĕллĕн литтературăпа ҫыхăнса тăнă. Кĕскен каласан, вăл вăхăтри литтературăн ӳсĕмĕ ҫтихийлă ӳсĕм пулса пынă.

«Канаш» сойусĕ пуҫлансанах хăй умне лартнă пысăк сатаҫсенҫен пĕри литтературă ĕҫне массăллă ĕҫ туса йарасси пулҫĕ. Ку тĕлĕшпе вăл икĕ йенпе ĕҫлерĕ: пĕри—литтературăна халăх хушшине сарасси, тепри—литтературă валҫи кăтăрсем ĕҫхалăх хушшинҫен нумайран нумай кăларса пырасси. Ҫак икĕ ĕҫе «Канаш» сойусĕ (хаҫхи вăхăтра ҪППА) тивĕҫлĕн туса пыҫĕ темелле. Пирĕн илемлĕ литтературă ҫăнах та массăланса пыраҭ. Ҫăвашкис кăларнă пĕтĕм литтературăллă произведенисем пĕри те склатсенҫе выртмаҫҫĕ. Ҫылай произведенисем пĕрре кăларнипе ҫитмеҫҫĕ—тепĕр хут кăлармалла пулаҭ.

Писсаттĕлсен йышĕ те ӳсех пыраҭ. Ҫулсерен вулакансемпе ҫыракансем хушшинҫи уйрăмлăх пĕҫĕкленсе пыраҭ. Ҫулсерен ĕҫхалăх масси вулаканĕ те ҫыраканĕ те хăйех пуласси патне ҫывхараҭ. Кăна ҫак фактсемех кăтартаҫҫĕ: 1) ҪППА крушокĕсем ҫулран ҫул нумайланса, йышланса пыраҫҫĕ. Хаҫхи вăхăтра вĕсем 20 ытла шутланса тăраҫҫĕ. 2) Вăтам шкулсенҫе кашни шкулта тенĕ пекех литтературă крушокĕсем ĕҫлеҫҫĕ, вĕсем ҪППА ĕреҫĕсене куҫма кăнтитатсем хатĕрлеҫҫĕ. 3) Ҫулсеренех ĕҫйалкорсем хушшинҫен, майпен ăсталанса пырса, писсаттĕлсем тухса пыраҫҫĕ. 4) Йулашки вăхăтра хапрăк-савăтсенҫе те литкрушоксем органисатсиленме пуҫларĕҫ. Ҫаксем пурте ĕҫхалăхĕн тĕп масси хушшинҫен тухса пырса, пирĕн писсаттĕлсен йышне ӳстереҫҫĕ. Ҫăнах та хаҫхи вăхăтра пирĕн писсаттĕлсен йышне шутласа тухма ҫылаҭ пŭрпе кирлĕ.

Пирӗн литтераттурă массăллă литтераттурă пулса пырат̆. Йыш йенђен пирӗн ҫак паллă ҫитӗнў.

**Пахалăх тӗлӗшӗнђен** те пирӗн курăнмалла ҫитӗнўсем пур. Илсе пăхăпăр малтан литтераттурă формисене.

Ђăваш литтераттурӗ поеҫипе пуҫланнă. К. Иванов, Шупуҫҫынни, Полоруссăв, М. Фетăрăв—ҫаксем пурте поетсем. Ревољутси пулса иртсен те пирӗн литтераттурă поеҫиллӗ литтераттурă пулса ђылайђђен тăђӗ—Ахах, Тал-Мăрса, Ҫеҫпӗл Мишши, Ваҫанкка, Тăхти, Елкер, Хумма Ҫеменӗ—Окт̆апӗр хыҫҫăн ђăваш литтераттурӗне ура ҫине тăма пулăшакансем, ҫаксем те пурте поетсем.

Поеҫи ђи вăйлă формă шутланса тăрат̆, анђах, ҫапла пулсан та, епӗр ђăваш литтераттурӗ поеҫиллӗ литтераттурă анђах пулнă вăхăта ђи ђаплă вăхăт тесе калама пултараймастпăр, мӗншӗн тесен йулашки вăхăт вăл литтераттурă формисем пурте пӗр йенђен пӗр-пӗринпе, тепӗр йенђен опђă пурнăҫӗн тапхăрӗсемпе килӗшўллӗ, виҫеллӗ ҫитӗнсе ҫитнӗ вăхăт анђах пулма пултарат̆. Ђăваш литтераттурӗн вăлвăхăтра пуҫламăшӗ анђах пулнă, ҫавăнпа унăн ђăн-ђăн литтераттурă пулас пулсан урăх формăсем йышăнса пуйанланса пымалла пулнă. Ђаннипе епӗр вăл ҫапла пулса пынине куратпăр та



Ђăваш сывлăхне ҫийекен ђăпта ӗҫӗ.

1919--20-мӗш ҫулсенђе ђăваш литттераттурӗнђе пирвайхи трамăсем ҫуралаҫҫӗ. Пуҫламăш траматтурксем Аккимăв, Йефремăв, Павлăв Ф., Лашман пулса тăраҫҫӗ. Унтан трамăна вăйлантарса йараканни Оҫҫӗппăв пулат̆. Вăл театтăр ӗҫне лайăх пӗлнипе трамăна технӗккă тӗлӗшӗнђен вăйлатат̆. Малалла Максимăв-Кошкински, Хумма Ҫеменӗ, Йалавин, Мраљкка, Айсмăн, Йуман т. ыт. те литтераттурăна трамăпа вăйлатаҫҫӗ.

«Сунтал» шурнал ђăваш литтераттурӗне ҫӗнӗ формă кӗртет—вăл просă («Сунтал» тухађђен просăллă просветенисем «Ӗҫлекенсен сассинђе» те ҫапăннă, анђах нумайах мар). Просă, пирӗн шутпа, ђи аслă формă. Просă пирӗн шутпа, ђи пуйан формă. Ҫавăнпа ђăваш литтераттурӗне просă хутшăннă вăхăта епӗр паллă вăхăт тесе шутлатпăр. Пӗр просă хутшăннă хыҫҫăн анђах ђăваш литтераттурӗ аслăланса, тараланса, пуйанланса пыма май илет.

Просă хăйпе пӗрле кулăшла литтераттурă илсе килет. Кулăшла литтераттурă, пӗтӗмпех „Капкăн“ шурнал урлă ҫитӗнсе пырат̆ тесен те пысăкрах йăнăш пулас ҫук. Кӗске вăхăтрах кулăшла литтераттурă питӗ ҫитӗнсе ҫитрӗ—хăш-хăш пӗлекен ҫынсем каланипе пирӗн кулăшла литтераттурă вырăссеннинђен те питех инҫе тăмаст̆.

Ҫакăн пек ӗнтӗ, кӗскен каласан, пирӗн литтераттурăн формă тӗлӗшӗнђен ўссе пынин историйӗ. Паллах, епӗр кунта кашни формă хăйне май тата пайланса, аслăланса пыни ҫинђен каламастпăр. Тӗплӗрех пăхсассăн вӗсем пирӗн ҫитӗнӗве тата та ытларах кăтартаҫҫӗ.

Темăпа ҫушет тӗлӗшӗнђен те пирӗн ҫитӗнўсем пур. Малтанхи ҫулсенђе пирӗн литтераттурăра (ревољутсиђђенхине илмесен) пуринђен ытла лосăнкла майлă, илемлӗ сăмахлă сăвăсем ђи нумайӑисем пулнă пулсан, хаљхи вăхăтра епӗр конкретлă ыйту илсе ҫырма пултаратпăр. Малтанхи ҫулсенђе епӗр пӗђӗк сăвăсемшӗн те тем пек савăнаттăмăр пулсан, хаљхи вăхăтра епӗр ђылай пысăк поемăсенех кулленхи протукси вырăнне шутласа йышăнма пултаратпăр. Ҫушетсăр сăвăсенђен епӗр пысăк темăллă, аслă ҫушетлă поемăсем патне ҫывхарса пыратпăр—ҫак пирӗн ку тӗлӗшрен пӗрремӗш ҫитӗнў. Ҫак сăмахсенех просă тӗлӗшӗнђен те калама пулат̆. Кунта та епӗр аслă темăллă повӗҫсем, романсем патне ҫывхарса пыратпăр. Ку пирӗн технӗккă тӗлӗшӗнђен туса пынă ҫитӗнўсем..

Анђах пысăк ҫитӗнў пирӗн, технӗккăра мар, итеолокире.

Епӗр литтераттурă ӗҫне сотсиалисăм тăвас ӗҫе пăхăнтаратпăр. Пирӗншӗн литтераттурă илемлӗ йапала кăна мар, вăл ђи малтан усăллă, ӗҫхалăх тăн-пуҫне орканисатсилекен, унăн хавалăхне ҫӗклекен, ăна клас кӗрешӗвӗнђе пулăшакан, сотсиалисăм строиттӗлствинђе йертсе пыракан ăслай. Пирӗн ҫул—пролеттари ҫулӗ. Пролеттарипе пӗрле епӗр сотсиалисăм опшђествине кӗме ӗмӗт тытатпăр.

Литтераттурăна ҫапла ăнланни ђăваш писсаттӗлсене хăйсен творђествине тӗрӗс ҫулпа илсе пыма пулăшат̆. Пӗтӗмӗшпе илсен, ђăваш литтераттурӗ, пӗђђенлӗх шухăш витӗр, шовинисăм витӗр, йеҫҫенинла пуҫа усас шухăш витӗр, меншевисăмла Переверҫӗв теорийӗ витӗр, вак пуршуаллă, кулакла туртăмсем витӗр ҫапăҫса тухса, хаљхи вăхăтра тӗрӗс ҫул ҫине тухса тăђӗ теме пулат̆. Кӗске пурнăҫӗнђех ђăваш литтераттурӗ нумай пурăнса иртерђӗ. Ăна тӗрлӗ йенђен тӗрлӗ йухăмсем тӗрӗс ҫул ҫинђен пăрма хăтланђӗҫ Анђах хаљхи куна вăл сотсиалисăм ӗҫӗшӗн ђăрмав йе сийен пулса тăракан йухăмсене ҫӗнтерсе хăйӗн тӗрӗс ҫулне ҫухатмарӗ. Пайан кунхи ђăваш литтераттурӗ—сотсиалисăм строиттӗлствинђе парттипе рапођђи класăн ҫывăх пулăшаканӗ.

Пирӗн ђăваш литтераттурӗ хăйне уйрăм условисенђе ўссе ҫитӗнет. Пирӗн литтераттурăна вулакан тӗп массăн 95% ҫӗрӗҫӗпе пурăнат̆. Ҫаксенђен танлаштарма ҫук пысăк пайӗ вак-пуршуаллă психолокипе, харпăрлăхлă итеолокипе сăрăнса илӗннӗ. Уйрăм хуҫалăхпа пурăнакан хресђен, хăйӗн пайланса, вӗтелсе ҫитнӗ хуҫалăхӗнђен мӗн пур ђун-хавалӗпе тытăнса тăракан хресђен пирӗн тӗп вулакан пулнă.

Епӗр литтераттурăн пикӗсне пролеттари итеолокине хуратпăр. Ҫак пикӗс ҫинђе пирӗн литтераттурăн ўсӗмӗ, унăн малашлăхӗ. Анђах ҫав вăхăтрах пирӗн литтераттурă протуксийӗн потрепиттӗлӗ харпăрлăхлă итеолокипе пурăнакан хресђен. Иккӗшне ҫыхăнтарма йăвăр, ҫапах та пирӗн литтераттурă вӗсене ҫыхăнтарат̆, мӗншӗн тесен вăл сăнлăхсене, ăнланусене хресђенӗнне илет, ăшђиккине—пролеттаринне, ҫавăн майпа хресђене пролеттари итеолокийенне, харпăрлăха пăрахса сотсиалисăмлă пурăнăҫ йенелле туртат̆. Ҫакă пирӗн ӗҫре ђи йăварри, ђи ответли. Литтераттурăн кӗске ӗмӗрӗнђе епӗр ку тӗлӗшрен ђылай йăнăш турăмăр пулсассăн та,

# ПАЙАНХИ ШУПАШКАР.






Ђаваш автономийӗ уйавӗ тӗлне Шупашкарта ҫӗнӗ польнитса поликлинекка туса пӗтертӗҫ. (Ӳкерђӗкне пӑх).

Пӗђӗк прахутсем тумалли савӑт никӗсне хунӑ.

Пурӑнмалли ҫуртйӗр сахаллине асра тытса, Ҫуртйӗр Копператтивне вӑйлатмалла, тенӗ.

Халӗ хула Совеђӗ 20—шер хваттерлӗ ҫуртсем туса пӗтерет. Шкулсем валђи опђешиттисем тума тытӑннӑ.

# ЂАВАШ ТӖРРИ.

Тӗп муҫейре пирӗн ђаваш тӗррисем нумай. Унта тури ђаваш тӗрри те, анатри ђавашсен те пур.

Ђавашӑн сурпан тӗрри, масмак, кӗпе, хулҫи, ҫанӑ вӗҫӗ, сарӑ, ҫуха тӗрри тунӑ. Ҫиппине ӗлӗкрех килте арланӑ, вара хӗретнӗ, хуратнӑ; кайран пасартан илме пуҫланӑ. Хађхи вӑхӑтра ђаваш тӗрри пӗђӗкленђӗ. Халӗ тӗррисем те улӑшрӗҫ. Сарӑ пӑрахрӗҫ, нумайӗшӗ сурпан-масмак сырмаҫҫӗ, йе хӑнана кайнӑ ђух анђах сыраҫҫӗ. Анатри ђавашсем ҫиппине хӗретсе (пӗветсе) тӗртеҫҫӗ, тата кӗписене пасарта илнинђен ҫӗлеҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсен тӗрри алшӑли вӗҫӗнђе те сурпан вӗҫӗнђе анђах.

Тури ђавашсем (Елӗк, Йетӗрне, Тутаркас районӗсенђе) ҫакӑн пек тӗрӗсем тунӑ:

**Маҫмак** ҫине йӗпкӗнле тӗрӗ хура ҫиппе тунӑ, кайран хӗрлӗ, сарӑ, симӗспе сӑхса тухнӑ. Унтан хӗррине мала 2—3 шулам, кайа 2—4 шулам тунӑ. Тата хӑйу, куккӑр-маккӑр, йе хура кантра тытнӑ. Хӑш масмак ҫине ђармала тӗрӗ тунӑ. Ӑна симӗспе, хӗрлӗпе тунӑ; хурапа, хӗрлӗпе, сарӑпа, симӗспе ђарнӑ. Хӗррине мала та кайа та шулам тунӑ, хӑйу, ука тытнӑ.

Масмак тӗррисен йађӗсем: ђалӑш тӗрӗ, тӳртма, ханаслӑ, шӑрпӑклӑ тӗрӗ, карнтӑк куҫ, ђӗпе куҫ, тата ыт. те. Масмака сентел ҫине, пир ҫине ҫӑм ҫиппипе те пурҫӑнпа тӑваҫҫӗ. Вӑл ытти тӗрӗсенђен йӑвӑртараххи.

Сурпанӑн йӗпкӗнне хурапа тӑваҫҫӗ. Ђалӑш тӗрӗ хура каштанӑ тӗрӗ, ханаслӑ, тӑваткал, кушак лаппи ури алли хӑвапа йатлӑ тӗрӗсем пулаҫҫӗ. Кайран шал йенне хура ҫиппех ура тӑваҫҫӗ; хӗррине коњ-хӗри хурапа, хӗрлӗпе, сарӑпа хуса тухаҫҫӗ. Сурпан тӗрри икӗ йенӗ те пӗр пек пулаҭ.

Кӗпе тӗррин йӗпкӗнне малтан хурапа тӑваҫҫӗ, симӗспе, сарӑпа, хӗрлӗпе сӑхаҫҫӗ; икӗ йенне шулам тӑваҫҫӗ тата шӑлне тӑваҫҫӗ. Кӗпе умне масмак тӗрри те тунӑ. Ађа кӗпин пӗђӗкрех тӗрӗ пулаҭ. Ӗлӗк арҫын кӗпин те умӗ тӗреллӗ пулнӑ. Кӗпе тӗррисем: ханаслӑ, ђармала тӗрӗ, тӳртма, ҫур туртма, курак ӳри, ҫуллу ҫакку, ухмах тӗрри, куккӑр—маккӑр, тӑваткал, ђӗпђӗрке, арман ҫунатти, урла тӳртма, вӗтӗ тӳртма.

Хулҫи тӗррине пир ҫинех те тунӑ, уйрӑм сентел ҫине туса та ҫыпӑҫтарса йанӑ. Уйрӑм ҫыпӑҫтарнине кӗпе ҫунӑ ђух сӳтсе илеҫҫӗ. Пӗђӗк ађасен хулҫине хур шӑлӗ, ухмах тӗрри, курак ури, ђӗпђӗрке тӑваҫҫӗ. Ытти хулҫи тӗррисем: ҫуллу ҫакку, Йакку арӑм сикки, ҫийелтен тунӑ туртма пулаҭ.

Ҫанӑ вӗҫне хур шӑлӗ, шу сикки, тӑваткал тунӑ.

Сарӑ ҫине масмак тӗрри тунӑ. Малтан йӗпкӗнне тунӑ. Кайран сарӑпа симӗспе сӑхнӑ, шулам тунӑ, хӑйусем тытнӑ ҫӳҫине йанӑ.

**Йӳркки Йӑванӗ.**

# ҪӖНӖ КӖНЕКЕ-ШУРНАЛСЕМ

## К. В. Шупуҫҫынни. ЙЕРКӖН. ССРС-ђи Халӑхсен Тӗп Истаттӗлстви кӑларнӑ, 1930 ҫ., 172 стр. Маккарӑв В. илемлетнӗ.

Шупуҫҫыннин ҫак „Йеркӗн“ йатлӑ ђылайах пысӑк йапали пӗр вӑхӑтра „Сунталра“ нумӗртен нумӗре ҫапӑнса пыђӗ. Хаԓ вӑл акӑ кӗнекен те пулса тухрӗ. Вулакансем (ытларах та—ҫыракансем) хушшинђе ку поемӑ пирки ик майлӑ хак пађӗҫ: пӗрисем пит мухтама тӑрӑшрӗҫ ӑна, теприсем ытлах та хурлама пӑхрӗҫ. Малтанхисем пит сахаллӑнђђӗ, тепӗр ушкӑнӗнђисем—калама ҫук нумайӑнђђӗ вара. Тӳррипе каласан, ђӑваш пуплӗкки „Йеркӗн“ ҫине пайан кун та ҫавнашкалах пӑхат̆ пулмалла. Нумай пулмаст̆, Ђӑваш рапфакӗнђе вӗренекенсем „Йеркӗн“ пирки йурийех тишкӗрӳ туса иртернӗ. „Пит нађар йапала, ҫапса укҫа сайа йама та кирлӗ пулман“ тесе хак панӑ хӑшпӗрисем. Паллах ӗнтӗ, кунтан усал тишкӗрӳ урӑх ҫук та пуԓ. Ку—ђи хайарри, ним хӗрхенӳсӗрри, ним каҫарусӑрри шутланат̆, Ыйтас килет: мӗн пирки капла пулса тӑђӗха? „Йеркӗн“ ђӑнахах пит нађар йапалаши? йе вӑл ытла та „ђаплӑ“ йапала?

Вулакансем хак пани тӗрӗссипе тӗрӗсмарри пирки иккӗленмешкӗн пирӗн пӗр пысӑк сӑлтавах та пур. „Сунталра“ ку поемӑ пит вӑрӑм вӑхӑта ђӑсӑлса пырса ҫапӑнђӗ. Нумайӗшин ӑна тӑрӑшшипех йӗркеллӗн вуласа пымашкӑн тӳсӗм ҫитеймерӗ пулас. Нумайӗшӗ (тем пирри вара!) пуҫламӑшне вуланипех тӑраннӑ пек кӑтартрӗҫ хӑйсене хӑйсем. Епӗ хам та, ҫылӑхӑмӑра пула, хама хам ҫавсен шутнех кӳртсе йаратӑп. Епӗ пӗлететӗп: аван мар, пӗртте аван мар капла хӑтланни... йапалана пӗр пуҫламӑшӗ йе, пӗр татӑкӗ тӑрӑхах хак пама, тиркеме тӑни! Капла епӗр хамӑра ҫех те мар, ытти таса ҫынсене те йунӑш шухӑшлаттарма пултаратпӑр. Куԓттурлӑ ҫынсем, паллах, пирешкел хӑтланмаҫҫӗ ӗнтӗ.

Хаԓ ҫинђе епӗ „Йеркӗне“ тӗплӗнех вуласа тухрӑм. Мӗн вулани пуҫра лайӑхрах йултӑр тесе, ађасене те, арӑма та ҫывӑха йамарӑм. Таҫта айаккарах, йӑвӑҫсем айне сулхӑма кайса пытантӑм. Пуҫра йалан уҫӑ тӑђӗ.

„Аслӑ Сившура, вӗт йуманлӑхра
Пуйан та ђаплӑ пурӑнат̆ Урха“.

Ҫапла пуҫланат̆ поемӑ. Темшӗн, епӗ ҫавӑнтах Шупуҫҫыннин сӑвӑласа ҫырнӑ ытти йапаласем йепле пуҫланнисене те аса илтӗм („Пӗтелмей“, „Хитре Ђӗкеҫ“). Шупуҫҫынниннне ҫех те мар, ытти ђӑваш сӑвӑҫӑсен те ирӗксӗрех аса килђӗҫ ҫав: Ивамовӑн „Нарспи“, Елкерӗн „Хӗнхур айӗнђе“, т. ыт. те. Пурин не темле пӗр йевӗрлӗрех, трафаретлӑрах тухнӑн туйӑнат̆ („пуйан та ђаплӑ Урха“; „пуйан та ђаплӑ йал“, „кантур пекех ҫурђӗсем“). Кунта ӗнтӗ—вӑтам йе ҫирӗпрех пурнакан ђӑваш хресђенен урапипе кустарни, ун итеолокийӗ хыҫҫӑнтарах пыни пит лайӑх палӑрат̆. Кунтах тата—ђӑваш сӑвӑҫисем хӑйсен ҫырас майӗсене („приемы“ ҫӗнетейменнине те курма пулат̆.

Поемӑри ӗҫсем ҫӗраллӑ ҫул ӗлӗк, майра патша (Екатерина II) вӑхӑтӗнђе пулса иртеҫҫӗ. Пуйан Урха—ҫавӑн ђухнехи ђӑваш Урха—улпутах пулас. „Кӗркори Орлохӑн роттинђе пулнипе творен йатне илсе хӑй килне таврӑннӑ„ тесе сӑвӑлат̆ ун ҫинђен Шупуҫҫынни.

Урхан мулне сыхлама
Ҫиђӗ йытӑ сӑнђӑрта,
Виҫӗ йытӑ ирӗкре,
Хура упа ӳплере.
Ӗҫ ӗҫлеме, шар курма(?)
Вунӑ арҫын тарҫӑра,
Килне ҫуртне упрама
Сиђ хӗрарӑм ђурара

Ҫавӑн пек ҫын Шупашкар войевотипе те туслӑ пурӑнат̆. Майра патша Шупашкара кӗрсе тухнӑ ђух, ђаплӑ хӑнасем хушшинђе Урха та арӑмӗ-хӗрӗпех пулат̆. Майра патшана вӑл ҫармӑҫсенђен парнелӗхе акӑш илсе парат̆. Урха патшан кӑмӑлне кайат̆.

Ыр ҫын, есӗ ху
Пирӗнпе пырӑн Хусана
Унта пулӗ мӑн пуху
Тӗрлӗ тӗслӗ халӑхран,—

тесе ђӗнет майра патша Урхана. Урха, ђӑнах та, Хусанти ђаплӑ пухура та пулат̆. Патшаран ылтӑн ҫӗрӗ илсе, вырӑс тӗнне кӗрсе таврӑнат̆.

..Калат̆ арӑмне:
—«Арӑм, итле-ха, кунталла пӑх-ха,—
Манӑн кӗпе ҫинђе умӑмра
Майра патша ҫакнӑ вырӑс хӗресне
Куратна? Ӗнтӗ текех ҫук Урха:
Епӗ тӗне кӗтӗм, йата улӑштартӑм.
Ђаплӑ вырӑс йатне хуртартӑм:
«Алтаккин» манӑн йат,
Урха йулат̆ хушамат.
Ђӑваш улпуђӗсем пупleме мар,
Ҫывӑха та ан пыђђӑр ман йатӑм патне».

Ҫапла калат̆ Урха. Анђах арӑмӗ (Унерпи) авалхи ӑру йӑлисене пӑрахасшӑн мар: упӑшкине ӳкӗтлет, пӗтӗм пуп таврашне тиркет. „Атӑлпа Ҫӗрпӳ хушшинђи Ҫавал улӑхне йӑлтах ҫырса ман ҫине! Ак майра (патша) йепле!“ тесессӗн те, Унерпи хӑйӗннех йурлат̆: „Кирлӗ мар та, кирлӗ мар, ҫӗрне калле леҫсе пар! Йата тӗншӗн ҫӗртеп-и? Йалран намӑс курап-и?“ тет. Урхи арӑмне парӑнат̆.

Ылтӑн ҫӗрпе хӗресе
Кару йупи шӑтӑкне
Хунӑ ђикссе питӗрсе
Майра патша асӑмне.

Ҫак ӗҫсем пулнӑ хыҫҫӑн вара Урха ҫинђен халӑх хушшинђе „майра патшан йеркӗнӗ“ тесе каланӑ пулат̆. Урхан хӗрне илме тӑнӑ пӗр йӑх утаманӗ Йеркиней тӳрех акӑ:

—„Тупӑнтӑн-и, ҫӗр ҫӑтманнӑ, хуԓ-ватти?
Майра патшан ђаплӑ Йеркӗн—кӗрт йытти?“

тесе намӑслантарат̆. Вулаканшӑн тӑнланмалла мар: ђӑваш пуйанӗ Урха, килӗнђе те (ђӑваш йалӗнђе) хӑй ҫӑмйипе веҫ ђӑвашла пурнаканскер, айакран курса йуранипех ӑҫтан майра патшан йеркӗнӗ пулса тӑнӑха? Шупуҫҫынни кӑна нимӗн те лайӑх кӑтартсапамаст̆. Ай, майра патшана йермешкӗн, лешӗ хӑй тем пек ҫӑмӑл хӗрарӑм пулнӑ пулсассӑн та, ҫав терийех ҫӑмӑл пулнӑши вара? Ытла пушӑ пуҫпа шутласа кӑларнӑ култармалла йапала марши ку...

Виҫ-тӑват сӑмахпа поемӑн тултарӑмӗ ҫинђен каласа пӗтерер. Урха акӑ патша пиллесе панӑ Ҫавал улӑхне ниме туса ҫултарат̆. Кун пирки Йеркинейсемпе Урха хушшинђе хирӗҫӳ тухса кайат̆. Войевотӑпа архимантрита куђђенеҫсем-мӗнсем парса, хӑшне пӗрне тата тӗне кӗртсе те Йеркиней таврашсем улӑх ҫаранӗсене хӑйсенех хӑварттараҫҫӗ. Урха хайхи, войевотӑ ҫине тарӑхса ларса, пӗр-ик ҫывӑх ҫыннине йертет те, йуланутпа тӳрех патша патне тухса вӗҫтерет,

Анђах ҫулне картлама
Войевотӑ пӗлђӗ те...
Ђӑваш ҫамрӑк улпутне
Вырӑс ирӗк парас ҫук,
Тӗне суйса кӗнине
Пӗлсен, ахаԓ тӑвас ҫук...
—„Урха Мускавра, Урха тӗрмере.

Тинех вӑл астуса илет итем ҫинђе пытарса хунине: вӑрттӑн илсе пыма хушат̆ патша парнине. Ҫӑлӑнат̆ унпала. Каллех иле ҫаран: Йӑлӑмри улӑха Акӑш кӳлли таран.

Ех, кирлӗ хӗресех, кирлӗ вырӑс йађех!
Вара мулпа ырӑ йат ҫӗр ҫинђе пулатех!

тесе вӗрентет Урха, ӗлӗкхи самана йӗркине ҫулакан ђӑваш пуйанӗ, ђӑваш „ыр ҫынни“ текенскер. Пӑкађав Йемеленӗ килсессӗн, Урха хӑйӗн тӑшманӗ Йеркиней аллинђен пӗтет. Поемӑн сотсиалла (опђӑлӑхла) йенӗ ҫавнашкал курӑнат̆. Нађар тесе калама пумаст̆ ӑна. Ҫителӗклех пысӑк теме те пулат̆. Шупуҫҫынни ку йенӗпе кайалла мар, малаллах утӑм тунӑ. Мӗнлеха апла? Поемӑна мухтакансем сахал, хурлакансем нумайтарах, мӗншӗнши ку?

Паллах, пӗђӗкҫеҫ ретсенсире епӗ криттӗк вырӑнне йышӑнма шутламастӑп. Поемӑна историлле ђӑнлӑх йенӗпе пӑхса тухассине те, романла татӑкӗсене те, уйрӑм ҫынсем йепле аван тухнипе тухманнине тиркессине те пӑрахса хӑваратӑп.

Ҫапах та, хаклакансем мӗншӗн икӗ пӗр пек мар ушкӑна уйӑрӑлнине татса парасах пулат̆. Сӑлтавне шыраса тупасах пулат̆. Ҫамрӑксем вӗсем—пит вӗри халӑх. Йапалана хакланӑ ђух епер ытлашширех те персе йама пултаратпӑр.

—„Йеркӗнри сӑвӑ технӗкки технӗккӑ-и вӑл? Ним илемлӗн йӗркеленсе, пӗр виҫеллӗ ҫыпӑҫса пыни ҫук.

—Вулас та килмест. Ҫара просӑллӑ ҫырнӑскер.

—Ӗҫкӗ те туй... Туй та ӗҫкӗ. Шупуҫҫынни урӑх мӗн ҫинђен ҫыртӑр ара.

Ҫапла калаҫҫӗ ҫамрӑк сӑвӑҫсем, ҫаплах калаҫҫӗ вулакансем те. Тӗрӗсси кунта ђылайах та пур ҫав. Ӗҫкӗ, туй, пуйанлӑх ҫинђен ҫырнӑ трафаретла вырӑнсене пӗр сийенсӗрех кӑларса пӑрахма та пултарнӑ автӑр. Ие унашкал вырӑнсене пит сахал кӳртмеллеђђӗ. Поемӑ ун пирки нађарланма мар, аванланса

кӑна йулмалла мӗн. „Ђӑн искуствӑ вӑл—нихҫан та пӗр йапала ҫинђен темиҫе хут каламаст, каласан та—урӑхларах, веҫех палламалла мар ҫӗнетсе калат“ тесе ҫырнӑ пек астӑватӑп Лев Толстой хӑйӗн „Мӗн вӑл искусствӑ“ йатлӑ вӑрӑм статйинђе. Шупуҫҫыннин мӗн пур пысӑк айапӗ те—пӗрре тытса сӑрланӑ сӑрсенех темиҫе хут виҫтесе илсе тыткаланинђе ҫав. Апла сӑрсем те кивелеҫҫӗ, йурамаҫҫӗ, сӑрланӑ пек тунӑ йапаласем те сӑрламан пекех йулаҫҫӗ, куракан ҫынсене сивӗтеҫҫӗ, тарӑхтараҫҫӗ.

„Сӑвӑ йакалӑхӗ, илемлӗхӗ, шӑранулӑхӗ ҫук.“ Ку та ђылай тӗрӗс. Шупуҫҫынин ку тӗлӗшрен пӑртак лармаллах пулнӑ. Тата „Йеркӗнре“ виттӗр тентентсилле сӑвӑсем, психхолокипе илемлӗх йенђен пӑхсан пӗртте пулса ҫитмен телсем, ҫийелтентерех васкаса ҫырнисем, шутласарах пӑхман вырӑнсем те сахал мар. Автӑр майра патшана халӑх умӗнђе ҫаплалла калаттарат.

Хырӑҫ-марӑҫ куланай,
Унӑн усси пит нумай—
Ӳснӗҫемӗн ӳстерес, -
Сисеђђенех сиктерес(?)

Патша хырӑҫ-марӑҫшӑн тӑнӑ пултӑр. Анђах ун ҫинђен кӑл пур ҫӗрте те ҫавнашкалах мӑшкӑласа каласа ҫӳренӗши? Ҫав терийех ухмахрах пулнӑши? Ҫук, кунта Шупуҫҫынни майра патшана ӗҫхалӑхӗн ђейе тӑшманне хваљшивӑй кӑтартат. Ку ситӗ—ватӑ сӑвӑҫа пӗрттех те килӗшмест.

Поемӑн сотсиалла (опђӑ пурнӑҫне кӑтартас) йенӗ ҫителӗклех терӗмӗр. Анђах илемлӗх ӗнентерӳллӗхӗ унӑн ҫителӗксӗр. Автӑр кӗнекине кӑларма васкарах пана: йакатмалла, лармалла пулнӑ. Ӳкерђӗксем пурте аван, автӑр ҫырнипеле килӗшсе тухайман. Сӑмахран: Урха хӗрӗ Ђӗкеҫ, ҫыраканӗн шухӑшӗпе, пит илемлӗ хӗр пулма кирлӗ, анђах ӳкерессе ӑна пит нађар ӳкерсе кӑтартнӑ. Кӑларасса кӗнекене аван сӑнлӑ кӑларнӑ, лайӑх хутпа ҫаптарнӑ, анђах корректӑр йунӑшӗсем шутсӑр нумай.

**ХУММА ҪЕМЕНӖ.**

Хутар „ХУРА ТАР“. ССРС-ђи халӑхсен тӗп истаттӗлстви Мускав 1930 ҫ. Хакӗ 30 пус Тираш 3000 екҫ.

„Поетсем патне“ йатлӑ сӑвӑра поет хӑйех:

Ан вӑрҫӑр мана ан вӑрҫӑр – ыйтатӑп
Сӑвӑсем ман нађар, хамах калап .
Сире кирлӗ мӗн „лирӗккӑ“, хӗрне (?) ђеђек,
Сире кирлӗ ерех сӑра, йенђӗк.

тет. Ҫакӑнтан шутласан, автӑр шухӑшӗпе, ун сӑввисем пролеттари поеђӗсен кӑмӑлӗшӗн ыррӑн туйӑнмалла пек.

Пӗрре тунмастӑп, урӑх лирӑ ман...
Ӗҫре кӑл ҫуралнӑ, ђеђекшӗн пулман...

тесе те пӑхат. Ку йурӗ ха вӑл, анђах пролеттари поеђӗн нађар сӑвви сотсиалисӑм ӗҫӗшӗн пысӑк усах памаст „Хутар“ хӑйӗн нађартарах сӑввисене хӳтӗлесшӗннипе:

Ђеђекре мар поеҫи, поеҫи—ӗҫре...

тесе пире ӗнентересшӗн. Поеҫи – ӗҫре, тӗрӗс, анђах епӗр ӑнланакан поеҫи—ӗҫри поеҫин тӗкӗрӗ. ӗҫри поеҫийе тупса сӑмах ҫаврӑнӑҫӗсемпе кӑтартма пур поетсем те пултараймаҫҫӗ. Хутар шухӑшӗпе сӑвӑ кирлӗ мар, йе нађар пулсан та йурат. Аптранипе вӑл:

К и р л ӗ м а р ҫӗрӗк (?) л и р ӑ вилсен те...
Парӑр ӗҫ! Парӑр хурҫӑпа тимӗр!..
Ҫакна вӗт ыйтат ҫирӗмӗш ӗмӗр...

тесе ҫухӑрса тӑкат. Сотсиалисӑма хурҫӑпа тимӗрпе ҫеҫ тумалла мар, исскуствӑ та кирлӗ. Хутар кӑшкӑрнипе истори хӑлхине те ђикмест: „лирӑ“ „ҫӗрмелле“ мар, вӑл ҫӗнелсе пролеттари ӗҫӗнђе хӗҫпӑшал пултӑр, тет вӑл.

Хутар поеҫийе ђунтан-вартан йуратни сисӗнеђђӗ, хура тар тапса тухиђђен сӑвӑ ҫинђе ларнине астӑватпӑр, анђах... Ку тарана ҫитсе те вӑл малалла кайаймаст. Хаљ пиђетленнӗ сӑввисене вӑл 1924—27-мӗш ҫулсенђех ҫырнӑ.

Поет классен кӗрешӗвӗн саккунӗсене вӗренсе, вӗсемпе килӗшсе пурнӑҫ сӑнне тӗпӗнђенех кӑтартма тӑрӑшмаст. Ун тематтӗк шӑпалӑкӗ Шалпар, вӑл темӗн ҫинђен те ҫырасшӑн, анђах пӗр тӗп шухӑша та вӑл тӗпне ҫитиђђенех сӑнласа параймаст, ҫийелтен ҫеҫ шӑйӑрса илсе парат.

Кӑтарту майӗсем ун пит ырхан: ҫӗнӗ сӑнлӑхсем сахал, йе кивӗ, нађар, йе пађах та ҫук;

| | |
|---|---|
| Авӑ лерен | Ана ҫинђе |
| Хӗвел тухат | Ырлӑх тӑват. |
| Пирӗн умма | Тырӑ хумне |
| Кулса тухат. | Вӑл курасшӑн |
| Ӗҫђен хресђен | Трактӑр илсе |
| Тырӑ сапса | Пурнӑҫ тума |

(„Ҫамрӑк тусӑма“)

Хӑшпӗрисем ун сӑввисене вуласан: „Ку поет нимӗн ҫинђен те ҫырма аптратат,“ теҫҫӗ пуљ. Ак вӑл „Ӗҫ ађи“ сӑнне сӑвӑпа кӑтартасшӑн.

# ПИРӖН „ЙЕРКӖН“:

*Н. Шупуҫҫыннине кӑмӑллӑ тӑрӑхлани.*



| | |
|---|---|
| Сарӑ кӑтра ҫӳҫӗме | Пуҫ тӑррине карттуса |
| Епӗ турам-и? | Ђалӑш лартам-и? |
| Вӑрӑм йаштак пӗвӗме | Хура пустав сӑхмана |
| Тӳрӗ тытам-и? | Йӳле йарам-и? |
| Шурӑ ҫамкан сарлаки | Тӗрлӗ умлӑ шур кӗпи |
| Ҫынна курӑнтӑр: | Капӑр курӑнтӑр: |
| Ватӑ ҫын та, ҫамрӑкки | Сарӑ хӗрсен кӑмӑлӗ |
| Мана пуҫ тайтӑр. | Пире пӑхӑнтӑр. |

Хутран-ситрен ывӑнсан,
Пуҫпа сулам-и?
Ҫавар типе пуҫласан,
Пӑртак сыпам-и?

Н. Шупуҫҫынни Йеркӗнӗн йурӑ умӗнхи.

---

„Кам ӗҫе йуратмаст? Кам вӑл – калӑр мана
„Кам ӗҫрен тарат, ахалех иртерет куна?..
„П ӑ р ӑ н ун пек ҫын, пӑрӑн ман умран, пӑрӑн!
„Ес м а н тусӑм мар, ман пулаймӑн
„Еп санпала килӗшместӗп... ҫук, ҫук килӗшместӗп т. ыт.те.
Аҫта кунта поеҫи? Сӑмах пухӑвӗ ҫеҫ мари ку?

Поет итиолоки йенђен те пӗтӗмпех пролеттариленсе пӗтейменха

Хресђенрен тухнипе, вӑл коллективланакан пурнӑҫ вӑйне, пӗрлешӳллӗ ӗҫе астӑваймаст. Ун сӑввисенђе „епӗ—ҫеҫ пурнӑҫа ҫапла ӑнланап,“ тейес шухӑ всем палӑраҫҫӗ.

Апла пулсан, ҫутӑ ир, сана.
Ыталам, йуратам епӗ кӑна
(йурӑ)
Мӗншӗн хутар „хӑй“ кӑнаши?
Еп ерех ӗҫмен макӑрса ларма,
Ӳтӗме сӑрӑхтарман ђӗлӗмпе,
Йатлаҫса килмен тӑвансемпе.

Ку ӗссем пурте пролеттарилле опђествӑшӑн сийенлӗ, анђах вӗсене Хутар ҫырнӑ пек сӑвӑпа пӗтерме епӗр пултараймастпӑр. Тата тӑвансемпе йатлаҫса тухнӑ ҫынсем те пурте усал ҫынсем мар: Пӗр тӑванӗ—кулак, тепри—ђухӑн; вӗсем хушшинђе класлӑ йатлаҫу пулни пире пӑсмаст.

Рапфака килиђђен е п ӗ ҫ ы н пулнӑ
Тӗттӗм, ухмах, йалти йӑваш ађа

Рапфакран тухсассӑн „ҫын“ йӗркинђен тухнӑ пулат автӑр.

| | |
|---|---|
| Кулак тусӗ | Пантитланма |
| Хуликанӗ | ҫын вӗлерме |
| Намӑс курђӗ ухмахран | Пӑрахат вӑл пайанран. |

Кӗтсех тӑр! Ҫук, Хутар шӑллӑм! Есӗ пире кулак тусӗсем

ухмах пулнӑ, хаљ вӗсем ӑслӑланнӑ та, ҫавӑнпа пантитланма, ҫын вӗлерме пайан пӑрахрӗҫ, тесе ан суйеҫтер: классен кӗрешӗвӗ пӗтмен, ҫавӑнпа епӗр кулаксемпе кӗрешетпӗрех.

Ађи-пӑђи—ӗҫ тӑпађи
Тытат̆ ҫирӗп аллине
Ыран ирех пурӗ пӗрех
Йусамалла кӗперне.

Тӑпађпа йусаҫҫӗ-и кӗпере?—ан тӗлӗнтер.

Ђӑваш ҫыннин ҫак ырӑ кун
Уринђе пулӗ ҫ е н ӗ ҫ ӗ н ҫӑпата (?)

Ҫӑпата—пуршуаллӑ пурнӑҫ условийӗнђе пире килӗшнӗ; пирӗн хаљ аталлӑ пурнӑҫ патне кайасђӗ. Атӑ тӑхӑнтаракан пурнӑҫ сӑнне кӑтарт-ха поет.

Еп ӗҫре пиҫнӗ, ӗҫре пулнӑ а р (!) Ех, Хутар! Ӗҫре пиҫмен Чемперлен а р мар пулати сан шухӑшпа? Херарӑм тата?

Саккопа Ванђетти—вӗсем пирӗн ђӗре, Ах мӗн ӗҫ пулмас-ши пайан тӗнђере!.. Ђӑн-ђӑн револютсионер ахлатусене йуратмаст̆.

... Е, Анкли! Анкли!
Шуйтан ҫӑпати!

Ҫакна илтсен Анкли кӑпиталисӗсем пирӗ сӑвӑҫа А, ес, ҫатӑлти!

Ҫӳлте тӑри йурлӗ пӑрмай!;
Ылттан (?) сасси кайӗ йан, йан...

Кун пек Меттафӑрсем пайтах кӗнекере.

Сӑвӑ технӗкки йенђен пӑхсан, Хутарӑн ҫӗнӗллӗх, витӗрӳллӗ майсем, илемлӗ сӑмах ҫаврӑнӑҫӗсем, танаштарусем—мӗнсем питӗ сахал. Ӗҫхӗл (клакол) формиллӗ рифмӑсем хӑлхана йӑлӑхтараҫҫӗ.

Акӑ тӗтӗм
Умран кайат̆
Хӗвӗл ҫутти
Ӑна ҫурат̆.

Рифмӑлама пӗлмен, йе рифмӑсӑр вырӑнсен шуђӗ те ҫук. Ку йурӗђђӗ. Сӑвӑра сӑнлӑх ҫукки пӑсат̆.

Хутарӑн хӑш-пӗр тӗлте ђылай сӑнлӑ, витерӳллӗ вырӑнсемех тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсене вулакансем астунӑ пулӗ. Маттериалисла тиалӗктӗкӑн тӗп полошенийӗсене ӑнлансан, классен кӗрешӳри тӗрлӗлӗхсене астуса пырсан, пролеттари поеҫийӗ кирлӗ тесе йышӑнсан, ун поеҫийӗн сатађӗсене ӑнлансан, сӑвӑ ҫырнӑ ђух „Хура тар“ такӑнни сайа ан кайтӑр, тесе тӑрӑшсан, ҫӗнӗ сӑнлӑхсем тӑрӑшса шырасан, сӑвӑ технӗккине вӗренсен, Хутар, вӑйлӑ, пролеттарилле происветенисем пама пултарӗ тетпӗр.

КИК

---

# „КОЛХОС ҪУЛӖПЕ“ ПЙЕССӐ НАЂАР.

## (Литтераттурӑ ӑмӑртуне килнӗ происветенисене тишкерес майпа).

„Сунталӑн“ 2, 3-мӗш номӗрӗнђе пиђетленнӗ „Колхос ҫулӗпе“ йатлӑ пйессӑ темине Хумма Ҫеменпе К. Алентей панӑ. „Колхос ҫулӗпе“—питӗ аван темӑ. Йалхуҫалӑхне колективлас ӗҫе кӑҫал пӗтӗм парттин, комсомолӑн, профсойус орканисатсисем, пур рапођђисем, хресђенсем хастарӑн тытӑнђӗҫ. Ђухӑнпа вӑтам хресђенсем колхос орканисатсилессине хирӗҫ йалти кулаксем, пупсем, ӗлӗкхи офитсерсем, ҫектантсем пӗринпе пӗри тађӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме пуҫларӗҫ, йал пӗтӗм талккӑшӗпе ђӗтрерӗ: хӑшпӗр ҫӗрте пӑшал сасси те йанӑрарӗ, хӑш-пӗр ҫӗртен кулаксен ҫӗҫҫи айне пулнӑ комсомолӗс, йе активлӑ ђухӑн, йе патрак сасси те илтӗнђӗ. Ҫавах та, партти йертсе пынипе, йал тӗрӗс ҫула ҫухатмарӗ.

Хӑйӗн пйессипе Хумма Ҫеменӗ ҫак вӑхӑта кӑтартасшӑн пулнӑ. Колхоссем орканисатсиленӗ вӑхӑтра йалсенђе классен кӗрешӗвӗ питӗ вӑйланса кайрӗ. Хумма Ҫеменӗ ҫак ыйту ҫумӗпе куҫне хупса иртсе кайма, паллах, пултарайман.

Анђах мӗнле кӗрешӳ кӑтартат̆ Хумма Ҫеменӗ?

Пйессӑри ӗҫ „хаљхи вӑхӑтра“ пӗр ђӑваш йалӗнђе пулса иртет. Йалта нумай лашаллӑ, пӗр арманлӑ Микула йатлӑ пуйан пурӑнат̆. Сав йалтах Колђђакшӑн вӑрҫнӑ Хӗлип—шур офитсер, тата ҫектант орканисатсийӗ те пур. Мӗн ӗҫленӗ вӗсем колхос тунӑ вӑхӑтра—епӗр пйессӑран нимӗн те пӗлейместпӗр. Колхос орканисатсилекен хресђенсене хирӗҫ Хумма Ҫеменӗ хӑйсен (хресђенсен) арӑмӗсене тӑратат̆ („Арҫынсене хирӗҫ кайас тетпӗр епӗр“, тет хӗрарӑмсенђен пӗри), тепӗр йенђен, ҫав хӗрарӑмсенех, йулашкинђен, колхосшӑн кӗрештерет. Пйессӑрах автторӑн малтанхи шухӑшне те, кайранхи шухӑшне те ӑнланма ҫук. „Йалтан пат уйӑрӑлса, колхоса кайма пӗртте лайӑх мар пек“, тет Марйе. Мӗншӗн „аван мар пек“, йал ҫыннисем йатланӑшӑн-и? Анђах йалҫынсем вӗсем упӑшкине те йатлаҫҫӗ-ҫке, апла пулсан мӗншӗн-ха маткасем упӑшкисене хирӗҫ тӑраҫҫӗ? Колхоса хирӗҫ тӑма пӗркаварланаҫҫӗ? Пӗр ыйту ҫине те тӗплӗ ответ тупма ҫук.

Хумма Ҫеменӗ хӗрарӑмсене колхос тӑвас мар шухӑшпа арҫынсене хирӗҫ тӑратни тӗрӗс шухӑш мар. Ђӑнах та колхоссем тунӑ вӑхӑтра хӑш-пӗр ҫӗрте хӗрарӑмсем арҫынсене хирӗҫ тӑркаланӑ. Анђах колхоса хирӗҫ ӗҫлекен хӗрарӑм хыҫӗнђе Хумма Ҫеменӗ йалти кулак, шур офитсер—Хӗлипсен, ҫентантсен сӑнне кураймаст̆, курма та ђарат̆. Кулаксем илӗртнипе колхоса хирӗҫ арҫынсем те тӑнӑ. Ӗҫхалӑхне хӗрарӑмсемпе арҫынсене пайласа, хире хирӗҫ вӑрҫтарни—хаљхи вӑхӑтра вырӑнлӑ мар, мӗншӗн тесен клас кӗрешӗвӗ сӳннӗ тени, йалта та, колхосра та тӗрлӗрен хресђенсем ҫук тени—кулаксене йалхуҫалӑхне ҫӗмӗрме ирӗк панийех пулат̆.

Ђӑнах та, кулак сӑнӗ пйессӑра улшӑннӑ. Малтанхи странитсинђен, кулак пађах ђухӑнсемпе вӑтамсем майлӑ ҫаврӑнса ӳкнӗ, темелле. „Халӑх! Кӳршӗ йалсем хыҫне тӑрса йулаймӑпӑр ӗнтӗ. Намӑс айне пулаймӑпӑр. **Ҫынсем мӗнле тӑваҫҫӗ, пирӗн те ҫаплах тӑвас пулат̆** (?). Колхосне, ман шутпа, йалӗпех куҫма йышӑнмалла, тесе хурат̆ Микула йал пуххинђе. Ку сӑмахсене комунис каласан та аван пулмалла. Каланӑ-ши, калама пултарнӑ-и кулак ҫавӑн пек? Ҫук, каламан, калама та пултарайман, мӗншӗн тесен кулак ҫапла калани вӑл—хӑйӗн аллипе хӑйӗн ђӗрине ђикни пулат̆. Кулак кунта сӑн-сӑпатне ҫухатнӑ, вӑл колхосшӑн кӗрешекен активис пек курӑнат̆ кӑтартнӑ сӑмахсене вуланӑ хыҫҫӑн. Кӑна хирӗҫ ђӑнах та кулак кайри шухӑшпа, „колхоса шалтан ҫӗмӗрессишӗн“ колхоса кӗресшӗн пулнӑ, темелле. Анђах ку шухӑша Хумма Ҫеменӗ хӑйех ҫӗмӗрет. Йулашкинђен Микулана колхосран кӑларса ывӑтаҫҫӗ. „Мӗн пирки кӑларса йатӑр-ха есӗр мана колхосран?“ - ыйтат̆ Микула Е н т р и р е н (Ентри—комунис, питӗ кӑмӑллӑ ҫын хӑйӗн патне пыракан Микулана • „Киљах, Микула пиђђе(?)“ тесе кӗртет пӳртне).

— Тивӗҫлӗрен кӑлармалла тунӑ пуљ (?). Ахалех кӑларса йамаҫҫӗ,—тесе ответлат̆ Ентри.

Микула. — Аха, тивӗҫлӗрен еппин.

Ентри. — Ху ӗҫлесшӗн мар пултӑн та (?!)

Микула. — Лашасем пар, арман пар сире те, тата хамӑн та ӗҫлемелле апла. — Мӗншӗн-ха Микула колхосшӑн пит кӗрешет. Микулан, Хумма Ҫеменӗ шуђӗпе, ӗҫлес килмен иккен. Ха-ха! тӗлӗнмелле. Йалсенђе вӑтам хресђенсенђен те, ђухӑн хресђенсенђен те кахаллисене тупма пулат̆. Вӗсем—кулаксем иккен... Ҫук, Хумма Ҫеменӗ. Кулаксене колхоса епӗр вӗсем кахалшӑн мар кӗртместпӗр (колхосра, ђӑнах, пурин те ӗҫлемелле)—кулаксем пире хуҫалӑхпа политтӗк, кӗскен—клас йенђен йурӑхсӑр ҫынсем. „Кахал“ йе „ӗҫлес килмест“ сӑмахсем „хуҫалӑхпа“ „политтӗк“ сӑмахсен ӑнлавне тултараймаҫҫӗ,—ҫавӑнпа та, Хумма Ҫеменӗн куҫӗпе кулак ҫине пӑхни—вӑл сылтӑмран та сылтӑм сулӑнђӑка кӗрсе ӳкни пулат̆. Кулак, пйессӑра Микулай йатлӑскер, хӑвӑрах куратӑр, Хумма Ҫеменӗ шуђӗпе, колхоса ҫӗмӗрме мар, хӑйӗн кахалӗ пирки, „колхосра тӑрантатарӗҫ-ха,“ тесе колхосшӑн ӗҫлет. Кунта, Хумма Ҫеменӗн кулакӗ пађах пурнӑҫри кулак пек мар.

Хумма Ҫеменӗ колхоссем ҫине те, колхоссем тунӑ вӑхӑтра хыпса тухакан йалти классен кӗрешӗвӗ ҫине те,—ђалӑш куҫлӑх витӗр пӑхат̆. Пурнӑҫа пйессӑ автторӗ улӑштарнӑ. Халђђен пулман хирӗҫӳсене,—„пулнӑ, пулнӑ, есӗр кураймаy“ тесе—ђӑнлатсах пйессӑра пӗр хӗрхенмесӗр суйат̆.

Колхоссем тунӑ вахӑтра йала кайса курман ҫын ку пйессӑ тӑрӑх колхоссем тунӑ ђухнехи пурнӑҫ ҫинђен нимӗн те тӗрӗссине пӗлсе илеймест.

Пйессӑн малтанхи странитсинђен, вулакан шур—офитсер пуррине те, ҫектантсем пуррине те пӗлет, анђах—мӗн тунӑ вӗсем колхоссем орканисатсиленӗ вӑхӑтра?—кун ҫинђен кайран пӗр сӑмах та тупма ҫук. Таҫтанах паллӑ, Хумма Ҫеменӗ пурнӑҫа шӗветнӗ, пурнӑҫ ҫине ҫийелтен пӑхат̆. Кам Ентри? кам Платтонӑв? кам Марйе? кам Контанис? пйессӑ тӑрӑх никам та ответ татса параймаст̆, парайас та ҫук. Пйессӑра тухакан ҫынсем—ҫынсем мар, ђуђђӗлсем, ҫынсен тӗтреллӗ мӗлкисем ҫех. „Выљакансем“ сӑмах айӗнђе, малтан, пйессӑ пуҫламӗшӗнђе каламан пулсан, епӗр Ентри—комунис пулнине те, Платтонӑв уђђитлӗ иккенне те пӗлес ҫук. Анђах—„ку ҫын—комунис,“ „ку—уђђитлӗ“ тени—ҫын ҫине вывӗскӑ ҫапса йани ҫех пулат̆. Ҫак меттӑт—хутошӗствӑллӑ происветени ҫырмалли меттӑт мар.

Пӑхса тухнӑ пйессӑра йађӗ ҫех аван, анђах ӑна К. Алентей тупса панӑ, ҫавӑнпа хӑт̆ таҫтан пӑхсан та Хумма Ҫеменне мухтамалли сӑлтав тупма ҫук.

М. ҪЕМЕНӐВ.

# РЕТАКТĂР АЛЛИ ХĔРЛĔ КĂРАНТАШ ТЫТСА КУРМАН.

## Парамонăв, Т. П. ЂĂВАШ ЂĔЛХИНЕ СĂНАСА ВĔРЕНМЕЛЛИ КĔНЕКЕ. Виççĕмĕш çул вĕренекенсем ваљђи. Ђăваш кĕнеки уйрăмĕ кăларнă. Шупашкар. 1929 ç. 10000 çапăннă. 84 стр. Хакĕ 55 пус.

**Уй хапхинђен кĕриђђенех такăнтарат̆.** Вĕренмелли 3-мĕш странитсăран пуçланса кайат̆. Анђах унта çитиђђенех пĕр вунпилĕк хут такăнса ӳкетĕн-ха. Теприн ури те мăкăлтанĕ.

Хуплашка çинђе те, титтул листи çинђе те Парамонăв хыççăн лартмалли хӳреллĕ пăнђа пытарса хăварнă. Уђђепнĕк тетĕр пулсан, уђђепнĕк çинђи пек пултăрђђĕ.

Хуплашкан 2-мĕш йенне тӳрлетмеллисем кĕртнĕ. Ђăн, унта тӳрлетмеллисем пур. Анђах вĕренекенсенђен кулни те туллийех.

Тĕслĕх. Тӳрлетме хушакансем пек тусан, ђи малтанхи тӳрлетниех (8-ш странитсăри 5-мĕш йĕрке) çапла пулса тăрат̆:

Çав халапсенђен пĕри
Çапла хитре Пуçланат̆.
Мăшкăл вĕт!

Титтул листăн тепĕр йенне кĕртнĕ умсăмахра çакăн пек пуплев пур:

«Çапла комплĕксри ĕçе кӳртсе усă курсан тин ђĕлхе йенђен сăнас пулат̆.

Уђђитлĕсем ăнланаççĕ пулĕ ĕнтĕ ку пуплеве, епĕ уђђитлĕ мар та, ăнланаймастăп. Хăйсем пурте ăнланмалла çырăр! — тесе вĕрентеççĕ.

**1-мĕш § вуласа тухар.** Пурне те çырас пулсан, ку § пиркийех кĕнеки çинђе каланинђен ытларах çырас пулат̆. Анђах кăђухне кĕске çырма хушаççĕ.

1. Авăн уйăхĕ — тенĕ. Текех пĕтĕм кĕнекипе те уйăх йађĕсене кивĕлле калани çук. Пур çĕрте те çĕнĕлле каланă: йанвар, окт̆апĕр, нойапĕр — тенĕ.

2. Мĕнмĕн. Кам хушнă-ши пĕрле çырма? Хушакан çукранах пулĕ, 26-ш странитсăра мĕнле-мĕнле—тенĕ.

3. Ĕççынни. Çырнă та, манса кайнă. 8-ш странитса çитсенех ĕç çыннишĕн.

4. Епир, есир. Капла çырса ывăнсан, епĕр, есĕр, — тесе кайнă (25-мĕш стр.).

Мĕншĕн-ши пирĕн кашни авттăр хăй ыттисенђен ăслăраххине кăтартассишĕн çунат̆. «Çулпуçĕнђе» тата «Ђăваш ђĕлхине сăнаса вĕренмелли кĕнекерех», иккĕмĕш çул вĕренекенсем ваљђи кăларнинђе, ђиперех — епĕр, есĕр—тесе çыратђĕç. Ашкăнма пăрахас пулат̆.

5. Стат̆йине йусарах çырмалађђĕ. Йулашкинђен—тенĕ сăмах хыççăн—вăл—сăмах кирлĕ. Мĕншĕнни вулакана курăнсах тăрат̆. Сирĕн вĕренни—тенĕ çĕрте **сирĕн** сăмах ытлашши.

**Пĕр сăмахах ку йĕркере капла çырнă, йунашар йĕркерех—урăхла.** Çак 2, 3, 4. ђыхвăрсемпе кăтартнă пек хăтланни кĕнекере миçе йĕрке, çавăн ђухлĕ.

Пит курăнмалли тĕлсене кăтартам.

15-мĕш странитсăри 2-ш йĕркере—мĕнпурĕ, 3-ш йĕркере—мĕн пурĕ. 16-ш странитсăра 6-ш §-ра—пĕр-пĕр, çавăнтах ултă йĕрке урлă—пĕрпĕр; 23-ш странитсăра 7-ш йĕркере—пур те, икĕ йĕрке сиктерсен—пурте; 35-ш странитсăра малтан—кун-çулĕ, унтан—кунçулĕ; 46-ш странитсăра пĕр йĕркерех, малтан—пĕђиккинђен, тепĕр сăмах урлă—пĕђĕккинђен.

Странитсăсене кăтартсан, тăсăлса кайат̆. Унсăрах çыратăп: трийĕр—трийер, лосăнкă—лосăнк, пысăкĕшех—пысăкăшех, крепле—кĕрепле, йăвăçкурăк—йăвăç-курăк, аранаран—аран-аран, карĕç—кайрĕç, уратник—уретник, тйеђук—тийеђук, шаттилăв—шат̆т̆илăв, тăршшинђе—тăршĕнђе, тымар çимĕçсем—тымарçимĕçсем, прaçник—праçнăк, пĕр пек—пĕрпек, вĕçлевлĕхин—вĕçлевлĕхĕн, мĕн ђул—мĕнђул, пĕрвĕçрен—пĕр вĕçрен, ађа-пăђа—ађапăђа.

Кун пекки татах, татах тем ђухлĕ. Такшин кăравул кăшкăрса йађĕ. Çавăнпа ђарăнтăм.

Унăн тата пĕр сăмахах пĕр тĕлте пысăк сас паллипе пуçласырнă, тепĕр тĕлте пĕђĕккипех иртсе кайат̆.

Ђарăну паллисене ытлашши лартни, лартса çитерменни тем ђухлех. Ђисти пĕр пек пуплевсенех хăшне икĕ пайа уйăрнă, хӳреллĕ пăнђă лартса, хăшне лартман. Пуринђен ытла ун пекки йе умĕн, унтан тата умĕн.

Пĕр çаксемшĕн кăна пулсан та, ку кĕнекене капла кăларма йураман, шкулсем тăрăх салатмалла пулман.

**Йăнăш çырнă сăмахсем.** Çапйуççи, тсентнĕр, пĕрреллĕ хисеп, пиллĕккĕмĕш, крамматтĕк, Тимĕркка, автономлă, Кĕçĕн Йелђĕк, виççе, курссă, шуљçă, тетрат̆па. Кун пеккисене те пурне те çырса тухма хал çитмест.

**Тĕрĕс çырман пуплевсем.** «40 кĕлет вырăнне вĕсен пысăкăшех хампар туса лартсан, каллех 44 çтена та пуралăх **хăмасем анђах кирлĕ».**

«Хăвăн ĕмĕрӳ тăрăшшĕнђе нумай шыва йухтаратăн».

74-мĕш странитсăра йулашки пилĕк йĕркене темĕскерле пăтратса пĕтернĕ.

**Вырăнăн вырăнăн кăна калакан хурăмсем.** «Вĕсен Ивансене кайасси килни».

«Ивансенђе тĕлĕнмелли кăшмансăр пуçне те ђылай пулнă».

«Петĕрсенђе ĕлĕкхи пек патрак ĕçлесе пурăнмаст̆».

**Çăмăлтарах калама пулат̆.** Вĕçлевлĕх вырăнне вĕçлев. Хирĕçкалу вырăнне ответ.

**Тĕрĕс вĕрентмест.** Акапуç сăмах ыраш сăмахпа пĕр пек вĕçленет,—тенĕ. Тĕрĕс мар!

Хутлă сăмахсемпе йĕкĕр сăмахсене пĕр картана кĕртни те тĕрĕс мар. Йĕкĕр сăмахсене ђиперех хутлă сăмахсем,—тет. Ака-суха, хур-кăвакал, купăста-хăйар—хутлă сăмахсем мар, йĕкĕр сăмахсем пулаççĕ.

**Тултармăш** — аван. Ађасене коллектив çулĕпеле илсе пырат̆. 1929-ш çултах тухнă пулин те, колхоссен пурнăçĕнђен илсе пĕлтернисем нумай.

**Тата мĕн пăсса тăрат̆?** «Пуппа пуйан», «Тепĕр пуппа тепĕр пуйан», «Пуппа пуйансем», «Çавсемех тата епир», «Çавсемех»—«Капкăнра» килĕшӳллĕ пулнă. Анђах кунта ытлашши йапала. Нивушлĕ суйлав комиççисенђе пйантсăсем кăна лараççĕ? Çавăн пек тухат̆çке çав сăвăсем тăрăх. Унтан тата пĕр йапаланах çĕр хут каласан, ађасен тинки тухат̆ вĕт! Петакăксем апла хăтланма хушмаççĕ.

42-мĕш странитсăра çакăн пек пуплев тĕл пулат̆:

«Кивĕ йалтан çĕнĕ йал тăвас тесен, малтан лайăх вĕренес пулат̆».

Апли апла та, аплах мар çав! Ађасен пуçне тĕп тĕрĕс шухăшсем кăна кĕђђĕр.

30-ш странитсăра çапла çырнă:

«Ĕлĕк вырăссем ђăвашран та, тутартан та, çармăсран та кулнă. Халĕ — кулмаççĕ».

Апла вĕрентни тĕрĕс мар!—теççĕ вĕт-ха. Пайан мар, ђылай пулат̆ ăна калани.

Çеспĕл Мишшин сăввисене те хăшне-пĕрне кĕртмелле марђђĕ. Натсионалисăмлă шухăшсем пурри курăнсах тăрат̆.

**Ретактăр аллинђе хĕрлĕ кăранташ пулманни хупларĕ.** Ђип ђипер уђђепнĕк пулмалла мĕн... кăтартнă çитменлĕхсене хĕрлĕ кăранташпа йусанă пулсан.

Халђ ăна уђђепнĕк тесе никам та калас çук. Вăл кĕнекене ађасен аллине пани—ађасене пăсни пулат̆. Калăпăр, иншенерсем çурт тума çавăн йĕвĕрлĕ акăш-мăкăш уђђепнĕк тăрăх вĕрентнĕ,—тесе. Мĕн пулса тăнă пулĕђђĕ-ши вара?! Пирĕн хапрăк-савăтсем, електритсă стантсисем, мăн шывсем урлă хунă кĕперсем пурте ишĕлсе аннă пулĕђђĕç, йе вĕсене тума та май килмен пулĕђђĕ. Халђ ĕнтĕ çуртйĕр тăвас ĕçпе пĕђĕк ађасене ђĕлхе ăсталăхне вĕрентессине танаштарса пăхар. Çӳçсем йăшăлл вирелле тăраççĕ вĕт!

## Ретаксийе пăхса тухма панă çĕнĕ кĕнекесем.

### Мускаври ССРС-ђи халăхсен тĕп истаттĕлстви кăларнă кĕнекесем.

**К. В. Иванов.** Нарспи. 4-мĕш хут тухат̆. 5000 çапăннă. 134 стр. Хакĕ 50 пус.

**Пирĕн çул.** МАПП Ђăваш çекси аљманахĕ. 2000 çапăннă. 144 стр. Хакĕ 75 пус.

**Тĕне хирĕç пйессăсем** Хуртсем. Колхосалла. Йăванкĕлли тăрăх. 3000 çапăннă. 76 стр. Хакĕ 50 пус.

**Н. Васильев.** Краткий очерк истории чувашской литературы. Тираж 4000 экз. 79 стр. Цена 40 коп.

**М. Иссайĕв.** Çĕнелнĕ йăх. 3000 çапăннă. 108 стр. Хакĕ 45 пус.

**Хутар.** Хуратар. Сăвăсен спорнĕкĕ. 3000 çапăннă. 28 стр. Хакĕ 30 пус.

**Шупуççынни.** Йеркĕн. 172 стр. Хакĕ 1 т. те 25 пус.

---

**Ку тăват кенекене Шупашкарта Ђăваш кĕнеки уйрăмĕ 1930-мĕш çулта каларнă:**

**Н. Ленин.** Раççейри ĕçлекенсен пирвайхи револютси вăхăтенђи йухăмĕ. 3100 çапăннă. 36 стр. Хакĕ 23 пус.

**Н. Т. Пукров.** Ушкăнлă хуçалăхсенђи культтурпа пурнăç йĕрки. 10000 çапăннă. 32 стр. Хакĕ 10 пус.

**Г. Шăпђăк.** ВĂÇÇА. Калав. 5000 çапăннă. 32 стр. Хакĕ 12 пус.

**Е. Т. Ванеркке.** ÇУТАЛЛА. Пуквар хыççăн вуламалли кĕнеке. 15000 çапăннă. 60 стр. 33 пус.

# КОНСУЉТАТСИ ПЎРОВЁНЂЕН

**„Çэнĕ пурнăçшăн“** трамă автăрне—трамму naђар. Çитменлĕхсем çаксем: илеме çук, пйессăна стсенă ваљђи йурăхлă туса çитереймен. Калаçнисем пĕр йапала çинђенех вăрăммăн пыраççĕ. Пушар керлесе çунă ђухне çынсем вут тĕртекен çынпа аппаланса тăраççĕ. Пурнăçра ун пек пулмасť. Вут тухсан вутта сўнтерме тăрăшаççĕ.

Çыракан çамрăкки, пурнăçа çителĕкле сăнаса пурăнманни курăнаť.

Пйессăна йусаса тухмалла.

**Васли Хунки**—„Ех йантраха, сасăм, **Ошман Кермăнĕ**—„Çут уйăхĕ—колхос“, **Солктсов Архип**—„Атăла савса“ **Ќçтенкей**—„Тĕреклĕ аллăм“, **Пахђаç Мишши**—„Кăвак шуçăм“, сăвăсем шухăшĕсемпе аптрамаççĕ пулсан та, технĕккă, илемлĕх йенђен йапăхрах пирки „Сунтала“ пиђетленеймеççĕ.

**А. Миххайлăва** (Малти Пукаш С-Вăрри р-нĕ) Сăввусем—сăмахсене пухса рифмăлани çеç; рифмăлама пĕлетĕн, анђах илемлĕ çырма вĕренес пулаť. Кирлĕ мар, йăвăщ шухăшсем, тата çакăн пек вырăнсем;

> Вунçиђ çула çитнĕ кана
> Анђах çапах епĕ пĕр нимĕнсĕр...
> Пĕлсе çитрĕм шурпа хурана.

ниме те кăтартмаççĕ.

**Ђăшкаса** «Савнине» йатлă сăввура ним илемлĕх те çук, тата çакăн йышши пуплев татăкĕсем, ăнланмалла мар сăмахсем нумай:

> «Ă—вĕсен (?) пуплеççĕ çулçисем»...
> «Н—ихçанах (?) кулатăн сархĕрпе.

Тепĕр сăввинђе сан тăрăшшипех: »хастар, хастарлăха, хастарланса», урăх сăмахсем тупайман, naђар сăвă. «Улăхра» сăввуна аван çырнă, анђах çушет питĕ пĕђĕк, ăна лайăх çутатса паман, пĕр хĕрарăма вĕлерни çеç паллă, урăх нимех те çук.

**Кăмăрт Кируллине.** Сăввусене илтĕмĕр, naђар пирки пиђете кĕреймеççĕ. Çапла çырсан сăвă пулмасť:

> Пилеш хĕрелсе çитсессĕн
> Çулçийĕ те сарăлаť,
> Çултан çул шкулсем хутшăнса
> Ђиркўсем те пăрахăça тухрĕç.

**Сушшилкинă Аннине.** (Мускав) «Ман стих» сăвву сăвăлла тухайман, сан илемлĕрех сăвăсем пур пулсан пирĕн пата йар. Малашне те çырма тăрăш—кĕтетпĕр.

Çакăнта кăтартнă сăвăсем çитменлĕхсем пур пирки пиђете кĕреймеççĕ.

**Пахђаç Мишши**—„кăвак шуçăм“; **Лисков Ахв.**—„Аслă хире“ „Тан тапсан“; **Йакур Мĕтр.**—„Аслă хире“; **Тверсков**—„Тăван ђăваша“; **Кенни**—„Çурхи кунтан“; **Михайлăв Ваç.**—„Колхос çинђен“, “Çулахи вăхăт“.

**Серťук Санкине.**—ху Çаваçа халăх творђĕствипе усă кураť, халăх йуррисене хăй сăвви пек тăваť тетĕн.

> „Çур хĕвелĕ кулнă майăн
> Кун пит ăшă, шăрăх;
> Йухтарам-ха йуррăма еп
> Йе тата: Хир вăрмансем тăрăх“
> „Ăшă çил вĕрет вăш-вăш
> Вутланаť вăй-халăм.
> Ех мĕнлеши кив Сахђа—
> Еп çуралнă йалăм“—

тесе Уйăп Мишши сăввисене çырса паратăн.

**Ехвим Ваç.**—„Стройккари ĕçхалăх“—сăвву аптрасах каймасť. Вăл сăвăра тĕл-тĕл аван вырăнсем пур. Анђах кашни куплет хыççăн:—„ой-ишшо та урра“ тетĕн. Ун пек сăвăсем пиђетленнисем те пур.

**Репђиккăв Михалине** (Йепрĕç р.) Сан трамă „Çĕнĕ пурнăç, шурнала çапăнаймасť. Выљакансем нумай, пайĕсем кĕске, выљакансем. каруççел çинђе йепле пит хăвăрт иртеççĕ, çавăн пекех стсенă çине кĕреççĕ те тухаççĕ, кĕреççĕ те тухаççĕ—сăмахсем çеç, выљани çук. Трамăри çынсен сăн пиђĕ ним те курăнмасť: те ватă çын те çамрăк, те хĕрарăм, те арçын. Пурнăçра çынсем пурте пĕр пек мар, пĕр калăппа туман, кашни çынăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур, есĕ çырнă трамăра калаçакан сын кĕлеткисем çех. Акă есĕ çыратăн: **Митрахван**—кутăн пуçăн тăраканскер, Ануш Васлин савни т. ыт. Трамăра Митрахван кутăн тăмасť, Ануш Ваçлийе йуратни йе Ваçли Ануша йуратни курăнмасť. Есĕ пурнăçра пулни çинђен çырнă пуљ,анђах вăл ĕçсене айван пуçуна тĕплĕн тавçăрса илеймен те йăнăш кăтартатăн. Ђăваш ђĕлхине лайăх вĕренес пулаť, ђăвашла питĕ naђар çыратăн—илемлĕ çырма та вĕренес пулаť.

**Кашлинккене** „Ђеђекленсен“ сăвă каймасť. „Çиђĕ пусăм“ „трактăрăн ĕçри ташшисем“ вырăнсăр кўртсе лартнă — сăвă кĕввипе çыхăнаймаççĕ, пуш сăмахсем кăна пулса тăраççĕ.

**Шевырĕва** (Шафранăвă стантси С. Слат. ђукун çулĕ) „Иван Çеркейђа асăнса“ çырнă ођђĕрк питĕ пĕђĕк, нумайрах фактсене илсе хусамăр таврари ђăвашсен пурнăçĕпе çыхăнтарса, пысăкрах çырса йар. Атрĕсне тĕплĕрех çырса йар.

# ЛИТКРУШОКСЕНЂЕ

## Елĕкри литкрушок.

Елĕк К. Ç. Шкулĕнђе литкрушок 1928 çул вĕçĕнђе оркаписатсиленĕ. Крушокра 21 ђлен, вĕсенђен хĕрарăмсем 2. Крушок «Шăнкăрав» шурнал кăларса тăраť. Крушок хăй умĕнђе çакăн пек сатађăсем лартаť:

1. Литтераттурă теорине вĕренесси.
2. «Сунтал» çине тухнă происветенисене пăхса тухса, вĕсене тишкерўпе пахаласа çырма вĕренсе пырасси.
3. «Шăнкăрав» шурналта тухнă происветенисене пахаласси.
4. Крушок ђленĕсен пултаруллăхне сăнасси т. ыт. те.

Литтераттурă теорине ђленсен пуххисем туса крушок, вĕренсе пыраť.

«Шăнкăрав» шурнал пирĕн 7 тухнă. Кунта паллăрах происветенисем çаксем:

«Упаç» (пойемă) «Çтепвастун» çырнă, «Паймăрса» (калав) Краштăн вăрçинђи пурнăçран илсе «Кăшмантуй» çырнă, «Пĕђĕк пантитсем» (калав «Кăвакал паттăр» (калав) тĕрлĕ критĕклĕ статйасемпе сăвăсем т. ыт.

Крушок ђленсенђен (21) «Шăнкрав» шурналта хастарлă хутшăнса ĕçлекенсем 4—5 çеç. Кусенђен хăйсен пултарулăхне шантаракансем çаксем:

. «Арис», «Кăшмантуй», Саңкко», «Иван Петти». Иртнĕ çура «Иçĕм Ваççи»пе «Çтепвастун» хастарлă ĕçлерĕç кусем халљ технĕккăмсенђе вĕренеççĕ.

«Шăнкăрав» çине тухнă происветенисене пахаланă май лайăхрах происветенисемшĕн (сăвăсем, калавсем, ођђĕрксем, пйессăсем) крушок премии параť («Сунтал» çырăнса).

Крушок ĕçĕпе К Ç шкулĕнђи ђăваш ђĕлхине вĕрентекен Арçени Солăттăв вĕренекенсене йертсе пыраť.

Хамăр ђленсен пултарулăхне сăнас майпа ђасах литтераттурă веђђĕрĕсем иртеретпĕр. Ку веђђĕрсенђе уйрăм происветенисене класлăх йенђен, унăн илемлĕх йенђен криттĕклесе тишкĕрни, çыракансем малашне татах та çĕнĕ хастарпа ĕçлеме пулăшаť.

Литкрушок хăйĕн ретĕнђен ђăваш литтераттурине çамрăк катăр тăратас ĕçе мала йама тăрăшаť, палăрнă çамрăк писсаттĕлсене, поетсене ЂАПП ретне пама шут пур.

**Йемелйанăв П.**

## Ђ. А. П. П. сйесне хатĕрленетпĕр.

Кипекри Колхос Çамрăкĕсен шкулĕнђи литкрушок Ђăваш Пролеттари писсаттĕлсен сйесне хатĕрленме пуçларĕ. Кăçал ђăваш литтераттурĕне нумай вĕрентĕмĕр. Крушок çĕнĕ писсаттĕлсен, поетсен пултаруллăхпе питĕ инттересленет. „С у н т а л“ çине тухакан пур сăвăсене, калавсене, статйасене вуламасăрах хăвармастпăр.

Йанкас, Уйăп Мишши, Хусанкай, Тукташ, Шупуççынни сăввисемпе паллашатпăр. Ђăваш литтераттурĕ вăйланма пуçларĕ, пирĕн çине тăрсах вĕренмелле, паллăрах йухăмсене пĕлместпĕр теме те йураť. Халĕ Ђăваш писсаттĕлĕсен 4-мĕш сйесне тивĕçлĕрех сăвăсем, калавсем илсе пыма хатĕрленетпĕр. Хамăр литкрушок кăларакан „Çăлтăр“ шурнала та илсе пыма шут пур.

ЙУМАНККАЙ МИКУЛИ

---

◆ Ђăвашрапфакĕнђи ЂАПП „Канаш“ Сойусен крушокĕ ийуљ уйăхĕнђе „Сунталра“ крушокăн пултаруллăхне сăнас телĕшпе литтераттурă странитси кăлараť.

◆ Рапфакри ЂАПП „Канаш“ Сойус крушокĕ март уйăхĕнђен пуçласа кăçалхи вĕренў çулĕ пĕтиђђен (4 уйăх) çырăнса тăракан 250 „Сунтал“ потписђĕкĕ тунă.

---

**Ф. Иванова.** (Пелепей кантонĕ) „Майакковски е“ йатлă сăвву „Сунтала“ çапăнаймасť, çыпăçуллах мар, тата илемлĕх çук. Майакковски çинђен çыриђђен унăн литтераттурăри çул-йĕрне лайăх пĕлес пулаť.

**А.Солентсова.** (Самара) „Колхос йурри“ „Провоты“ йуррипе йурласан тухаймасť, сăмахсене рифмăлани çех. Вулама та йурлама та йакарах илемлĕ сăмахсем кирлĕ—вĕсем сан сăвăра çук. „Çĕнĕ ыраш пуссипе“ йатлă сăвву та тухаймасť.

**М. Тимитрийĕвăна** Комети „Хăрушă йапала“ шурнала кĕреймест. Тĕппипех вуласа тухрăмăр. Кометире илемлĕ вырăнсем сахал, моттивсен çыхăнăвĕ те пĕђĕк ађасен вăййинђи пек пыраť, шухăшсем тарăн мар. Йурăхсăр вырăнсем: тарçăпа хуçа ыталансах пурнаççĕ, йалтан хулана килнĕ çын—йурăхсăр çын, найан. Унăн куккăшĕпе хĕрĕ те киревсĕр çынсем—пурнăçри пек мар. Ђĕлхе йенђен те naђартарах çырнă—ђăваш халапĕсем темле вырăсла тухаççĕ. Çырма пултараттăр, стсенăлăхĕ çивĕђ, ђĕрĕ пыраť.

Оçиппăв К-не—„Çулран çул çĕпĕле“ сăввунта есĕ: „Сиверен йулнă ырашĕ пулăшнă фосват çăнăхе“ тетĕн. Naђар.

# ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

# ЙАНКАС, УЙĂП М., ТУКТАШ

## СĂВĂÇСЕН СĂВВИСЕН СПОРНĔКНЕ ПИЂЕТЛЕСЕ КĂЛАРЂĔ

СПОРНĔКЕ УЙĂПĂН, ЙАНКАСĂН, ТУКТАШĂН ЙУЛАШКИ ÇУЛСЕНЂЕ ÇЫРНĂ СĂВВИСЕНЕ КĔРТНĔ





Ку спорнĕке кашни литкрушок ђленĕн, шкулăн, илемлĕ литтературăпа интересленекен кашни ĕçлекен-хресђенĕн илме тăрăшмалла, çĕнĕрен хапрăксенђен, йалсенђен шăтса тухакан çамрăк талантсене, вĕсен ĕçĕсене хакласа, кулленхи ĕçре пулăшса пымалла

СПОРНĔК ХУПЛАШКИНЕ ИКĔ ТĔСЛĔ краскăпа литтокрафинђе пиђетленĕ, АВТĂРСЕН СĂНЎКЕРЂĔКĔСЕНЕ ТЕ КĔРТНĔ



**Хакĕ 45 п.**

ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛЛИ АТРĔСĔ:
Гор. Чебоксары, Красная площадь, книжный магазин Чувашгиза «Новая Книга»

**Хакĕ 45 п.**

# КАШНИ ЂĂВАШ КИЛĔНЂЕХ „КОЛХОÇНĔК" ХАÇАТ
САМАРТА ТУХСА ТĂРАКАН ПУЛТĂР

Колхоçнĕк тĕнђери лару-тăрусем çинђен, хамăрăн çĕршывра сотсиалисăм тăвас ĕç йепле пыни çинђен, тата парттипе правиттĕлствă йышăннă постановленисене тĕплĕн ăнлантарса парать

Колхоçнĕк колхос йухăмĕн ђеретлĕ ыйтăвĕсене, колхоссен ĕçĕсепе йепле йĕркелемеллине, ђухăнсемпе вăтамсене колхос строиттĕлствине йепле майпа ытларах хутшăнтармаллине çутатать

КОЛХОÇНĔК уйрăм хуçалăхсене ĕмĕрхи нушаран хăтăлса, пĕрлешўллĕ, çĕнĕ пурнăç тумалли çул кăтартса пырать

**КОЛХОÇНĔК** **хаçата пурте çырăнса илĕр, хресђенсем хушшине ăна ытларах сарма** **ТĂРĂШĂР**

ХАÇАТ УЙĂХРА ТĂВАТĂ ХУТ ТУХАТЬ

6-мĕш нумĕрлĕ хут çинђе, шултра саспаллисемпе пиђетленен хаçатра карттинккăсемпе ўкерђĕксем нумай

**Хакĕ питĕ йўнĕ** 1 уйăха—10 пус, 3 уйăха—30 пус, 6 уйăха—60 п., çулталӑка—1 т. 20 п.

**Сырăнса илмелли атрĕс:** Самара, Ленинградская, 36—38. Сред.-Волжское Крайотд. Центриздата